К81
С32
Ч-36169

В. И. Сергеев, А. Р. Губанов

# ПУПЛЕВ ПАЙĔСЕМ ТАТА ВĔСЕНЕ АСЛĂ ШКУЛТА ВĔРЕНТЕССИ

Вĕренӳ пособийĕ

ШУПАШКАР 1995

Национальная библиотека ЧР
4-036169

К 81
С 32

РАССЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН АСЛӐ ПӖЛӲ ПАРАС ЕНӖПЕ ӖҪЛЕКЕН
ПАТШАЛӐХ КОМИТЕЧӖ

И.Н.Ульянов ячӗпе хисепленекен Чӑваш патшалӑх университечӗ

В.И.СЕРГЕЕВ, А.Р.ГУБАНОВ

# ҪУПЛЕВ ПАЙӖСЕМ
# ТАТА ВӖСЕНЕ АСЛӐ ШКУЛТА ВӖРЕНТЕССИ

Вӗренӳ пособийӗ

Шупашкар 1995

ББК Ш 12-635.1*2я
С 32
Сергеев В.И., Губанов А.Р. Части речи и преподавание их в высшей школе: Учеб. пособие/ Чуваш. ун-т. Чебоксары, 1995. 76 с.
ISBN 5 - 230 - 18034 - x

Излагаются основные теоретические сведения о частях речи и рассматривается методика изучения частей речи в высшей школе.
Для студентов дневного и заочного отделений.

Утверждено Редакционно-издательским советом университета в качестве учебного пособия

Рецензенты: Отдел языка Института гуманитарных наук ЧР;
д-р филол. наук, профессор Л.П.Сергеев

ПРОВЕРЕНО
20______

4602020400
С --------------- Без объявл.
М194(03) - 95

ISBN 5 - 230 - 18034 - x © В.И.Сергеев, А.Р.Губанов, 1995

Ч-36169
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

# КУРТЁМ

Сӑмахсене тӗрлӗрен ушкӑнсене уйӑрасси /пуплев пайӗсене пайласси/ ӑслӑлӑхҫӑсене тахҫанах кӑсӑклантарнӑ. Пирӗн эрӑчченхи IУ ӗмӗртех Аристотель чӗлхере ят сӑмахсем, глагол, союз пуррине асӑнать. Авалхи Инди грамматикӗсем /Яска, Панини/, пирӗн эрӑччинхи У ӗмӗрте пурӑннӑскерсем, санскритри сӑмахсене тӑватӑ ушкӑна уйӑрнӑ: I/ ят; 2/ глагол; 3/ предлог-префикс; 4/ союзсем тата татӑксем.

Стоиксем чӗлхери пур сӑмахсене те пуплев пайӗсене пайлас тӗллев лартнӑ. Хрисипп /пирӗн эрӑччинхи III ӗмӗр/ 5 пуплев пайӗ пуррине кӑтартнӑ: пайӑр ят, пайӑр мар ят, глагол, союз тата член. Авалхи Грецири Александри шкулӗн ӑслӑлӑхҫисем Аристарх Самофракийский /пирӗн эрӑччинхи II ӗмӗр/ тата унӑн вӗренекенӗ Дионисий Фракийский малтанласа 8 пуплев пайӗ пуррине кӑтартнӑ : ят, глагол, причасти, пай, местоимени, предлог, наречи тата союз. Ҫав пуплев пайӗсенех Варрон ҫырнӑ Рим грамматикинче[I] /пирӗн эрӑччинхи I ӗмӗр/ кӑтартнӑ, анчах та унта пай вырӑнне междомети кӗртнӗ. Сакӑр пуплев пайӗ пуррине кӑтартакан грамматикӑсем славян чӗлхисенче ХУII ӗмӗрччинех тытӑнса пынӑ, ӑна эпир Мелетий Смотрицкий тата Ломоносов ҫырнӑ "Раҫҫей грамматикинче" те куратпӑр. Ломоносов ӗҫӗсенче "сӑмах пайӗсем" текен термин хуҫаланать, вырӑс чӗлхе наукинче XIX ӗмӗртенпе ӑна "пуплев пайӗсем" текен терминпа улӑштарнӑ.

Пуплев пайӗсене ушкӑнламалли тӗп принципсем тӗрлӗрен чӗлхесенче тӗрлӗрен пулнине палӑртаҫҫӗ. Ку ыйту тавлашуллисен йышне кӗрет. Чӑваш чӗлхине тӗпчекенсем вырӑс чӗлхеҫисен шухӑшне тӗпе хунине шута илсе ку ыйтӑва XIX ӗмӗртенпе вырӑс чӗлхе наукинче еплерех ҫутатса панине сӑнӑпӑр. XIX ӗмӗр вӗҫӗнче А.А.Потебня тата Ф.Ф.Фортунатов сӑмахсене ушкӑнланӑ чух тӗрлӗ принципсене шута хума сӗнни сисӗнет.

[I] Куртӗм пайра ҫырса кӑтартнӑ фактсене автор ҫак литературӑран илнӗ: В.М.Алпатов.Из истории изучения частей речи /Части речи: Теория и типология. М.,1990 С.6-7;Лингвистический энциклопедический словарь.М.,1990.С.578-579.

А.А.Потебня малти вырăна сăмах пĕлтерĕшне тĕпе хума сĕнет, çав вăхăтрах ун синтаксисри функцине манмалла маррине асăрхаттарать. Ф.Ф.Фортунатов вара морфологи принципне малти вырăна кăларма чĕнет. Каярахри вырăс чĕлхеçисен ĕçĕсенче Потебняпа Фортунатов шухăшĕсене тĕпе хунă. А.М.Пешковский тата А.А.Шахматов пуплев пайĕсене ушкăнланă чух синтаксис принципне морфологи принципĕпе юнашар пăхма сĕннĕ. Л.В.Щерба вара пуплев пайĕсене уйăрнă чух пĕр харăсах морфологи, синтаксис тата пĕлтерĕш /семантика/ принципне тĕпе хумалли çинчен калать, анчах та пĕлтерĕш принципне хисепе хурса ăна мала кăларать те тĕнчери чĕлхесенче пуринче те япалалăха, ĕç=хĕле тата пахалăха палăртакан сăмахсем пуррине ĕнентерет. В.В.Виноградов академик ĕçĕсенче пуплев пайĕсене тĕрлĕ енлĕн пăхса ушкăнламаллине кăтартнă.

Тĕрĕк халăхĕсен грамматикисенче, çавăн пекех чăваш чĕлхи грамматикисенче те, пуплев пайĕсене ушкăнланă чух вырăс чĕлхи вĕрентĕвне тĕпе хурса ку ыйтăва теори тĕлĕшĕнчен тĕплĕн çутатса парас тĕллев лартнинех асăрхасах каймастпăр. Пĕр Н.А.Баскаков кăна çак ыйтăва хăйне евĕр çутатса пама тăрăшать[2], ун шухăшĕпе, пуплев пайĕсене икĕ координата системинче пăхмалла: I/ семантика тĕлĕшĕнчен, ун пек чух сăмахсене лексика=семантика единицисем темелле; 2/ функци тĕлĕшĕнчен - вĕсене сăмах тата пуплев /предложени/ пайĕсем тесе шутламалла. Кун пек пăхни малтанах пулăхлă пек туйăнать, анчах та икĕ системине пĕрлештерсе пăхма тытăнсан, тавлашуллă ыйту сахал мар пуçтарăнать.

Çапла вара, пуплев пайĕсем çинчен вĕрентнине истори тĕлĕшĕнчен тишкерсен çакă курăнать: I/ пуплев пайĕсене уйăрнă чух пĕлтерĕш, морфологи, синтаксис принципĕсене шута илмелле /хăш=пĕр тĕпчевçĕсем вĕсен ретне сăмах пулăвĕн принципне те кĕртме ыйтаççĕ/; çавна май пуплев пайĕсене икĕ ушкăна уйăрса / тулли пĕлтерĕшлĕ тата пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсем/ пăхса тухма сĕнеççĕ.

---

[2] Баскаков Н.А. Морфологическая структура слова и части речи в тюркских языках//Совет. востоковедение. 1957. №I. С.61.

## Пуплев пайĕсене уйăрмалли принципсем

Чĕлхери пуплев пайĕсене тепĕр майлă лексикăпа грамматика ушкăнĕсем е категорийĕсем теççĕ. Пуплев пайĕсене тĕплĕн морфологире тĕпчеççĕ, çавна май вĕсене тепĕр майлă морфологири сăмахсен ушкăнĕсем темелле.

Сăмахсене фонетикăра, сăмах пулăвĕнче, лексикологире тата семасиологире хăйсене уйрăммăн ушкăнлама май пур. Фонетикăра сăмахсене сасăсен тата сыпăксен тытăмĕ тĕлĕшĕнчен ушкăнлама пулать, тĕслĕхрен: вĕсен формулисем çакăн пеккисем пулаççĕ: Х+У: <u>çу</u>, <u>ту</u>; У+Х: <u>ум</u>, <u>ал</u>, <u>ут</u>, <u>иш</u>, <u>ӳç</u>, <u>ӳк</u>; Х+У+Х: <u>пăр</u>, <u>пĕр</u>, <u>хĕр</u>, <u>çыр</u>, <u>сур</u> т.ыт.те /кунта Х – хупă сасă; У – уçă сасă/. Кун пек чух сăмахсем чĕлхере пĕр сыпăклисем, икĕ, виçĕ сыпăклисем е нумай сыпăклисем пуррине палăртаççĕ: <u>куç</u>; <u>каçă</u>; <u>пĕлтерӳ</u>; <u>пултарулăх</u>.

Лексикологире сăмахсене ушкăнланă чух вĕсем тĕп чăваш сăмахĕсем е ют чĕлхерен йышăннисем пулнине сăнамалла, анлă е сайра усă курнине тишкермелле, вĕсем пĕр-пĕриншĕн синонимсем, антонимсем, паронимсем пулнине пĕлмелле.

Семасиологире сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене тĕпе хурса ушкăнлатпăр: пĕр пĕлтерĕшлисем /синонимсем/, хирĕçле пĕлтерĕшлисем /антонимсем/, пĕр пек янăракан, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлисем /омонимсем/, пĕр пекрех янăракан , анчах та пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен расналанаканнисем /паронимсем/ т.ыт.те. Сăмах пулăвĕнче /дериватологире/ пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле сăмахсем пуррине палăртаççĕ.

Морфологире сăмахсене ушкăнласси çăмăл ĕçех мар. Ку таранчченхи чăваш чĕлхи грамматикисенче сăмахсене пуплев пайĕсем çине уйăрнă чух виçĕ е тăвата принципа тĕпе хумалли çинчен каланă, кусем – семантика /пĕлтерĕш/, морфологи, синтаксис тата сăмах пулăвĕн принципĕсем .

Морфологири сăмахсенчен чылайăшĕ хăйне уйрăм икĕ пĕлтерĕшлĕ шутланаççĕ, вĕсен лексика тата грамматика пĕлтерĕшĕсем пулаççĕ, тĕслĕхрен: <u>алă</u> /<u>ал</u>/ – этемĕн хулпуççирен пуçласа пӳрнесем таран тăсăлакан кĕлетке пайĕ – лексика пĕлтерĕшĕ; <u>алă</u>/<u>ал</u>/ – пĕррелĕ хисепри, тĕп падежри япала ячĕ – грамматика пĕлтерĕшĕ; <u>çынсемпе</u> – ăсласа калаçакан чĕрчунсемпе пĕрле пулни /лексика пĕлтерĕшĕ/; нумайлă хисепри пĕрлелĕх падежĕнчи япала ячĕ /грамматика пĕлтерĕшĕ/.

Семантика /пĕлтерĕш/ принципне тĕпе хурсан пирĕн япала ячĕ - япалалăха, хисеп ячĕ - хисепе, глагол - ĕçе палăртнине сăнамалла. Анчах та семантика принципне анчах шута илнипе эпир сăмахсене пурне те пуплев пайĕсем çине пайласа тухаймастпăр-ха, мĕншĕн тесен хăш-пĕр сăмахсен лексика пĕлтерĕшĕ пачах та çук е сĕвĕрĕлнĕ, анчах та ун пек сăмахсен грамматикăри /морфологири е синтаксисри/ пĕлтерĕшĕ пулать. Сăмахран, Çĕн хыпарсăр кун иртмест, а пирĕн радио чĕнмест /Капкăн/ предложенири а союзăн лексика пĕлтерĕшĕ çук, грамматикăри пĕлтерĕшĕ вара - хирĕçлекен союз. Ку пĕлтерĕш а союзпа пĕрле вырăс чĕлхинчен кĕнĕ.

Чăваш чĕлхинче междомети вырăнĕнче уçă сасăсем хăйсем тĕллĕн те, мăшăрланса та тăма пултараççĕ. Вĕсен ретĕнче, паллах, а уçă сасă та пур: А=а, лекрĕн=и тинех/калаç/ предложенири а=а-кăмăлчав /междомети/, вăл кăмăл хусканăвне ят памасăр палăртать, улшăнманнине кура эпир ун падежне, хисепне, сăпатне палăртаймастпăр, çав вăхăтрах кăмăлчавсен /междометисен/ лексика пĕлтерĕшĕ те уçăмлах палăрмасть.

Морфологи принципне тĕпе хурса сăмахсене ушкăнланă чух вĕсем морфологире мĕнле улшăннине е улшăнманнине сăнамалла. Ку принцип пуплев пайĕсен категорийĕсемпе категори тулашĕнче тăракан формисем пуррине сăнама ыйтать. Тĕслĕхрен, япала ячĕн хисеп, падеж, сăпат категорийĕсем пуррине тахçанах çирĕплетнĕ. Апла пулсан, япала ячĕ пулакан сăмах япалалăха кăтартнисĕр пуçне тата çав категори формисене йышăнмалла. Акă ача сăмаха илер: ачасем - нумайлă хисепре; ачам, ачу, ачи, ачамăр, ачăр формăсенче сăпат аффиксĕсем пурте пур; ачан, ачана, ачара, ачаран, ачапа, ачасăр, ачашăн формăсем ку сăмах вĕçленнине пĕлтереççĕ, çавăнпа эпир падеж категорийĕ пурри çинчен калатпăр.

Халĕ кай, мал, хыçал, тул сăмахсене илсе пăхар. Вĕсене ку таранччен тулли улшăнман япала ячĕсем тенĕ. Япала ячĕ пулаççĕши вĕсем? Япалалăх пĕлтерĕшĕ пур пек туйăнать вĕсенче, анчах та ку сăмахсем нумайлă хисепĕн =сем аффиксне йышăнманни, сăпатланманни тата тулли вĕçленменни /вĕсем пару, вырăн, туху падежĕсенче кăна пулаççĕ: кая, мала, хыçала, тула; кайра, малта, хыçалта, тулта; кайран, малтан, хыçалтан, тултан/ вĕсем морфологи тĕлĕшĕнчен япала ячĕ пулайманнине хыпарлаççĕ. Апла пулсан, вĕсене эпир вырăн наречийĕсем тесе кăна пăхма пултаратпăр. Ытти вырăн наречийĕсем пекех, вĕсем =рах/=рех/, =тарах/=терех/ танлаштару формин аффиксне йышăнма пултараççĕ: каярах, маларах,

хыçаларах, туларах; танл.: леререх, çӳлерех, ăçтарах. Çав вăхăтрах ум, хыç сăмахсене, вĕсем вырăна пĕлтерессĕ пулсан та, эпир наречи теейместпĕр, мĕншĕн тесен вĕсем туллин вĕçленесçĕ, сăпатланаççĕ, нумайлă хисепре те пулкалаççĕ.

Морфологи принципне тĕпе хурсах, чылай вăхăт хушши уйрăм хыççăмахсем тенĕ ай, çи, ум, хыç, ен, кĕтес, вара т.ыт.те лексемăсене юлашки çулсенче япала ячĕсем пулаççĕ тесе вĕрентме хушнă[3]. Ку тĕрĕсех ĕнтĕ. Ют чĕлхесенчен кĕнĕ хăш-пĕр сăмахсем камăнлăх=сăпат категорийĕн аффиксĕсене йышăнмасан та пултараççĕ. Кусен шутне кенгуру, какаду, кофе йышши сăмахсем кĕреççĕ. Вĕсем нумайлă хисепĕн =сем аффиксне йышăнма пултараççĕ, вĕçленеççĕ, апла пулсан, кусене япала ячĕ тесе пăхмалла. Камăнлăх=сăпат аффиксне йышăнманни ку сăмахсем чăваш чĕлхине кайран кĕнинчен кăна мар, вĕсем чăваш çыннин пурнăçĕнче пулманнинчен те килет. Чăваш кенгуру е какаду чĕрчунсене килте тытман, тытма та пултараймаң, çавна май вĕсем камăн пулнине те палăртма кирлех те пулман. Кофе вырăнне чăваш сăра ĕçнĕ, апла пулсан, эпир "Чăваш сăри чи хăватли" пулнине пĕлетпĕр.

Камăнлăх=сăпат категорийĕ чăваш чĕлхинчи хăш=хăш сăмахсен туллин палăрмасан та пултарать. Сăмахран, тăванлăха палăртакан атте, анне, пичче, инке, мучи сăмахсем т.ыт.те. пĕрремĕш сăпат аффиксне йышăнмасăрах çав пĕлтерĕше палăртма пултараççĕ. Абстракци пĕлтерĕшне хăш=пĕр сăмахсем 3-мĕш сăпат аффиксне кăна йышăнма пултараççĕ. Сăмахран, =ăш/=ĕш/ аффикспа пулнă япала ячĕсем 3=мĕш сăпат аффиксне анчах йышăнаççĕ: анлăшĕ, вăрăмăшĕ, нумайăшĕ, сахалăшĕ, урлăшĕ, çӳллĕшĕ, тарăнăшĕ. Ку вăл пурнăç чăнлăхĕпе çыхăннă; акă çын хăй пирки I=мĕш сăпатра тарăнăшăм, 2=мĕш сăпатра тепĕр çын пирки тарăнăшу теме пултараймасть, мĕншĕн тесен çын пахалăхне виçмелли ун пек мелсем çук. Пĕр=пĕр япалан тарăнăшĕ пулма пултарать: суха кассин тарăнăшĕ, пĕве, кӳлĕ, тинĕс, океан тарăнăшĕ; тĕрлĕрен савăт=сапа тарăнăшĕ т.ыт.те. Çапла вара, чăваш чĕлхинчи камăнлăх=сăпат категорийĕ вăл хăйне евĕрлĕ тăрăма палăртакан категори формин.

Пĕр=пĕр сăмах нумайлă хисепре пулать пулсан , вĕçленни

---

[3] Павлов И П. У-УI классенче чăваш чĕлхин морфологине [illegible]. Шупашкар, I98I. 8 с.

куç умĕнче тăрсан, камăнлăх=сăпат категорийĕн аффиксĕсене пурне те йышăнмасан та ăна япала ячĕ темелле. Паллах, кун пек чух япалалăх куç кĕретнĕ пулмалла.

Сайра-хутра 3=мĕш сăпат аффиксĕпе икĕ хутчен усă кураççĕ: турат - турачĕ, анчах туратти-тураттийĕ; çавăн пекех çунат - çуначĕ, анчах çунатти - çунаттийĕ.

Шурă сухал Тăхтаман
Упăшкийĕ пулмалла./К.Ив./

Кĕтмел çырлийĕ вучахри кăваррăн
Пăхать ем-ешĕл курăк хушшинчен./Я.Ухс./

3=мĕш сăпат аффиксне икĕ хут усă курни каланине çирĕпрех палăртма пулăшать. Çавăн пек япала ятне куçнă / субстантивациленнĕ/ паллă ячĕсем те çав формăра пулма пултараççĕ: çăмарта саррийĕ, куç хурийĕ.

Асăрхаттару. Тĕнчипе те сан пекки урăх çук. Пуçĕпех çухалчĕ. Кунĕпех ĕçлерĕ. Талккăшпех сарăлнă предложенисенчи тĕнчипе, пуçĕпех, кунĕпех, талккăшпех сăмах формисене наречие тухса кайнă[4] теме май çук , мĕншĕн тесен: пĕрремĕшĕнчен, вĕсенче наречи тăвакан аффикс çук; иккĕмĕшĕнчен, сăмах тĕпĕ конкретлă япаланах кăтартать; виççĕмĕшĕнчен, наречисен тытăмĕнче нихăçан та 3=мĕш сăпат аффиксĕ пулмасть. Çÿлерех асăннă сăмахсенчи 3=мĕш сăпат аффиксĕ тÿрĕ мар камăнлăха /вырăсла : косвенная принадлежность/ палăртакан формант. Ăна эпир Салтакĕ питĕ хитрескер вара /Арт."Саламби"/; Хĕвелĕ хĕртет те хĕртет /Калаç/ предложенисенче те куратпăр. Салтак/ĕ/, хĕвел/ĕ/ камăн е мĕнĕн пулнине тÿрех палăртса сăлтавлакан контекст çук пулин те эпир вăл сăмахсене 3=мĕш сăпатри япала ячĕ тесех пăхатпăр.

Тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсене пĕрлештерсе тăракан пуплев пайĕсен пурин те хăйне тивĕçлĕ категорийĕсем пур. Ят сăмахсен, тĕслĕхрен, кашнинех падеж, хисеп категорийĕсем пур. Çав вăхăтрах вĕсен кашнин хăйсене тивĕçлĕ те тĕсевлĕ категорийĕсем пур. Япала ячĕсен - камăнлăх=сăпат категорийĕ; паллă ячĕсен - танлаштару тата палăрту категорийĕсем; хисеп ячĕсен - йĕрке тата валеçÿ категорийĕсем ; ятылмашĕсен /местоименисен/ - =шкал/=шкел/ аффикслă евĕрлÿ категорийĕ; ĕçхĕлсен /глаголсен/ - вăхăт, наклонени, сăпат категорийĕсем.

[4] Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 88 с.

Падеж тата хисеп категорийĕсем тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсен кашнинех пур. Вĕсем пĕр чух сăмах улшăнăвĕнче тĕл пулаççĕ, тепĕр чух вĕсене эпир сăмах формин улшăнăвĕнче кăна тĕл пулатпăр. Сăмахран, паллă ячĕсен сăмах улшăнăвĕнче хисеп, падеж категорийĕсем çук, анчах та =и,=скер палăрту категорийĕн аффиксĕсене йышăннă паллă ячĕсем пурте /!/ нумайлă хисепре пулаççĕ, вĕçленеççĕ: сарри-саррисем; сарăскер-сарăскерсем; çарăскер-сарăскерĕн, сарăскере, сарăскерте, сарăскертен, сарăскерпе, сарăскерсĕр, сарăскерщĕн; сарри-саррин, саррине, сарринче, сарринчен, саррипе, саррисĕр, саррищĕн, саррисем - саррисен, саррисене, саррисенче, саррисенчен, саррисемпе, саррисемсĕр, саррисемшĕн.

Ку таранччен падеж е =сем аффикслă хисеп категорийĕ глаголсен пулнине ятарласах каламан, анчах та вĕсем пайташсен /причастисен / палăрту формисен сăмах формин улшăнăвĕнче пит лайăх палăраççĕ: кайни - кайнисем, вуланăскер - вуланăскерсем.

Морфологи - сăмах улшăнăвĕ çинчен вĕрентекен чĕлхе науки. Сăмахсен тулли тата тулли мар улшăнăвне асăрхама пулать. Сăмахран, паллă ячĕн танлаштару категорийĕ пур , ку вăл пур паллă ячĕ те =рах/=рех/ аффикс йышăнма пултарать тенине пĕлтерет. Асăрхăр: çыхăну паллă ячĕсем тени чăваш чĕлхинче çук/!/.

Çав вăхăтрах наречисем /ĕçхĕлçумĕсем/ те =рах/=рех/ аффикс йышăнма пултараççĕ: хуллентерех, анчахрах, ĕлĕкрех, таçтарах. Анчах та пур наречи те ăна йышăнаймасть: пачахрах/?/, ыранрах/?/, юрирех/?/ теместпĕр. Апла пулсан, наречисем тулли мар улшăнăва лекеççĕ, çавăнпа та наречисен танлаштару кĕлепи /форми/ пуррине кăна палăртатпăр.

Япала ячĕсенче =рах/=рех/ аффикс виç=тăват сăмах çумне хушăннăшăнах: ачарах, тихарах, путекрех, курăкрах /тырăсем курăкрах=ха/ япала ячĕсен танлаштару категорийĕ пур теме май çук, ку вăл япала ячĕсен танлаштару кĕлепи /форми/ пуррине хыпарлакан япала.

Наречисен /ĕçхĕлçумĕсен/ хăйсене тивĕçлĕ категорийĕсем çук. Çавнах татăксем , хыçсăмахсем, евĕрлев сăмахĕсем, ĕç ячĕсем çинчен те калама пулать. Çакă вăл чĕлхери сăмахсене ушканлакан чух шута хумалли тĕп сăлтав пулса тăмалла. Пирĕн шутпа, сăмахсене а/тулли пĕлтерĕшлисем; ă/ пулăшу пĕлтерĕшлисем пулнине кăна шута хуни çителĕксĕр пек туйăнать.

Сӑмах пулӑвӗн принципӗ, паллах, пуплев пайӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрма май парать: пуҫ=лӑх, пуҫ=ӑн, пуҫ=тар, сӑмахсенчи сӑмах тӑвакан аффикссем сӑмах хӑш пуплев пайне кӗнине тӳрремӗнех палӑртаҫҫӗ. Анчах та тепӗр чухне пӗр аффиксах темиҫе функциллӗ пулма пултарать. Кун пек чухне сӑмах пулӑвӗн принципне туллин ӗненме май килмест, ҫавӑнпа та морфологи принципне пулӑшӑва чӗнме лекет. Акӑ =сӑр/=сӗр/ аффикс пӗрре паллӑ ячӗ тӑвать: илем-сӗр, вӑй-сӑр, тепре вӑл ҫуклӑх падежӗн аффиксӗ пулса сӑмаха улӑштарать: ачасӑр, пилӗксӗр, ҫурӑмсӑр, пуҫсӑр, кӗпесӗр, Ваҫҫасӑр т.ыт.те. Кун пек чухне паллӑ ячӗ пулакан =сӑр/=сӗр/ аффикслӑ сӑмахсем, =тарах/=терех/ аффикс йышӑнаҫҫӗ те паллӑ ячӗн танлаштару категорине йӗркелеҫҫӗ, ҫуклӑх падежӗнчи япала ячӗсен кун пек пахалӑхлӑ пулаймаҫҫӗ.

Асӑрхаттару. Ҫуклӑх падежне чӑваш чӗлхинче йышӑнни тӗрӗс мар, мӗншӗн тесен пӗтӗмлӗх принципӗ пӑсӑлать.

Ку таранччен тӗпчевҫӗсем =сӑр/=сӗр/ аффикс хушӑнса пулнӑ паллӑ ячӗсем пӗлтерӗшӗ тӗлӗшӗнчен =лӑ/=лӗ/ аффикслисене хирӗҫле пулаҫҫӗ тенӗ[5], анчах та темӗншӗн-ҫке ҫуклӑх падежӗнчи формӑсене хирӗҫ тӑракан =лӑ/=лӗ/, =ллӑ/=ллӗ/ формӑсене пурне те паллӑ ячӗ шутне кӗртнӗ. Тан пӗлтерӗшлӗх ҫулӗ ҫине тӑрас пулсан чӑваш чӗлхинче пурлӑх падежӗ пуррине ҫирӗплетмелле пек.

Ҫапах та чылай чухне деривации аффиксӗсене тӗсесен сӑмах хӑш пуплев пайне кӗнине уҫҫӑнах калама пулать. Акӑ, пулӑҫӑ, кӗтӳҫӗ, юрӑҫӑ сӑмахсенчи =ҫӑ/=ҫӗ/ аффикс пӗр япала ятӗнчен тепӗр япала ячӗ пулнине уҫҫӑнах ҫирӗплетет.

Синтаксис принципӗ шанчӑклӑ принципах мар пулин те, ӑна та хушӑран шута илмесӗр тӑма пултараймастпӑр. Тӗслӗхрен, омонимсене сӑмахсене хӑш пуплев пайне кӗнине пӗлес тесен вӗсене сӑмахсен хупӑрлавӗнче пӑхмалла. Уйрӑммӑн илнӗ тар сӑмах пирки эпир иккӗленӳллӗ шухӑш кӑна калама пултаратпӑр. Вӑл глагол та, япала ячӗ те пулма пултарать. Анчах та I. Ҫурӑм ҫине тар тухрӗ. Ӗҫлес килмесен - пӑрах та тар предложенисенче тар сӑмах пӗрремӗшӗнче япала ячӗ, иккӗмӗшӗнче глагол пулни куҫ умӗнчех.

---

[5] Сергеев Л.П., Котлеев В.И. Чӑваш чӗлхи. Шупашкар, 1993. 267 с.

Синтаксис принципě пулăшнипех çĕр сăмах япала ячĕ, хисеп ячĕ, глагол пулнине уççăнах калама пултаратпăр: çĕр /япала ячĕ/ çинчи халăхсем; çĕр /хисеп ячĕ/ çирĕм пĕрре; çĕрулми йĕпепе çĕрет /глагол/. Паллах, омоним сăмахсене морфологи принципĕ çине таянса та хăш ушкăна кĕнине кăтартма пулать, анчах та малтан синтаксис çинех таянма лекет. Калăпăр, Ĕç хыççăн ĕç предложенири иккĕмĕш вырăнта тăракан ĕç сăмах хăш пуплев пайне кĕнине тӳрех палăртма йывăр, çавна май ăна икĕ тĕрлĕ ăнланма пулать: а/ пĕр ĕç хыççăн тепĕр ĕç пуçланать; ă/ ĕç пĕтернĕ хыççăн сăра ĕç. Енчен те морфологипе синтаксис принципĕсене пĕрле илсе пăхсан шухăш уçăмланать: I. Ку ĕç хыççăн татах ĕçсем пур. 2. Ĕç хыççăн ĕçет. Пĕрремĕш предложенири ĕçсем сăмах нумайлă хисепри япала ячĕ. Енчен те эпир Ĕç хыççăн ĕçсем ... тетпĕр пулсан ĕçсем сăмах хăш пуплев пайне кĕнине тӳрех калама йывăр. Çавнах эпир Ĕç хыççăн сăра ĕçсем тетпĕр пулин ĕçсем сăмах хушу тайăмĕн пĕррелле хисепре, иккĕмĕш сăпатра пулнине пĕлетпĕр.

Асăрхарăр пулĕ, кун пек чухне ĕçсем сăмах хупăрлавне, вăл мĕнле сăмахпа çыхăнма пултарнине сăнатпăр. Тата тепĕр икĕ тĕслĕх : çук çын тата çын çук сăмах çаврăнăшĕсенче çук сăмах çын япала ячĕ умĕнче тăрса, япалан паллине кăтартса паллă ячĕ пулать, ăна эпир морфологи принципне тĕпе хурса та çирĕплетме пултаратпăр: çукрах çын. Иккĕмĕш тĕслĕхре çын çук тенĕ чухне çук сăмах иккĕмĕш вырăна лекет те япалан паллине кăтартмасть, апла пулсан, кунта вăл хирĕçлев татăкĕ пулать. Сăмахсен предложенири вырăнне пăхса хăш пуплев пайне кăтартмалли принципа дистрибуци принципĕ теççĕ. Çак таранччен ку принципа усă курса сăмах хăш пуплев пайне кĕнине палăртма май пурри çинчен чăваш чĕлхи наукинче каламан, анчах та ăна шута хумаллах. Асăрхăр: шурă хут, сырмалли хут, кĕнеке кăларма хут çук тенĕ чухне чăваш чĕлхине шкулта вĕреннĕ кашни çынах вăл япала ячĕ пулнине калама пултарать. Ун пек чух вăл хут сăмахăн лексика пĕлтерĕшне /вăл темиçе пĕлтерĕшлĕ пулнине/ тĕплĕн сăнамасть, грамматика паллисене те палăртмасть. Вут хут, кăмака хут, кантăр хут, çап хут, мунча хут, кăмрăк хут тенĕ чухне вăл глагол пулнине тӳрех чухлатпăр. Аялти хут, çӳлти хут, икĕ çут алăк тĕслĕхсенче хут сăмах япала ячĕ пулни паллă. Çапла вара, омоним сăмахсене пĕр=пĕринчен уйăрса илме пире синтаксис тата дистрибуци принципĕсем пулăшаççĕ.

## Тулли тата пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пирки

Чăваш чĕлхинчи сăмахсене морфологи тĕлĕшĕнчен икĕ пысăк ушкăна уйăрас туртăм пур: тулли /е хăй пĕлтерĕшлĕ/ сăмахсем тата пулăшу сăмахĕсем.

Тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пурин те лексика пĕлтерĕшĕ пурринe, предложенире вĕсем тĕп членсем те, кĕçĕн членсем те пулнине те палăртаççĕ тĕпчевçĕсем. Вĕсен тĕрлĕ грамматика категорийĕсем пуррине те кăтартнă.

Тулли пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем шутне япала ячĕсене, паллă ячĕсене, хисеп ячĕсене, местоименисене, глаголсене, наречисене тата евĕрлев сăмахĕсене кĕртеççĕ.

Пулăшу сăмахĕсен шутне хыççăмахсене , татăксене, союзсене кĕртеççĕ, вĕсем предложени членĕсем пулманнине, сăмахсене тата предложенисене çыхăнтарма пулăшнине палăртаççĕ. Халĕ ку тараннччен пичетленсе тухнă ĕçсенчи схемăсемпе таблицăсене илсе кăтартăпăр.

И.П.Павлов хатĕрленĕ пуплев пайĕсен таблици:[6]

| Çыхăнура тăракан сăмахсем | | Çыхăнура тăман сăмахсем |
|---|---|---|
| Хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | I. Япала ячĕсем<br>2. Паллă ячĕсем<br>3. Хисеп ячĕсем<br>4. Местоименисем<br>5. Глаголсем<br>6. Наречисем<br>7. Евĕрлев сăмахĕсем | I. Междометисем<br>2. Модаллĕх сăмахĕсем |
| Пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | I. Хыççăмахсем<br>2. Союзсем<br>3. Татăксем | |

[6] Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 55 с.

Ку таблицăра панă "Хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсем" текен термин пирки асăрхаттарса хăвармалла. Паллах, автор хăй пĕлтерĕшлĕ тенине лексика пĕлтерĕшĕпе кăна çыхăнтарать. Чăнах та, таблицăра илсе панă çичĕ пуплев пайне кĕрекен сăмахсен лексика пĕлтерĕшĕ туллин палăрать. Анчах та вĕсене морфологире ушкăнланă чух пирĕн ку сăмахсен грамматикăри /морфологири/ пĕлтерĕшĕсене те шута хумалла. Ку тĕлĕшпе вара хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕр ретре тăмалла мар, мĕншĕн тесен малтанхи пилĕк пуплев пайĕн сăмах улшăнăвĕнче хăйне тивĕçлĕ категорисем пур, çав вăхăтрах наречисемпе евĕрлев сăмахĕсен хăйсене тивĕçлĕ морфологи категорийĕсем çук.

Пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсен лексика пĕлтерĕшĕ çук пек пулса тухать. Анчах та ик чĕлхеллĕ словарьсенче вĕсен те лексика пĕлтерĕшĕ пуррине /вĕсем нумай пĕлтерĕшлĕ пулнине/ палăртнă. Тĕслĕхрен, пек хыçсăмахах илер. 1982 çулта тухнă "Чăвашла-вырăсла словарьте" ку сăмахăн 4 пĕлтерĕш пуррине палăртнă: 1/ похожий на кого=что=либо; 2/ как будто, вроде, кажется, словно; 3/ около, приблизительно, почти; 4/ в сочетании с предведущим гл. в форме на =ам/=ем/ и последующим глаголом ту выражает притворное действие /284 с./. Енчен те словарь ку сăмахăн темиçе пĕлтерĕш пуррине палăртать пулсан, эпир унăн лексика пĕлтерĕшĕ çук тесе калаймастпăр.

Л.П.Сергеев чăваш чĕлхинчи пуплев пайĕсен системин схемине çакăн пек кăтартнă:[7]




[7] Сергеев Л.П., Котлеев В.И. Чăваш чĕлхи. Хушса çĕнетнĕ 2-мĕш кăларăм. Шупашкар, 1993. 210 с.

Кунта Л.П.Сергеев хӑй пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене тулли пӗлтерӗшлӗ тенӗ. Пулӑшу сӑмахӗсен грамматика категорийӗсем ҫуккине тӗрӗс палӑртнипе пӗрлех, вӗсем улшӑнман пуплев пайӗсем пулнине кӑтартса йӑнӑш тунӑ. Морфологири пулӑшу сӑмахӗсене пӗр ретре пӑхма май ҫук. Акӑ =и,=ши татӑксем пачах та улшӑнмаҫҫӗ, анчах та мар, ҫук хирӗҫлев татӑкӗсен тулли мар улшӑнӑвне ҫапларах кӑтартма пулать:

мар: килте мартан, ӗҫре маршӑн, кирлӗ мара /ан калаҫ/; кирлӗ марпа ан аппалан - падеж кӳлеписем;

ҫук: ҫука курах, килте ҫукран, ҫукпа пурӑнма ҫӑмӑл мар, ӗҫ ҫукшӑн - падеж кӳлеписем;

ҫукчӗ, марччӗ: килте марччӗ, ҫукчӗ - иртнӗ тӑрӑм кӳлеписем;

марах, ҫуках: вӑл марах, килте ҫуках - вӑйлату кӳлеписем;

марри, ҫукки; марскер, ҫукскер: ӗҫре марри, ҫукки тӗлӗнтерчӗ; ӗҫ ҫукскер; килте марскер - палӑрту кӳлеписем.

Асӑннӑ татӑксен тулли мар улшӑнӑвӗ куҫ умӗнчех. Ҫитменнине тата =и,=скер аффикссене йышӑннӑ мар, ҫук татӑксем ытти пуплев пайӗнчи сӑмахсем пекех нумайлӑ хисепре пулаҫҫӗ: маррисем, ҫуккисем. Ун пек чух вӗсем туллин вӗҫленеҫҫӗ; тата =и, =скер аффикслӑ сӑмахсем пур падежра та пулаҫҫӗ. Ҫапла вара, мар, ҫук татӑксен улшӑнӑвӗсенче хисеп тата падеж /ӳкӗм/ категорийӗсем пур.

Сӑмахсем хӑш пуплев пайне кӗнине палӑртнӑ чух пирӗн вӗсене тӗрлӗ енчен пӑхма лекет.

Чӑваш чӗлхинчи мӗнпур сӑмаха морфологире ҫакӑн пек виҫӗ ушкӑна пайлама пулать: 1/ улшӑнакан сӑмахсем; 2/ тулли улшӑнман сӑмахсем; 3/ улшӑнман сӑмахсем. Вӗсене эпир пуплев пайӗсем тӗлӗшӗнчен тишкерсе тухӑпӑр.

## ПӖРРЕМӖШ ПАЙ. ЯПАЛА ЯЧӖ

### 1 §. Улшӑнакан тата тулли улшӑнман япала ячӗсем

Улшӑнакан сӑмахсене тепӗр майлӑ тулли улшӑнакан сӑмахсем темелле. Сӑмах туллин улшӑннине пӗлес тесен кашни пуплев пайне тивӗҫлӗ категорисем пуррине пӗлмелле. Япала ячӗн падеж, хисеп, камӑнлӑх сӑпат тата вӗҫлену категорийӗсем пур, вӗсем япала ячӗн тӗп категорийӗсем шутланаҫҫӗ. Вӗҫлену категорийӗ икӗ тӗр-

лĕ пулать: тĕп вĕçленӳ тата хутăш вĕçленӳ. Хутăш вĕçленӳ сăмах формин улшăнăвĕнче кăна палăрнă пирки эпир вĕçленӳ категорине тĕп категорисен шутне кĕртрĕмĕр пулин те, ăна юлашкитăваттăмĕш вырăна хăвартăмăр.

Енчен те пĕр=пĕр сăмаха япала ячĕ тетпĕр пулсан, çав сăмах япала ячĕн категорийĕсене йышăнмалла. Сăмахран, сĕтел сăмахах илер: а/ сĕтелсем - нумайлă хисеп категорийĕнче; сĕтелĕм, сĕтелӳ, сĕтелĕ, сĕтелĕмĕр; ă/ сĕтелĕр - камăнлăх сăпат категорийĕнче / ун пек чух эпир сĕтел сăмах сăпатланать тетпĕр/; б/ сĕтелĕн, сĕтеле, сĕтелте, сĕтелтен; сĕтелпе, сĕтелсĕр, сĕтелшĕн - туллин вĕçленет, апла падеж категорийĕ куç умĕнчех;

| в/ тĕп вĕçленӳ | | хутăш вĕçленӳ |
|---|---|---|
| Т. сĕтел | сĕтел=ĕ | сĕтел=сем |
| К. сĕтелĕн | сĕтел=ĕ=н | сĕтел=се=н |
| П. сĕтел=е | сĕтел= н=е | сĕтел=се=н=е |
| В. сĕтелте | сĕтел=ĕ=н=че | сĕтел=се=н=че |
| Т. сĕтелтен | сĕтел=ĕ=н=чен | сĕтел=се=н=чен |
| П. сĕтелпе | сĕтел=ĕ=пе | сĕтел=сем=пе |
| Ç. сĕтелсĕр | сĕтел=ĕ=сĕр | сĕтел=сем=сĕр |
| П. сĕтелшĕн | сĕтел=шĕн | сĕтел=сем=шĕн |

Чăваш чĕлхинче тулли сăпатланман япала ячĕсем те пур, вĕсен шутне паллă ячĕсем çумне =ăш/=ĕш/ аффикс хушăнса пулнă ятсене кĕртмелле: чылайăш, сарлакăш, сахалăш, савракăш, аслăш, анлăш, тутлăш, тӳрĕш, инçĕш, çинçĕш т.ыт. те. Çӳлерех асăннă сăмахсем камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпачĕн =ĕ аффиксне йышăнма кăна пултараççĕ: тачкăш=ĕ, сарлакăш=ĕ, анлăш=ĕ, тӳрĕш=ĕ т. ыт.те. Ку пурнăç чăнлăхĕпе çыхăннă. Калакан çын абстрактлă паллă пĕлтерекен ят сăмахсем çумне I, 2-мĕш сăпат аффиксĕсене хушмасть =ăш/=ĕш/ аффикслă япала ячĕсем нумайлă хисепре пулаççĕ, вĕçленеççĕ, çавăнпа та эпир вĕсене япала ячĕ тетпĕр.

Ют чĕлхерен кĕнĕ çак сăмахсем те I, 2-мĕш сăпат аффиксĕсене йышăнмаççĕ, анчах 3=мĕш сăпат форминче пулаççĕ : производство - производстви: ял хуçалăх производстви; общество - обществи: социализм обществи; перо - пери : плакат пери; пальто - пальти, пальтовĕ: ачасен хĕллехи пальти, пальтовĕ; звено-звени: бригадăн пĕрремĕш звени; бюро - бюровĕ: профком бюровĕ; депо - деповĕ : юсав деповĕ.

Маларах каларăмăр ĕнтĕ, ют чĕлхерен кĕнĕ хăш-пĕр сăмахсем

/какаду, кофе, какао йышшисем/ пач сăпатланмасан та пултараççĕ. Çапах та эпир вĕсене япала ячĕсемех тетпĕр, мĕншĕн тесен вĕсем нумайлă хисепре пулма пултараççĕ, вĕçленеççĕ. Хăш=пĕр чăваш сăмахĕсемех тепĕр чух пур сăпат аффиксĕсене йышăнмасан та пултараççĕ. Тĕслĕхрен, варă /вар/ "середина" сăмаха илер. Ку сăмах I, 2-мĕш сăпат аффиксĕсене йышăнасшăн мар: варрăм, варру, варрăмăр, варрăр тенисем чĕлхере çук.

Асăрхăр: вар /вар=хырăм/ сăмахпа пăтраштарма кирлĕ мар, ун пек чух эпир : варăм, вару, варĕ теме пултаратпăр.

Анчах та варă сăмах 3-мĕш сăпат аффиксне ирĕклĕнех йышăнать пек: варри: йывăç варри, кÿлĕ варри, вăрман варри. Кун пек чухне вăл =сем нумайлă хисеп аффиксне те йышăнать: варрисем. Варри, варрисем формăсем туллин вĕçленеççĕ. Анчах та вĕçленÿ сăмах форминче кăна палăрать. Варă сăмах тĕпĕ хăй тĕллĕн туллин вĕçленмест: варăра /е варара/, варăран/ е варaран/, варăпа /е варапа/, варăсăр /е варăсăр/ теме кăна пултаратпăр. Çапла вара, нумайлă хисепре пулман, тулли вĕçленмен, сăпатланман варă сăмаха эпир япала ячĕ теме пултараймастпăр. Вăл вырăн наречийĕ пулакан сăмах кăна.

Пĕр вăхăт варă сăмаха "улшăнакан хыçсăмахсен" ретĕнче пăхнă пулнă. Унтан ку сăмахсене ай, çи, ум, хыç, тĕл, аяк, ен лексемăсемпе пĕр ретре тăраççĕ тесе япала ячĕсем теме сĕннĕ.[1]

Пирĕн шутпа, сăмах улшăнăвĕнче падеж, сăпат, хисеп категорийĕсенче пулман сăмахсене япала ячĕ теме май çук. Ай, çи, ум, хыç, тĕл, ен сăмахсем туллин вĕçленеççĕ, сăпатланаççĕ тата нумайлă хисепре те пулаççĕ, çавна май вĕсене япала ячĕ темелле.

Пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем тесе пăхнă хыçал, çиел, мал, çÿл, шал, тул, кай, анат, инçет йышши сăмахсене ниепле те морфологире япала ячĕ тесе пăхма май çук: вĕсем нумайлă хисепре пулмаççĕ, сăпатланмаççĕ, туллин вĕçленмеççĕ. Вичĕ падеж формине пулнăшăнах вĕсене япала ячĕ тесе пăхни тĕрĕс мар:

мал - мала, малта, малтан;
хыçал - хыçала - хыçалта, хыçалтан;
çÿл - çÿле, çÿлте, çÿлтен;
аял - аяла, аялта, аялтан т.ыт.те.

[1] Павлов И.П. У-УI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985. 17 с.

Тулли мар вĕçленӳ наречисене килĕшӳллĕ. Лексика тĕлĕшĕнчен пăхсан, ку сăмахсене тулли пĕлтерĕшлисен шутне кĕртмелле, мĕншĕн тесен вĕсем предложенире тĕп член та, кĕçĕн член та пулма пултараççĕ. Асăрхăр: пулăшу сăмахĕсем предложени членĕсем пулмаççĕ.[2]

Áслăлăх ĕçĕсенче тĕпчевçĕсем пат, çум сăмахсене тишкерсех каймаççĕ, вĕсем пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулнине кăна асăнаççĕ. Словарьсенче пат пулăшу сăмахĕ пулнине, çум тулли пĕлтерĕшлĕ те, пулăшу пĕлтерĕшлĕ пулнине те палăртнă. Чăнах та, хăш пуплев пайне кĕреççĕ-ха вĕсем?

Пат сăмахăн та, çум сăмахăн та пĕр евĕрлĕхсем пур: иккĕшĕ те камăнлăх-сăпат категорийĕн аффиксĕсене туллин йышăнаççĕ: пат: патăмра, патăнта, патĕнче, патăмăрта, патăрта; çум: çумăмра, çумăнта, çумĕнче, çумăмăрта, çумăрта. Анчах та I,2-мĕш сăпат аффиксĕсем хăйсем тĕллĕн çӳресшĕнех мар, вĕсем хыççăн яланах падеж аффиксĕсем тăраççĕ.

Камăнлăх=сăпат категорийĕ чăваш чĕлхинче япала ячĕсен анчах пулать, апла пулсан ку сăмахсене пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем теме лекет. Хисеп, падеж категорийĕсем ку лексемăсен сăмах формин улшăнăвĕнче кăна палăраççĕ:

патăмри - патăмрисем; патăмрин - патăмрисен т.ыт.те.

çумĕнчи - çумĕнчисем; çумĕнчипе- çумĕнчисемпе т.ыт.те.

Çакна та асăрхаттармалла: пуç, чĕре, ӳпке, упăшка, арăм сăмахсем нумайлă хисепри I-мĕш сăпат аффиксне йышăнмаççĕ. Пуçăмăр тесен икĕ çыннăн пĕр пуç пулнине çирĕплетме лекет. Кун пек чухне вăл формăсене =сем аффикспа усă курма лекет: пуçăмăрсем, ӳпкемĕрсем, чĕремĕрсем, упăшкамăрсем, арăмăрсем.

## § 2. Вăхăта палăртакан хĕл-хĕлле, çу-çулла, кĕр-кĕркунне, çур-çуркунне сăмахсен улшăнăвĕ

Чăваш чĕлхе наукинче Н.И.Ашмаринранпах кĕркунне, çуркунне сăмахсене ăсхĕлçумĕ /наречи/ пулнине палăртма хăнăхнă.[3] Пĕр

[2] Сергеев Л.П., Котлеев В.И. Чăваш чĕлхи. Шупашкар, 1993. 209 с.
[3] Çавăнтах. 341 с.; Ашмарин Н.И. Материалы для исследования чувашского языка. Казань, 1898. С. 236.; Павлов И.П. Хальхи чăваш литератури чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 297 с.



Ч-36169

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ

вăхăтра ку сăмахсем наречи е япала ячĕ пулнине пĕлес шухăшпа анкетăласа çакăн пек предложенисем сĕннĕччĕ:

1. Çуркунне /кĕркунне/ çитрĕ "Наступила весна /осень/".

2. Пичче салтакран кĕркунне /çуркунне/ таврăнчĕ.

Анкетăра хуравлаканăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш предложенисенчи кĕркунне /çуркунне/ сăмахсене мĕнле предложени членĕ пулнине кура /синтаксис принципĕ/ хăш пуплев пайĕнчи сăмах пулнине кăтартма сĕннĕ. Кун пек чухне çине тăрсах пĕрремĕш предложенири çуркунне /кĕркунне/ сăмахсем япала ячĕ, иккĕмĕшĕнчисем наречи пулаççĕ тесе ĕнентерме пăхнă самантсем те пулнă.

Л.П.Сергеев шучĕпе, кĕркунне, çуркунне, çулла, хĕлле сăмахсем наречирен конверси йĕркипе пулнă япала ячĕсем шутланаççĕ. Автор каланă тăрăх, ун пек сăмахсем вара вĕçленеççĕ, хисеп тăрăх улшăнаççĕ[4]. Пирĕн шутпа, çÿлерех асăннă сăмахсем хăш пуплев пайне кĕнине пĕлес тесен вĕсен улшăнăвне тĕрĕслемелле /морфологи принципĕ/.

Юлашки вăхăтра чăваш чĕлхе наукинче çине тăрсах "Наречи - улшăнман пуплев пайĕ"[5], "Наречи вара улшăнман пуплев пайĕсен шутне кĕрет: унăн пуплев пайĕн уйрăмлăхĕсене кăтартакан морфологи паллисем çук"[6] тенине илтме лекет. Çÿлерех калани тĕрĕс тесе шутланипе наречисене вĕреннĕ чух вĕсен предложенири функцине асра тытмаллине / синтаксис принципне ĕнтĕ/, лексика пĕлтерĕшне шута илмеллине, сăмах тăвакан аффикссене тĕсемелли çинчен каланă[7].

Наречи - улшăнман пуплев пайĕ пулать тесе çирĕплетмелли критерисем çукрах пек туйăнать. Ăна туллин улшăнман пуплев пайĕсен шутне кĕртни тĕрĕсрех пек. Кăна тĕпчевçĕсем хăйсем те асăрхаççĕ:"Апла пулин те хăш-пĕр вăхăт наречийĕсем уйрăм падеж аффиксĕсене йышăнаççĕ", "... мĕнлелĕх наречийĕсем танлаштаруллă тата вăйлă формăра пулаççĕ" /Л.П.Сергеев. 340 - 347 с./

Халĕ ку таранччен наречи тесе пăхнă кĕркунне тата çуркунне сăмахсен улшăнăвне сăнавлă куçпа пăхăпăр. Н.И.Ашмарин словарьне ĕненес пулсан,ку сăмахсем нумайлă хисепре пулаççĕ:

---

[4] Сергеев Л.П., Котлеев В.И. Чăваш чĕлхи. 221 с.

[5] Çавăнтах. 340 с.

[6] Павлов И.П. У-УI класенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. 99 с.

[7] Çавăнтах.

Кĕркуннесем "в осеннее время" /букв. "осенями"/. Кĕркуннесенче таврăнайăп-и тесе шутлап /А.УІІ, 272/.

Ахаль те çуркуннесенче пырса кĕмелле мар /А. УІІ, 255/

Хальхи вăхăтри илемлĕ литературăран илнĕ тĕслĕхсем: Çуркуннесенче пахчасене, çарана, ... шыв илет /В.Садай/.

Çуркунне, кĕркунне сăмахсен вĕçленĕвне сăнăпăр:

Т. çуркунне: Çуркунне - илемлĕ вăхăт.

К. çуркуннен, çуркунненĕн Сасартăк çуркуннен чи илемлĕ вăхăчĕ килсе çитрĕ /А. ХІІ,255/.

П. çуркуннене: Çуркуннене çитрĕмĕр /А. ХІІ, 255/

В. çуркуннере: Кашни çуркуннерех çул пăсăлать, ейӳ каять те, иртсе çӳреме май пĕтет.

Т. çуркуннерен кĕркуннене çитичченех.

П. çуркуннепе: Çуркуннепе кĕркунне.

Ç. çуркуннесĕр: Çуркуннесĕр таврăнаймасть.

П. çуркуннешĕн: Çуркуннешĕн унта тытăнса тăмалла мар пек.

Т. кĕркунне: Кĕркунне çитрĕ.

К. кĕркуннен: Кĕркуннен илемĕ.

П. кĕркуннене: Çапла вара, унăн çитес кĕркуннене анкарти те, пахчи те хатĕр пулса тăчĕ /А. УІІ,272/.

В. кĕркуннере: Кĕркуннере каç тĕттĕм /фолькл./.

Т. кĕркуннерен : Кĕркуннерен пуçласа хĕле çитиче .

П. кĕркуннепе: Кĕркуннепе çул усал /Фед./.

Ç. кĕркуннесĕр: Кĕркуннесĕр ан та кĕт.

П. кĕркуннешĕн: Кĕркуннешĕн мĕн кулянан?

Пурнăç чăнлăхне шута хурсан кĕркунне, çуркунне çулталăкăн вăхăт сыпăкĕсене палăртаççĕ, апла пулсан вĕсем ниепле те пĕр=пĕр çыннăн пулма пултараймаççĕ, çавна май ку сăмахсем камăнлăх=сăпат категорийĕн аффиксĕсене йышăнмаççĕ.

Çапла майпа нумайлă хисепре пулакан, туллин вĕçленекен кĕркунне, çуркунне сăмахсене япала ячĕ теме май пур.

Н.И.Ашмарин словарĕнче çуркунне, кĕркунне сăмахсен çакăн пек формисене панă:

І/ çуркуннесерен, кĕркуннесерен - тăтăшлăх форми;

2/ çуркуннехи, кĕркуннехи - палăрту форми;

3/ çуркуннелерехпе - сулăну форми+ танлаштару форми + пĕрлелĕх падеж аффиксĕ;

4/ çуркуннеллĕ /мĕнлĕ/, кĕркуннеллĕ /-мĕнлĕ/ - пурлă форма;

5/ çуркуннеччен, кĕркуннеччен – тăсăмлăх форми;

6/ çуркуннелĕхе, кĕркуннелĕхе – çителĕклĕх форми + пару падеж аффиксĕ;

7/ кĕркуннеччентеререх – тăсăмлăх форми + танлаштару форми + вăйлату форми.

Асăрхăр: кĕркуннехи, çуркуннехи палăрту кÿлеписем сăмах формин улшăнăвĕнче туллин вĕçленеççĕ: кĕркуннехин, кĕркуннехине, кĕркуннехинче, кĕркуннехинчен, кĕркуннехипе, кĕркуннехисĕр, кĕркуннехишĕн.

Нумайлă хисепре пулакан, вĕçленекен кĕркунне, çуркунне сăмахсем улшăнмаççĕ тесе калама май килмест. Камăнлăх=сăпат категорийĕнче пулманнин сăлтавĕ пур. Апла пулсан, ку сăмахсене япала ячĕ теме лекет. Тĕлĕнмелле пулин те А.Артемьевăн "Тăвăл умĕн" повеçĕнче /Шупашкар, 1975. 188 с/ Кĕçтукăн кĕркунни çитрĕ текен предложени пур. Кунта пире кĕркунни текен форма питех те кăсăклă пек туйăнать, ку вăл кĕркунне сăмах 3-мĕш сăпат аффиксне йышăннине пĕлтерет. Апла пулсан,çав пĕлтерĕшпех эпир çуркунни çитрĕ теме те пултаратпăр.

Кĕр, çур сăмахсене ку таранччен наречи тени пулман. Тĕпчевçĕсем ку сăмахсене япала ячĕ тесех пăхаççĕ. Апла калама сăлтавĕ те пур, вĕсем нумайлă хисеп аффиксне йышăнаççĕ: хура кĕрсем çитсен; Çук, чăххисем кăçал та ытти кĕрсенчи пекех лайăх çăмарта туса параççĕ /А. УII, 271/. Çурсем "Яровые хлеба". Çурсем акрăр-и? /А. XII, 256/.

Туллин вĕçленеççĕ:

Т. Кикак хур кайăк Кĕр каять те çур килет.

К. Ăсатайрăн çурăн çĕрĕнче /А. XII, 255/.
Килсе çитрĕç кĕрĕн кунĕсем.

П. Çура тухрăмăр /А. XII, 254/. Кĕре кĕретпĕр /А. УII, 271/.

В. Кĕрте шапа тавраш юрламасть /А. УII, 271/.

Т. Çуртан хура кĕрччен /А. XII, 254/.
Кĕртен кĕре çити.

П. Çурпа кĕр пĕр мар. Кĕрпе /кĕркуннепе/ таврăнмалла.

Ç. Çурсăр ан та кĕт ăна. Кĕрсĕр таврăнаймастех вăл.

П. Кайăксем юрлаççĕ çуршăн,
Йывăççем лараççĕ чечеке.

Чăнах та, кĕр, çур сăмахсем те, кĕркунне, çуркунне сăмахсем пекех, сăпат аффиксĕсене йышăнасшăн мар, анчах та 3-мĕш

сăпат аффиксĕ палартса каланă чухне вĕсем çумне те хутшăнать: Кĕрĕ часах пулчĕ тата. Çурĕ темĕншĕн пулаймасть. Апла пулсан, 3-мĕш сăпат аффиксĕн функцийĕсем тата пĕлтерĕшĕсем I, 2 -мĕш сăпатсеннипе танлаштарсан анлăрах пулмалла.

Кĕр, çур сăмахсем ытти япала ячĕсем пекех тĕрлĕрен формăсенче пулма пултараççĕ:

кĕрхи, çурхи - палăрту форми;

çурлăх "на весенний период" /А. XII, 256/ - çителĕклĕх форми;

кĕрччен, çурччен - тăсăмлăх форми.

Çак икĕ сăмах мăшăрланса та тĕрлĕ кӳлепеллĕ пулма пултараççĕ:

кĕрлĕ-çурлă - пурлă форма;

кĕрĕн=çурăн - мĕнлелĕх форми;

Япала ячĕсен ретĕнчех хĕл, çу сăмахсене те пăхаççĕ. Ку тĕрĕсех ĕнтĕ. Кĕр, çур сăмахсемпе танлаштарсан, Н.И. Ашмарин словарĕнче хĕл сăмах 2-мĕш сăпат аффиксне йышăннин тĕслĕхне панă: Хĕлӳ анчах пуçланать халь, эс çуллахине шухăшлатăн /А. ХУII, I5/. 3-мĕш сăпат аффиксĕ хĕл, çу сăмахсем çумне хушăннине куратпăр: вырăс хĕлĕ; çăвĕ еплерех шăрăх тăчĕ тата: Савнах эпир хĕлĕпе, çăвĕпе кӳлепесенче те куратпăр.

Хĕл, çу сăмахсем туллин вĕçленеççĕ:

К. хĕлĕн сивви, çăвăн ăшши сипетлĕ;

П. хĕле кĕрсен; çăва тухсан;

В. кашни хĕлте; хăш-хăш çурта;

Т. çур хĕлтен çуркуннеччен; çуран çăва тухиччен;

П. хĕлпе çăва, çупа хĕле танлаштараймăн;

Ç. хĕлсĕр таврăнмасть; çусăр килеймест;

П. хĕлшĕн, çушăн ĕç чарăнмасть.

Вĕсем нумайлă хисепре те пулаççĕ, туллин вĕçленеççĕ: Атăл пăрĕ ларнă чух ăçта хĕл хĕллĕн=ши хĕлсене? /А. ХУII, I7/.

Хĕл, çу сăмахсем мăшăрланса тĕрлĕ аффикссем йышăнма пултараççĕ:

Хĕлĕн=çăвĕн - мĕнлелĕх форми;

Хĕлĕ=çăвĕпе - 3-мĕш сăпат форми пĕрлелĕх падежĕнче:

Хĕлĕ=çăвĕ - 3-мĕш сăпат форми: Вĕсем хĕлĕ=çăвĕ ĕçлеççĕ /А. ХУII,I6/.

Чăваш чĕлхинче хĕл хĕлле текен сăмах çаврăнăшĕ пур: Чи-

пер=чипер кайăксем хĕл хĕлleme кайĕç /А. XУII , I7/, апла пулсан чĕлхере: çу çулла, кĕр кĕрле, çур çурла тенисем те пулмалла пек.

Чăваш чĕлхе наукинче хĕлĕпе, çăвĕпе йышши сăмахсене /эрнипе, сехечĕпе, вăхăчĕпе, тĕнчипе, ялĕпех/ наречи тесе пăхнă, =и=пе, =ĕ=пе аффикссем пĕрлешсе ларса =ипе,=ĕпе наречи тăвакан аффикс пулса тăнă имĕш, çавна май япала ячĕн конкретлăхĕ çухалать иккен.[8] Пирĕн шутпа, кунта =и,=ĕ аффикссем камăнлăха тÿрремĕн кăтартмаççĕ /вырăсла ăна косвенная принадлежность теççĕ/, анчах вĕсем хăйсен функцине çухатмаççĕ. Хĕлĕпе, çăвĕпе сăмахсене наречи тесен хĕлĕсĕр, çăвĕсĕр кÿлепесене те наречи теме лекет.

Хĕлле, çулла сăмахсене вара тĕпчевçĕсем пĕр иккĕленмесĕрех наречисен шутне кĕртеççĕ, апла пулсан, вĕсене улшăнман сăмахсен ретĕнче пăхаççĕ. Тĕрĕсех=ши ку?

Н.И.Ашмарин словарĕнчи хĕлле, çулла словарь статйисене вуласанах ку шухăш тĕрĕс марри курăнать. Тутарсем унта выртма, çитерме килеççĕ çулласенче /А. XII, 223/ предложенири çулласенче сăмах нумайлă хисепре вырăн падежĕнче, апла пулсан.эпир ирĕккĕнех хĕллесенче сăмахпата усă курма пултаратпăр: Хĕллесенче ларма ларнă чух хутăр хутăраттăмăрччĕ.

Словарьте Н.И.Ашмарин хĕлле, çулла сăмахсен çак падеж формисене панă:

К. Тата хĕллен те, çулан /çуллан/ та хăйсенĕн ăрасна тĕсли пит нумай /XУII,I9/.

П. Хĕллене кĕриччен пур хваттер те хатĕр пулать /А. XУII, I9/. Çулана киле кайса килсессĕн /А. XII,223 /.

В. Çулласенче, хĕллесенче - нумайлă хисепре вырăн падежĕнче, пĕрреллĕ хисепри вырăн падежĕнчи тĕслĕхсем словарьте çук.

Т. Хĕллерен вара, çулларан пуçласа.

Ç. Тирĕслĕке хĕллесĕр турттарма юрамасть /А. XУII,I9/.

П. Хĕллешĕн /на зиму/ хатĕрлесе хучĕç /А. XУII,I9/.

Чăнах та, хĕлле, çулла сăмахсене сăпат аффиксĕсемпе усă курнин тĕслĕхĕсене эпир тупаймарăмăр.

Камăнлăх=сăпат категорийĕ япала ячĕсене хăйне евĕрлĕ категори шутланать. Çыннăн пулма пултарайман япалана пĕлтерекен

---

[8] Павлов И.П. У-УI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. I02 с.

хăш=пĕр сăмахсем сăпат аффиксĕсене йышăнаймаççĕ. Апла пулсан, енчен те сăмах нумайлă хисепре пулать пулсан, туллин вĕçленсен япалана пĕлтерекен сăмахсене япала ячĕсемех теме лекет.

3-мĕш сăпат аффиксĕн функцийĕсем анлăрах пулнипе ăна эпир хĕлĕ, çăвĕ, кĕркунни сăмах формисенче куртăмăр.

## 3 §. Вăхăта палăртакан ир, каç сăмахсен улшăнăвĕ

Н.И.Ашмарин час=часах тĕл пулакан наречисен списокне ир, ирхĕне /ирхине/; каç, каçхĕне /каçхине/ сăмахсене тата сăмах формисене кĕртнĕ[9]. Шкул учебникĕсенче иртенпе форма вăхăт наречийĕ пулнине палăртнă, анчах ир, каç наречи пулнине асăнман[10]. Л.П.Сергеев ирхине, каçхине кÿлепесене наречисем пулнине палăртать[11], ир, каç сăмахсем наречи пулнине кăтартмасть. Ку сăмахсем хăш пуплев пайне кĕнине пĕлес тесен, паллах, вĕсен улшăнăвне сăнамалла.

Ир, каç сăмахсем нумайлă хисепре пулни пирки иккĕленме кирлĕ мар: кунсем, çулсем тенĕ пекех эпир ирсем, каçсем теме пултаратпăр. Шăпчăк юрриллĕ каçсем. Сывлăм ÿкнĕ ирсем. Çав каçсенче эпĕ юлташсемпе выллярăм /А. УI,I44/.

Н.И.Ашмарин словарĕнчи тĕслĕхсене тишкерсен, Гуманитари наукисен институтĕн тĕп картотекинчи тĕслĕхсене пăхса тухсан çакă паллă пулчĕ: ку сăмахсен вырăн падеж формине усă курнă тĕслĕхсем тĕл пулсах каймаççĕ:

Т. Каç пулчĕ. Çуркунне ир килчĕ.

К. Çуллахи ирĕн хăйĕн илемлĕхĕ пур.

Каçăн илемĕ шăпчăкпа килет.

П. Иртен ире кĕтнĕрен пиçнĕ яшкăр сивĕннĕ иккен /А. III, I30/.

Ирех тăтăм, каçа юлтăм /А. УI,I40/.

В. Ирте? Каçра?

Т. Иртен ирех: Ăслăлăхлă çынна курсассăн ун патне иртен ирех çÿре /А. III, I30/. Пăттине каçран чÿклеççĕ /А. УI, I44/.

П. Паян ирпе сывлăм ÿкнĕччĕ /А. III, I30/.

Каçпа ĕçличчен кун çутипе ĕçлес /А. УI, I44/.

---

[9] Ашмарин Н.И. Материалы ... С. 235.

[10] Павлов И.П., Игнатьева Э.И. Чăваш чĕлхи: Морфологи: 5-6 классем валли. Шупашкар, I983. I83 с.

[11] Сергеев Л.П., Котлеев В.И. Чăваш чĕлхи. 34I с.

Ç. Вĕсем ирсĕр килес çук /А. III, 130/. Ыран каçсăр килмеççĕ=тĕр=ха /А. УI, 144/.

П. Иршĕн, каçшăн, кăнтăрлашăн
Ĕç ан тăтăр янаваршăн /Фольк./.

Ир, каç сăмахсем 3-мĕш сăпат формине ирĕккĕнех йышăнаççĕ: уяв каçĕ, пуласлăхăн ирĕ. Анчах та I, 2-мĕш сăпат формисем хутран=ситрен поэзи чĕлхинче кăна тĕл пулаççĕ.

Ир, каç сăмахсен категори тулашĕнче тăракан формисене çаксене палăртма пулать:

а/ каçала, каçалла – сулăну форми: Ĕçе=ĕçе каçалла ӳсĕр чăваш ывăнать /К.Ив./.

Анчах та ирелле форма вырăнне чăваш чĕлхинче ир еннелле сăмах майлашăвĕ çӳрет. Ир еннелле çывăрнă çав /А. III, 129/.

Унсăр пуçне чĕлхере каçаланалла /каçаланала/ кӳлепе те пур: Вара каçаланала кайсан пурте килелле саланчĕç /А. УI, 142/. Каçаланалла тенинче =а/лла/=/е/лле/ аффикса икĕ хут усă курнă: каç=а=ла/н/=а=лла. Тĕрĕссипе, кунта пару падеж форми çумне =ла/=лла/ аффикс хушăнать.

Н.И.Ашмарин словарĕнче сулăну форми палăрту кӳлепин =хи аффиксне йышăннин тĕслĕхне панă: Каçаллахи вăйăсенче /А. УI, 142/;

ă/ каçлăх – çителĕклĕх форми: Пĕр каçлăха юрĕ /А. УI, 143/;

б/ каçсерен, ирсерен – тăтăшлăх форми : Каçсерен çынсем патне кая=кая лартăм /А. УI 144/.

в/ Каçхи, ирхи – палăрту форми: Каçхи сăмах çине чăхă сысать теççĕ /Хал. сăм./. Тарăн çырма тăрăх хурлăхан, ирхи сывлăм шывĕпе ӳсет=çке, ирхи тăмпа çулçи сарăхать=çке /А. III, 130/.

Ирхи сăмах формин улшăнăвĕнче çакăн пек кӳлепесем пур: ирхине, ирхинери, ирхинеччен, ирхинехи;

каçхи: каçхине, каçхинесем /А. УI, 146/.

г/ каçчен, ирччен – тăсăмлăх форми: ирччен хулена çитмелле; Н.И.Ашмарин словарĕнче каçчентерех кӳлепе те пур: Ĕнер пасарта эпир каçчентерехех /кунта тăсăмлăх форми çумне танлаштару формин =терех аффикс хушăннă/ çӳрерĕмĕр /А. УI, 145/.

д/ иртерех, каçарах – танлаштару форми; словарьте иртерекхĕн кӳлепе те пур, анчах та ун пек чухне автор шухăшĕпе вăхăт пĕлтерĕшĕ вăйланать: Хăш чухне иртереххĕн, хăш чухне каçраххăн тăваççĕ /А. III, 130/.

е/ ирлесе, ирлесепе: Ирлесепе эпĕ вăрмана тухса кайрăм /А. III, 130/.

Унсăр пуçне ир, каç сăмахсене икĕ хут каланă чух улăштарма пулать: ир=ир: ир=ирех – вăйлату форми; иртен=ирех, иртен=ире /А. III,130/. Мăшăрланнă каç=ир сăмах та тĕрлĕрен улшăнма пултарать:

1/ ирлĕ=каçлă – пурлă форма: Сурпан çакрăм пăтана, ирлĕ=каçлă пит шăлма /А. III,130/;

2/ ирлĕн=каçлăн – пурлă + мĕнлелĕх формисем: Пан улми пах – чине сат ятăм, ирлĕн=каçлăн шăварса ÿстертĕм /А. III,130/;

3/ ирĕн=каçăн – мĕнлелĕх форми.

Унсăр пуçне Н.И.Ашмарин ир, каç сăмахсен хăш=пĕр падеж формисем улшăннине кăтартнă: каçпа – каçпасенче, каçпаларах; каç=се=н=че.

Пăхса тухнă тĕслĕхсене сăнасан, ир, каç сăмахсем сăмах та-та сăмах формин улшăнăвĕнче те пулнине тĕсесен, ку сăмахсем улшăнмаççĕ тесе калама пултараймастпăр, çавна май вĕсен япала ячĕн морфологи паллисем çителĕклех.

Ку таранччен сăмах формин улшăнăвне хисепе хуманнипе наречисен хисепне виçесĕр пысăклатма тăрăшнă, çавна май эпир пăхса тухакан ир, каç сăмахсен формисем те наречисен шутне кĕрсе ларнă. Асăрхăр: ирхине, каçхине, иртенпе, каçранпа формăсенче япала ятĕнчи наречи тăвакан деривации /сăмах тăвакан/ аффикссем çук, апла пулсан вĕсем япала ячĕн тĕрлĕ кÿлеписем кăна, наречисем мар.

Тухупа пĕрлелĕх падеж аффиксĕсене пĕр харăс йышăнакан япала ячĕсене те ачаранпа, уйăхранпа, эрнеренпе, иртенпе, каçранпа, ĕмĕртенпе наречи теме май çук, мĕншĕн тесен ку сăмах формисенче сăмах /наречи/ тăвакан аффикссем пачах çук. Апла пулсан, пĕчĕкренпе, çамрăкранпа, нумайранпа паллă ячĕн падеж формисене наречисен ретĕнчен кăларма лекет.

Ку çул çине тăрас пулсан иртнĕ пайташ кÿлепи çумне хушăнакан курнă=ран=па, килнĕ=рен=пе, вуланă=ран=па формăсене те наречи теме лекет. Анчах та темĕншĕн=çке вĕсене ку таранччен нихăш тĕпчевçĕ те наречи пулнине ĕнентермен. Л.П.Сергеев иртнĕ причасти формисенче туху падеж аффиксĕ пĕрлелĕх падеж аффиксне йышăнма пултарнине палăртать: ĕçленĕренпе, çитнĕренпе, кайнăранпа, килнĕренпе. Автор шухăшĕпе, ку форма калаçура та, илемлĕ литература произведенийĕсенче те чылай тĕл пулать. Предложенире яланах сăпатлă глагол формипе çыхăнать, вăл кăтартакан ĕçĕн вăхăтне пĕлтерет[12].

[12] Сергеев Л.П., Котлеев В.И. Чăваш чĕлхи. 325 с.

## 4§. Икӗ хут каланӑ сӑмахсен /япала ячӗсен/ улшӑнӑвӗ

И.П.Павлов тӗпчевҫӗ сӑнанӑ тӑрӑх, икӗ хут каланӑ сӑмахсене виҫӗ ушкӑна пайлама пулать: пӗрремӗш ушкӑна кӗрекен икӗ хут каланӑ сӑмахсен компонечӗсем иккӗшӗ те тӗп /пуҫламӑш/ формӑра пулаҫҫӗ. Вӗсем фонетика тӗлӗшӗнчен те, морфологи тӗлӗшӗнчен те улшӑнмаҫҫӗ: Ӗнер кӑна-хя тӳпере татӑк-татӑк пӗлӗтсем шӑватчӗҫ /Бурн., Телей/. Анаталла та тӑвалла Атӑлпа хуҫасем кимӗ-кимӗ тулли тавар, ыраш, ҫӗлӗ, урпа турттарнӑ /Тӑхти, Шкул, кӗнеке, хаҫат/[13]. Иккӗмӗш ушкӑнри икӗ хут каланӑ сӑмахсен иккӗмӗш компоненчӗсем фонетика тӗлӗшӗнчен улшӑннине палӑртать автор, анчах та морфологи тӗлӗшӗнчен улшӑнни пирки шарламасть: тир-тӗр, чухӑн-чахӑн, карчӑк-кӑрчӑк, хырҫӑ-марҫӑ, йӑла-пӑла т.ыт.те. Кун пек чухне тӗрлӗрен аффикссем ытларах чух иккӗмӗш компонент ҫумне хушӑннине сӑнама пулать: карчӑк-кӑрчӑкпа, карчӑк-кӑрчӑксем т.ыт.те. Виҫҫӗмӗш ушкӑна кӗрекен икӗ хут каланӑ сӑмахсен икӗ компоненчӗ те а/ пӗр пек аффикссем йышӑнаҫҫӗ. Чашки-чашки сарӑ мӑйӑр Кампа ларса ҫиеммши? /Фольк./. Катки-катки пылпа ҫу /Тӑхти/; ӑ/ расна аффикссем йышӑнаҫҫӗ: хыҫа-хыҫӑн, ҫума-ҫумӑн т.ыт. те.

Ял-ял витӗр тухрӑмӑр,
Хир-хир урлӑ каҫрӑмӑр /Фольк./

сӑвӑ йӗркисенчи ял-ял, хир-хир сӑмахсен улшӑнӑвӗ ытлӑх палӑрсах каймасть пек. Анчах та хушӑран ял-ял сӑмахӑн иккӗмӗш компоненчӗ тӗрлӗ аффикссем йышӑнма пултарать: ял-ялах - вӑйлату форминче: Ял-ялӗнче вырма тухнӑ та ӗнтӗ /Арт. Алтӑр ҫӑлтӑр/, кунта ял-ялӗнче сӑмах 3-мӗш сӑпатра, вырӑн падежӗнче. Н.И.Ашмарин словарӗнче ҫакӑн пек кӳлепесене панӑ:

ялӑн-ялӑн - япала ячӗн мӗнлелӗх кӳлепи;

ялӗ-ялӗпе е ял-ялӗпе - 3-мӗш сӑпат форми пӗрлелӗх падежӗнче;

ял-ялӗнчи - икӗ хут каланӑ япала ячӗн иккӗмӗш компоненчӗ

---

13 Павлов И.П. Хальхи чӑваш литература чӗлхи. 44 с.

3-мěш сăпатра, вырăн падежěнче, палăрту форминче.

Хăш=пěр икě хут каланă сăмахсен пěрремěш пайě кăна улшăнать: вěçе-вěç, хула=хул.

5 §. Мăшăр япала ячěсен улшăнăвě

Чěлхеçěсем каланă тăрăх хальхи чěлхере сăмаха улăштаракан аффикссем ытларах чух мăшăр сăмахсен иккěмěш пайěсем çумне хушăнаççě:

Тух уй=хире - унта тем чухлě пурлăх,
Чун=чěрене тăрать савăнтарса /А.Галкин/.

Фольклор произведенийěсенче тата поэзире мăшăр сăмахсен икě пайě те сăмаха улăштаракан пěр пек аффикссем йышăнма пултарать:

Ял=йышăм сала пек
Мěнле тухса каям=ши? / Салтак юрри/.
Суралнă çěрне=шывне асран ями юратакан çын ěмěртен хисеплě /Алка/.

Икě хут каланă сăмахсенчи пек кунта икě компоненчě расна аффикссем йышăннин тěслěхěсем çук, çавăн пекех пěрремěш компоненчě аффикс йышăнса, тепри сăмаха улăштаракан аффикссăр тăнин тěслěхěсем те тěл пулмаççě. Ку правилăна иккěмěш компоненчě тěксěмленнě мăшăр япала ячěсем те пăхăнаççě: хуйхă=суйхă, ача=пăча, йытă=качка, кÿрěш=кěп, аш=пăш, савăт=сапа, йěпе=сапа.

Мăшăр сăмахсен компоненчěсем пěр=пěриншěн е синонимсем, е антонимсем, е пěр йышши ăнлава пěлтерекен сăмахсем пулма кирлě. И.П.Павлов каланă тăрăх, мăшăр сăмах тунă чух ăна семантика тěлěшěнчен çак асăннă виçě ушкăнтан пěрне те пулин пăхăнтармасан, мăшăр сăмах пулмасть[14]. Çакна шута илсен, мěн компонентлă мăшăр сăмах тесе сěннě çыхăнусене мăшăр сăмах вырăнне йышăнма май килмест: чăматанě мěнěпех, лавпа мěнпе, мулне мěнне йышши çыхăнусене дефиспа мар, уйрăм çырма лекет.

6 §. Япала ячěсем улшăнманнин сăлтавěсем

Уйрăммăн илнě кирек мěнле япала ячě те падеж, хисеп тăрăх улшăнать. Улшăнман япала ячěсене эпир сăмах майлашăвěсенче тěл пулатпăр. Икě япала ячě юнашар тăнă чух пěр=пěринпе изафет I

[14] Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чěлхи. 4I с.

çыхăнăвĕнче пулма пултараççĕ. Ун пек чух определени пулаканни / у.к. пĕрремĕш вырăнта тăраканни/ япалана мĕнле материалтан тунине палăртса пачах та улшăнмасть: чул çурт, йывăç кĕреçе, ылтăн сехет, сăран атă:

| | |
|---|---|
| Т. чул çурт | сăран атă |
| К. чул çуртăн | сăран аттăн |
| П. чул çурта | сăран атта |
| В. чул çуртра | сăран атăра |
| Т. чул çуртран | сăран атăран |
| П. чул çуртпа | сăран атăпа |
| Ç. чул çуртсăр | сăран атăсăр |
| П. чул çуртшăн | сăран атăшăн |

Нумайлă хисепĕн =сем аффиксĕ иккĕмĕш компонент çумне кăна хушăнать: чул çуртсем, йывăç кĕреçесем, ылтăн сехетсем, сăран атăсем.

Камăнлăх=сăпат категорийĕн аффиксĕсене те иккĕмĕш вырăнта тăракан япала ячĕсем кăна йышăнаççĕ: чул çуртăм, чул çурту, чул çурчĕ, чул çуртăмăр, чул çуртăр.

Çавнах эпир: I/ япалан тĕсне палăртакан сăмах майлашăвĕсенче те куратпăр: юман йывăç, çăрттан пулă, лантăш чечек;
2/ несĕллĕхе е амалăх=арлăха палăртакан сăмах майлашăвĕсенче: майра патша, хĕр паттăр, ама хур, Иван мучи, Анна аппа, Кĕтерин инке;
3/ çын мĕн ĕçпе пурăннине палăртакан сăмах майлашăвĕсенче: Макçăм кĕтÿç, юрăçă старик, Хусанкай поэт, Ехрем хуçа;
4/ этем хăш наци çынни пулнине палăртнă чух: Иван чăваш, Вано эрмен, Ваня вырăс;
5/ япалан виçине, вăрăмăшне палăртакан сăмах майлашăвĕсенче: пăт çăнăх, пĕр аршăн пир, витре сăра, черкке эрех.

Çирĕпленсе ларнă сăмах майлашăвĕсенче: хурçă шанчăк, ылтăн алă /пур ĕçе те пултаракан çын/, çĕр кăвапи.

Изафет II сăмах майлашăвĕсенчи вырăна, хула=яла, шыва т.ыт. те палăртакан пайăр ятсем те пачах улшăнмаççĕ: Шупашкар хули; Сăр шывĕ, Хурама варĕ, Хусанкай урамĕ.

Çыннăн хушамачĕпе ячĕ юнашар тăракан сăмах майлашăвĕсенче: Петров Иван, Сидоров Сергей; псевдонимсенче: Дапшу Стаппанĕ, Иван Мучи, Стихван Шавлы; пĕрремĕш вырăнта тăракан пайăр ят /антропоним/ пачах улшăнмасть.

# Я П А Л А  Я Ч Ĕ

## I. Улшăнакан япала ячĕсем

| | | |
|---|---|---|
| Хисеп, падеж тăрăх туллин улшăнакан япала ячĕсем | Иртнĕ вăхăтра тата вăйлату категорийĕнче пулакан сăмахсем | Тĕп тата камăнлăх вĕçленĕвĕсенче пулакан япала ячĕсем |

## II. Туллин улшăнман япала ячĕсем

| | | |
|---|---|---|
| 1. Пачах сăпатланман япала ячĕсем<br>3-мĕш сăпат аффиксне кăна йышăнакан япала ячĕсем<br>2. Нумайлă хисепри пĕрремĕш сăпатра пулман япала ячĕсем: пуç, кĕлетке, чĕре, ўпке | Вырăн падежĕнче пулман япала ячĕсем: çулла, хĕлле, ир, каç т.ыт.те | Нумайлă хисеп аффиксне йышăнсах кайман ют чĕлхерен кĕнĕ япала ячĕсем: адажио, сольфеджио |

## III. Пач улшăнман япала ячĕсем

| | |
|---|---|
| Ирĕклĕ сăмах çаврăнăшĕсенчи пĕррemĕш компонентсем: ылтăн сехет, кĕмĕл çĕрĕ, чул çурт, ыраш çăкри, ĕне майраки т.ыт.те | Фразеологизмсенчи пĕрремĕш компонентсем: тăм писмен /ухмах/, тимĕр пăрçа /хыт кукар/ т.ыт.те |

Тулли мар улшăну изафет III сăмах майлашăвĕсенче палăрать, кун пек чух пĕрремĕш вырăнти сăмах камăнлăх падеж аффиксне йышăнать, иккĕмĕшĕнчи - 3-мĕш сăпат аффиксне: хĕвелĕн çути / танл хĕвел çути/, чăвашăн чĕлхи /танл.:чăваш чĕлхи/, арманăн çунатти /танл. арман çуначĕ/.

Изафет III сăмах майлашăвĕнчи 3-мĕш сăпат аффиксне йышăннă иккĕмĕш компонент тулин вĕçленет, вăлах =сем нумайлă хисеп аффиксне йышăнсан та пур падежра та пулать:

| | |
|---|---|
| Т. шкулăн çурчĕ | шкулăн çурчĕсем |
| К. шкулăн çурчĕн | шкулăн çурчĕсен |
| П. шкулăн çуртне | шкулăн çурчĕсене |
| В. шкулăн çуртĕнче | шкулăн çурчĕсенче |
| Т. шкулăн çуртĕнчен | шкулăн çурчĕсенчен |
| П. шкулăн çурчĕпе | шкулăн çурчĕсемпе |
| Ç шкулăн çурчĕсĕр | шкулăн çурчĕсемсĕр |
| П. шкулăн çурчĕшĕн | шкулăн çурчĕсемшĕн |

## ИККĔМĔШ ПАЙ . ПАЛЛĂ ЯЧĔ

### Пĕтĕмĕшле ăнлантарни

Паллă ячĕ тесе япалан, ĕçĕн, паллăн паллисене пĕлтерсе. танлаштару, палăрту, мĕнлелĕх категорийĕсенче пулакан сăмахсене каламалла.

Малтанах паллă ячĕн палăртăмне /дефиницине/ çапларах анчах паратчĕç:"Япала паллине пĕлтерекен сăмахсене паллă ячĕсем теççĕ"[I]. Кун пек калани шкул учебникĕсенче халĕ те хуçаланать. Çакăн пек кăна палăртни глагола ăнлантаракан паллă ятне наречи теме май панă: Лайăх ача тенĕ чух лайăх - паллă ячĕ, лайăх вĕренет тенĕ чух лайăх - наречи. Юлашки çулсенче чăваш чĕлхине тĕпчекенсем ку шухăшран хăтăлчĕç тесен те юрать, вĕсем "паллă ячĕсем ĕç мĕнлелĕхне /ĕç паллине/ кăтартма пултараççĕ" текен шухăш патне çитрĕç[2]. "Çапла вара, паллă ячĕ глагола ăнлантарнă чух /обстоятельство функцине тунă чух/ наречие куçмасть" - тени тĕрĕсе килчĕ[3]. Çак шухăша шута илнипе Л.П.Сергеев паллă ячĕн палăртăмне çапларах парать: "Япала е ĕç паллине пĕлтерекен пуплев пайне паллă ячĕ теççĕ"[4].

Сăмахне калану пулин те, тĕпчевçĕсем ĕçне тума васкамаççĕха. Асăрхăр: "=сăр/=сĕр/ аффикс хушăнса пулнă паллă ячĕ япала ятне /кăна! - В.С./ ăнлантарать"; "Падеж аффиксĕ пулакан =сăр/ =сĕр/ аффиксăн хăйĕн паллисем пур. Ку аффикс хушăннă чух япала ячĕ глаголпа çеç çыхăнса тăрать"[5].

Ку таранччен вĕренӳ кĕнекисенче "паллă ячĕсен нихăçан та определенийĕсем пулмаççĕ"[6]текен шухăш хуçаланнă пирки паллă

---

[I]Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, I965. I45 с.

[2]Павлов И.П. Морфологие çĕнĕ программăпа вĕрентесси. Шупашкар, I98I. 37 с.; Унăнах. У-УI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, I985. 37 с.

[3]Çавăнтах. 39 с.

[4]Сергеев Л.П., Котлеев В.И.Чăваш чĕлхи. Шупашкар, I993. 255 с.

[5]Павлов И.П. У-УI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, I985. 27 с.

[6]Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. I45 с.

ячĕ паллăн паллине кăтартма пултарнине калама май килмен. Анчах та чĕлхе факчĕсем ку шухăша та сивлеме май параççĕ: шупка кĕрен, тĕксĕм симĕс, чуптар турă, чуптар çӳрен, çутă сарă тĕслĕхсенчи определени пулакан паллăн паллине пĕлтереççĕ. Ку тĕслĕхсенче определени пулакан паллă ячĕсем танлаштару категорийĕнче тăма пултараççĕ: шупкарах кĕрен, чуптартарах çӳрен /масть/, чуптартарах турă /А. ХУ 246/.

Тĕпчев ĕçĕсенче паллăн паллине палăртса определени пулакан хура симĕс, çутă хĕрлĕ, йĕпкĕн хура сăмах майлашăвĕсем çинчен кĕскен асăнса иртни пур[7].

Паллă ячĕсен нихăçан та определенийĕсем пулмаççĕ текен шухăш тĕпчевçĕсене

Пĕри хуп=хура хĕреслĕ,
Тепри хĕрлĕ çăлтăрлă /Хус./

йĕркесенчи хĕреслĕ, çăлтăрлă сăмахсем паллă ячĕсем пулмаççĕ текен шухăш патне çитермелле пулнă, анчах та фактсен çăралăхĕнче тĕрĕс çул тупайманнипе хуп=хура хĕреслĕ, хĕрлĕ çăлтăрлă сăмах майлашăвĕсем кӳпки=çапкипех паллă ятне тухса кайнă /вĕсече паллă пулнине палăртса сикчевлĕхпе / вразрядку!/ панă[8].

Ку таранччен шкул учебникĕсенче те, аслă шкул программисенче те "япала ячĕ умĕнче тăракан паллă ячĕ улшăнмасть" текен çирĕплетӳ тăрать. Ку шухăш пачах та тĕрĕс маррине калама тахçанах вăхăт çитнĕ: хитре хĕр, анчах та хитререх хĕр теме те пулать; вăрăм каччă, анчах вăрăмрах каччă та пулма пултарать. Апла пулсан, кунта паллă ячĕ падеж, сăпат, хисеп тăрăх улшăннине сăнамалла мар, вăл танлаштару категорийĕн /паллă ятне кăна тивĕçлĕ/ =рах/=рех/ аффиксне йышăнса улшăнма пултарнине тишкермелле.

Япала ячĕпе паллă ячĕ-хăйне уйрăм пуплев пайĕсем, çавна май вĕсен тĕп категорийĕсем те расна пулмалла: япала ячĕн падеж, сăпат, хисеп категорийĕсем - тĕп категорийĕсем, паллă ячĕн - танлаштару, палăрту, мĕнлелĕх категорийĕсем.

Енчен те эпир танлаштару, палăрту тата мĕнлелĕх категори-

---

[7] Алексеев А.А. Именные определительные словосочетания в современном чувашском языке // Чувашский язык, литература и фольклор. Чебоксары, 1972. Вып.I. С.273.

[8] Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 160 с.

йӗсенче пулакан сӑмахсене паллӑ ячӗ тетпӗр пулсан, ҫав категорисен формисене йышӑнман, уйрӑмах танлаштару категорийӗсенче пулман сӑмахсене эпир паллӑ ячӗ теейместпӗр. Сӑмахран, ылтӑн сехет, анчах ылтӑнрах сехет тени чӗлхере ҫук, апла пулсан, ылтӑн сӑмах кунта паллӑ ячӗ мар - япала ячӗ: утма ҫул, анчах утмарах ҫул теместпӗр, апла пулсан, утма сӑмах паллӑ ячӗ мар - инфинитив; шӑлтӑр-шӑлтӑр урапа, анчах шӑлтӑр=шӑлтӑртарах урапа пулмасть, апла пулсан, шӑлтӑр=шӑлтӑр - еверлев сӑмахӗ.

## I §. Тулли улшӑнакан паллӑ ячӗсем

Ку ӗҫре те чӑваш чӗлхинче /ытти тӗрӗк чӗлхисенче те/ сыхӑну паллӑ ячӗсем ҫук текен шухӑша тӗпе хунӑ[9]. Мӗншӗнни каламасӑрах паллӑ, сыхӑну паллӑ ячӗ вырӑнне ҫӳрекен сӑмахсен кӳлеписем танлаштару категорийӗнче пулаймаҫҫӗ. Мӗнлелӗх паллӑ ячӗсем текеннисем вара танлаштару, палӑрту, мӗнлелӗх категорийӗсен аффиксне йышӑнаҫҫӗ. Тулли улшӑнакан паллӑ ячӗсен шутне ҫаксене кӗртмелле: а/ тӗсе палӑртаканнисене:

сарӑ: сарӑрах - танлаштару категорийӗнче;
сарри: сарӑскер - палӑрту категорийӗнче;
саррӑн /курӑнать/ - мӗнлелӗх категорийӗнче;

кӗрен - кӗренрех; кӗренни, кӗренскер; кӗреннӗн; симӗс - симӗсрех; симӗсси, симӗсскер; симӗссӗн /ҫун/; ешӗл - ешӗлтеререх; ешӗлли, ешӗлскер; ешӗллӗн /сарӑлса ларать/ т.ыт.те. ӑ/ виҫе пӗлтерӗшлисене: йывӑр - йывӑртарах; йывӑрри, йывӑрскер, йывӑррӑн; вӑрӑм - вӑрӑмрах; вӑрӑмми, вӑрӑмскер; вӑрӑммӑн; пӗчӗк-пӗчӗкрех; пӗчӗкки, пӗчӗкскер; пӗчӗккӗн; б/ сынсен кӑмӑл=туйӑм пахалӑхне палӑртаканнисем: хаяр - хаяртарах: хаярри, хаярскер; хаяррӑн; чее - чеерех; чеескер; чеен; в/ этемӗн ҫитменлӗхӗсене пӗлтерекеннисем: сӳрӗк -сӳрӗкрех; сӳрӗкки, сӳрӗкскер; сӳрӗккӗн; имшер - имшертерех; имшерри, имшерскер; имшеррӗн; г/япалана пӗтӗмӗшле хак параканнисем: ҫӗнӗ - ҫӗнӗрех: ҫӗнни, ҫӗнӗскер; ҫӗнӗн; лайӑх - лайӑхрах; лайӑххи, лайӑхскер, лайӑххӑн; чӗрӗ - чӗрӗрех; чӗрӗскер; чӗррӗн; д/ япалана кӳлепи тӗлӗшӗнчен хаклаканнисем: хулӑн - хулӑнрах; хулӑнни, хулӑнскер; хулӑннӑн;

[9] Сергеев В.И. Хальхи чӑваш чӗлхи: Морфологи: Вӗренӳ кӗнеки . Шупашкар, 1992. 48 с.

сарлака - сарлакарах; сарлаки, сарлакаскер; сарлакан; е/ вырьăх=чĕрлĕх тĕсне палăртаканнисем: ула - уларах; ули, уласкер, улан /курăн/;

Иккĕмĕшле мĕнлелĕх паллă ячĕсенчен чылайăшĕ туллин улшăнать:

I/ глагол тĕпĕсем çумне =кăн/=кĕн/ аффикс хушăнса пулнă тиркев пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем: çăткăн - çăткăнрах; çăткăнни, çăткăнскер; çăткăннăн /çи/; вĕçкĕн - вĕçкĕнрех, вĕçкĕнни, вĕçкĕннĕн /тыткала/;

2/ =ăк/=ĕк/ аффикслă ĕçĕн результатне кăтартакан пахалăхлă паллă ячĕсем: çĕрĕк - çĕрĕкрех; çĕрĕкки, çĕрĕкскер; çĕрĕккĕн; хăрăк - хăрăкрах, хăрăкки, хăрăкскер; хăрăккăн /ларать/;

3/ =ти аффиксла евĕрлев сăмахĕсем çумне хушăнса пулнă паллă ячĕсем: йăпăлти - йăпăлтирех; йăпăлтискер; йăпăлтин /тыткала/;

4/ =ка/=ке/ аффиксла паллă ячĕсем : çаврака - çавракарах, çавраки, çавракаскер, çавракан; айванкка - айванккарах, айванккаскер; айванккан /пăхкала/;

5/ =амас/=емес/ аффиксла вăйлă пахалăха кăтартакан паллă ячĕсем: тачкамас - тачкамасрах; тачкамасскер; тачкамассăн /курăн/;

6/ =ак/=ек/ аффиксла паллă ячĕсем: йўçек - йўçекрех; йўçекки, йўçекскер: йўçеккĕн;

7/ =лак/=лек/ : пăрлак - пăрлакрах; пăрлакскер; пăрлаккăн /туйăнать/;

8/ =мак/=мек/: чармак - чармакрах; чармакскер; чармаккăн /ўсет/;

9/ =кă/=кĕ/: хĕрĕнкĕ - хĕрĕнкĕрех; хĕрĕнки, хĕрĕнкĕскер; хĕрĕнкĕн /курăн/;

10/ =тай/=тей/ : çăмăлттай; çăмăлттайскер; çăмăлттаййăн /тыткала/;

11/ =чăк/=чĕк/: именчĕк - именчĕкрех; именчĕкки, именчĕкскер; именчĕккĕн /тыткала/;

12/ =ăç/=ĕç/: пăрăнăç - пăрăнăçрах, пăрăнăçскер, анчах пăрăнăççăн/?/ тени чĕлхере тĕл пулсах каймасть.

## 2 §. Тулли улшӑнман паллӑ ячӗсем

Енчен те пӗлтерӗш ушкӑнӗнче пӗр=пӗр паллӑ ячӗ япала ячӗ умӗнче тӑнӑ чухне хӑйӗн валентноҫне кура танлаштару категорийӗнче пулмасан та, ун пек сӑмаха паллӑ ячӗ тесех шутламалла. Тӗслӗхрен, вӑтам шкул тенӗ чухне эпир вӑтамрах шкул теместпӗр пулин те вӑтам сӑмах паллӑ ячех шутӑланать, мӗншӗн тесен вӑтам ҫын - вӑтамрах ҫын; вӑтам пурнӑҫ - вӑтамрах пурнӑҫ пулать. Вӑтам шкул тени ҫирӗпленсе ларнӑ сӑмах майлашӑвӗ евӗр туйӑнать. Вӑтам сӑмах уйрӑммӑн тӑнӑ чухне палӑрту категорийӗнче пулать: вӑтамми, вӑтамскер. Н.И.Ашмарин словарӗнче вӑтамӑн "в среднем" /тӗрӗсрех: вӑтаммӑн пулмалла/ кӳлепе пур: Вӑтамӑн илсен ҫулталӑкра 4 учитель улшӑнса пынӑ /А. У,334/.

Пахалӑха вӑйлӑ палӑртакан =амас/=емес/ аффикслӑ паллӑ ячӗсем хушшинче ҫарамас сӑмах пур, анчах та пурнӑҫ чӑнлӑхӗ пире ҫарамасрах ҫын теме ирӗк памасть, мӗншӗн тесен ҫарамас ҫынна урӑх татах ҫарамаслантарма ҫук, ҫавӑнпа та танлаштарма та май килмест. Анчах та =амас/=емес/ аффикспа пулнӑ сӑмахсем чылайӑшӗ танлаштару категорийӗн аффиксне йышӑнаҫҫӗ: ҫӑмламасрах ура; хӗремесрех ҫын; тӗклемесрех чӗпӗ т.ыт.те; ҫавна шута илсе тата ҫарамас сӑмах палӑрту категорийӗпе /ҫарамасскер/, ыйӗнлелӗх категорийӗсенче пулнине тӗсесе: ҫарамас - ҫарамассӑн - ҫарамаҫҫӑн: Ӳр ҫинче ҫармасӑн йӑваланма юрамасть /А. XII,61/, ҫарамас сӑмаха паллӑ ячӗ тетпӗр.

Паллӑ ячӗ субстантиваци йӗркипе /хӑшӗсем ӑна конверсие пула теҫҫӗ/ япала ятне куҫнӑ чух танлаштару категорийӗн аффиксне хушӑран йышӑнаешӑнах мар: таркӑн салтак, ҫӑткӑн кайӑк - таркӑнрах салтак/?/, ҫӑткӑнрах кайӑк /?/ тени ҫук. Анчах та =кӑн/=кӗн/ аффикслӑ паллӑ ячӗсем ыттисем пурте тенӗ пекех танлаштару категорийӗнче пулаҫҫӗ: вӗҫкӗнрех хӗр, каскӑнрах выльӑх, чупкӑнрах йытӑ, шӑлкӑнрах кушак т.ыт. те.

Паллӑ ячӗсем пурте палӑрту категорийӗн =и,=скер аффиксӗсене йышӑнма пултараҫҫӗ. Анчах та вӗри, тулли паллӑ ячӗсем /и/ сасӑпа пӗтнӗ пирки =скер аффикса анчах йышӑнаҫҫӗ. Палӑрту категорийӗн аффиксӗсем паллӑ ячӗ уйрӑммӑн ҫӳренӗ чух кӑна хушӑнаҫҫӗ, сӑмах майлашӑвӗнче вӗсен ун пек ирӗк ҫук, эпир ватти ҫын, ҫамрӑкскер качча теместпӗр; =и,=скер аффиксcем хушӑннӑ паллӑ ячӗ-

сем хăйсем ялала ячĕленес сĕмлĕ: ватти, яшши, çамрăкки тесен пирĕн куç умне çынна хаклани тухса тăрать, ку сăмахсем вĕçленеççĕ, нумайлă хисепре пулаççĕ. Палăрту категорийĕнчи паллă ячĕсем сăмах формин улшăнăвĕнче туллин улшăнаççĕ. Анчах та сăмах улшăнăвĕнче паллă ячĕсем туллин вĕçленмеççĕ:

| | | |
|---|---|---|
| Т. пĕчĕк | вăйлă | илемлĕ |
| К. пĕчĕкĕн /?/ | вăйлăн /?/ | илемлĕн /?/ |
| П. пĕчĕке | вăйла /?/ | илемлĕне |
| В. пĕчĕкре /?/ | вăйлăра /?/ | илемлĕре /?/ |
| Т. пĕчĕкрен | вăйлăран | илемлĕрен |
| П. пĕчĕкпе | вăйлăпа | илемлĕпе/?/ |
| Ç. пĕчĕксĕр /?/ | вăйлăсăр /?/ | илемлĕсĕр /?/ |
| П. пĕчĕкшĕн | вăйлăшăн | илемлĕшĕн |

Нйту паллиллĕ /?/ падеж формисене чĕлхере усă курмаççĕ.

Япала ячĕленнĕ çамрăк, кахал, усал, ватă йышши сăмахсем туллин улшăнаççĕ, вĕçленеççĕ, нумайлă хисепре пулаççĕ. Ватă сăмах ватлăх сăмахпа пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен танлашса камăллăх=сăпат аффиксĕсене те йышăнать: Ваттăм çитрĕ=çке ĕнтĕ! Ватту çитнĕ /А. У,184/. Апла пулсан, ваттăмăр çитрĕ, ваттăр çитет теме те пулать.

Паллă ячĕсен мĕнлелĕх категорийĕ тĕп категорисен шутне кĕрет пулин те, вăл паллă ятне ытти пуплев пайĕсенчен уйăрса илмелли тĕп критери шутланмасть. Çитменнине тата хăш=пĕр паллă ячĕсем, танлаштару тата палăрту категорийĕсенче пулаканскерсем, мĕнлелĕх категорийĕн аффиксне йышăнсах та каймаççĕ. Тĕслĕхрен, тĕсе палăртакан паллă ячĕсем пурте =ăн/=ĕн, =н/ аффикс йышăнса мĕнлелĕх категорийĕнче пулаççĕ: хĕрлĕн, симĕссĕн, тĕксĕммĕн, хуран, кăваккăн, шупкан, шуррăн, кĕреннĕн; анчах та выльăх=чĕрлĕх тĕсне /вырăсла – масть/ палăртакан муптар, сăрă /сăрă кашкăр/, çӳрен /ут/ сăмахсем мĕнлелĕх категорийĕнче пулмаççĕ, çапла майпа, вĕсене тулли улшăнакан паллă ячĕсем теме май çук.

Асăрхаттару. Лаша тĕсне /масть лошади/ палăртакан тимĕр кăвак /ут/ "серый конь в яблоках" тенĕ чухне тимĕр – япала ячĕ, паллă ячĕ мар. Тимĕр кăвак лаша кӳлер=и, хӳрине çавăрса тӳлер=и /А. XIУ,44/. Çакăнтах Н.И.Ашмарин пĕтĕм сăмах майлашăвĕ япала ячĕн пĕлтерĕшпе çӳрени çинчен калать: Кĕтӳре тимĕр кăвак çук, йĕвен çĕклесе тухасси çук /44с/.

Вăйлă формăри хуп=хура, сип=симĕс паллă ячĕсем танлаштару

категорийĕнче пулмаççĕ, анчах та эпир хуп=хура, хуп=хураскер; сип=симĕсси, сип=симĕсскер теме пултаратпăр. Ç.Мишшин "Тинĕсе" сăввинче ку кÿлепесем мĕнлелĕх категорийĕн аффиксне те йышăннине курма пулать:

Вĕçсĕр=хĕрсĕр тинĕсĕм,
Хуп=хуран, сип=симĕсĕн ...
Хумлă кăпăкпа вĕре.

Кун евĕрлĕ тĕслĕхсене тата та тупма пулать: Пурпĕр сип=сиввĕн чуна тăрăнать Хурлăх куççулĕ, тар=юнлă асап /Алка/.

## 3 §. Паллă ячĕ улшăнманнин сăлтавĕсем. Паллă ячĕсене ытти пуплев пайĕнчи сăмахсемпе пăтраштарни

Çирĕпленсе ларнă сăмах майлашăвĕсенчи тÿрĕ пилĕк /кахал çын/, кукăр алă /вăрă/, шăтăк пуç, тăрă çын /ухмах/, тĕпсĕр хырăм /упшур/ паллă ячĕсем улшăнмаççĕ. Ирĕклĕ сăмах майлашăвĕсенче тÿрĕрех урам, кукăртарах ура теме пулать, анчах тÿрĕрех пилĕк, шăтăкрах пуç тенисем тĕл пулмаççĕ пулин те морфологи тишкерĕвĕнче определени пулакан сăмахсене паллă ячĕ тесех тишкерме тивет.

Икĕ хут каланă паллă ячĕсем хăйне тивĕçлĕ категори формисене пурне те йышăнмаççĕ: ăшă=ăшă тумăм; ăшă=ăшăрах туйăм тени çук; ăшă=ăшши теместпĕр, анчах та икĕ хут каланă ăшă=ăшă сăмах глаголпа çыхăнсан, мĕнлелĕх категорийĕнче пулать: ăшшăн=ăшшăн пăхрĕ, кулчĕ.

Анчах та уйрăммăн илнĕ ăшă лексема паллă ячĕ пулни вăл тулли улшăннинченех курăнать: ăшă кун - ăшăрах кун; ăшши, ăшăскер; ăшшăн кул. Паллах, япала ячĕн пĕлтерĕшне туянсан ăшă, сивĕ сăмахсем вĕçленме пултараççĕ, анчах та вĕсем камăнлăх падежĕнче пулнин тĕслĕхĕсем сахал: Сивĕн ури каталнă /Хал. сăм./.

Ку таранччен ют чĕлхерен йышăннă çак сăмахсене пустуй /сăмах/, самай /вăхăт пулчĕ/, ăрасна /çын, ĕç/ паллă ячĕ тенĕ[10]. Анчах та ку сăмахсем паллă ячĕн чи кирлĕ категорийĕсенче - танлаштару категорийĕнче - пуласшăн мар. Апла пулсан, вĕсече

[10]Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 146 с.

наречисем тесе шутласа япала ятне ăнлантарма пултарни çинчен каламалла.

Танлаштару, палăрту тата мĕнлелĕх категорийĕсен аффиксĕсене йышăнман =ма/=ме/ аффикслă инфинитив формисене тата =а/=е/ аффикслă деепричасти кӳлеписем те паллă ячĕ пулаймаççĕ:

а/ =ма/=ме/ : ахăрма çăвар, тайма пуç, шартлама сивĕ, утма çул, ларма хĕр;

ă/ =а/=е/ : юха сăмса, шăра кут, карма çăвар, тайăла пуç, сыса кут, ӳпне çăпан.

Ку сăмахсене фразеологи единицисем тесен те, вĕсене паллă ячĕ теме май çук, мĕншĕн тесен вĕсем, ирĕклĕ сăмах çаврăнăшĕсенче пулса, паллă ятне тивĕç категори кӳлеписене йышăнмаççĕ.

Чăваш чĕлхине тĕпчекенсем =лă/=лĕ/, =ллă/=ллĕ/ аффикс паллă ячĕ тăвакан аффикс кăна пулать тесе пысăк йăнăш тăваççĕ: ку аффикс чăваш чĕлхинче пур япала ячĕ çумне те хушăнма пултарать, апла пулсан, вăл сăмах тăвакан аффикс шайне лармасть, ăна сăмаха улăштаракан аффикс темелле пек пулса тухать.

Тата тепĕр çитменлĕх вăл - =лă/=лĕ/ аффикс çыхăну паллă ячĕсем кăна тăвать тесе йышăнни. Анчах та чĕлхе факчĕсем ку шухăша хирĕçлеççĕ: илемлĕ хĕр тенĕ чухне илемлĕ сăмах япала паллине тӳрех хамăр мĕнле туйнă пек кăтартать, кун пек паллă ячĕсем танлаштару категорийĕнче пулаççĕ те мĕнлелĕх паллă ячĕ пулнине çирĕплетеççĕ. Çыхăну паллă ячĕ тенĕ =лă/=лĕ/ аффикслă сăмахсем паллă ячĕн тĕп категорийĕнче пулмаççĕ, çавна май вĕсене паллă ячĕ теме май çук: велосипедлăрах çын, кĕрĕклĕрех каччă тенисем чĕлхере çук. Апла пулсан , =л /=лĕ/ аффикс чăваш чĕлхинче икĕ функциллĕ: а/ чаплă, вăйлă, тăнлă, илемлĕ сăмахсенче паллă ячĕ тăвать, мĕншĕн тесен вĕсенчен танлаштару категори формисем ирĕккĕн йĕркелеме пулать; кун пек сăмахсем чĕлхере нумаях та мар, ку вăл çак аффикс деривconfigure аффиксĕ пулнине çирĕплетет; ă/ =лă/=лĕ/ аффикс чăваш чĕлхинчи чылай сăмах çумне хушăнать, çав сăмахсем танлаштару категорийĕнче пулаймаççĕ, ун пек чухне ăна, чылайлăх принципне пăхăннăран, сăмаха улăштаракан аффикс теме лекет, пурлăх падежĕ çуккине кура ун пек кӳлепесене пурлăх категорийĕ е форми теме лекет.

Тата тепĕр асăрхаттару. Чĕлхеçĕсем час-часах =лă/=лĕ/, =сăр/=сĕр/ аффикслă сăмахсен тытăмĕнче нумайлă хисеп аффиксĕ те, сăпат аффиксĕ те пулма пултарайманни çинчен çыраççĕ[11]. Анчах та

[11] Павлов И.П. У-УI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентес си. 27 с.

малтан каланине темиçе страницăранах манса каяççĕ те "... /нумайлă хисеп аффиксĕ, камăнлăх аффиксĕ/ çыхăну паллă ятне тăвакан =лă/=лĕ/ аффикс хушăнсан та юлма пултараççĕ" тенĕ те çакăн пек тĕслĕхсем панă: пуш вагонсемлĕ поезд, шăпчăк йăвиллĕ сад, тăри юрриллĕ ир т.ыт. те.[12] Сăмах тытăмĕнче нумайлă хисеп тата камăнлăх=сăпат категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕсем пулсан,ун пек сăмахсене пĕр иккĕленмесĕрех япала ячĕ темелле те вĕсем пурлă формăрине палăртмалла. Танлаштару категорийĕн аффиксне йышăнманни вĕсем паллă ячĕсем пулманнине çирĕплетеççĕ.

Çапла вара, =лă/=лĕ/ аффикс та, =сăр/=сĕр/ аффикс та икĕ функциллĕ: пĕр енчен, вĕсем сăмах /паллă ячĕ/ тăваççĕ; тепĕр енчен, сăмаха улăштараççĕ: =сĕр/=сăр/ падеж аффиксĕ пулнă чух вăл хушăнман япала ячĕ çук та; =лă/=лĕ/ аффикс пурлăх категори форми пулнă чух вăл чылай япала ячĕпе çӳрет.

Пăхса тухнă тĕслĕхсенчен çакă палăрчĕ: паллă ячĕ пĕр енчен япала ятне çывăх тăрать, вăл субстантиваци йĕркипе япала ячĕленет, тепĕр енчен вăл наречисене /ĕçхĕлçумĕсене/ аса илтерет. Анчах наречисемпе паллă ячĕсен хушшинче палăрмалла уйрăмлăхсем пур:

I/ паллă ячĕсенчен чылайăшĕ япала ячĕленме пултарать; наречисем япала ятне тухни çук;

2/ паллă ячĕсен танлаштару категорийĕ пур, наречисен танлаштару форми çеç пулать /ку категорисĕр форма/;

3/ паллă ячĕсем уйрăммăн çӳренĕ чух 4-5 е 6 падежра тăма пултараççĕ, наречисенчен вара I-2 е 3 падеж формине кăна йышăнать: хăшĕсем нихăш падежра та пуласшăн мар;

4/ паллă ячĕсен палăрту тата мĕнлелĕх категорийĕсем пур, наречисен палăрту тата мĕнлелĕх формисем кăна пулма пултараççĕ;

5/ паллă ячĕсен хăйне тивĕçлĕ категорийĕсем пур, наречисен - çук;

6/ паллă ячĕ тăвакан аффикссем 20 ытла, наречи тăваканнисем çукпа пĕрех;

7/ паллă ячĕн сăмах формин улшăнăвĕнче падеж, хисеп категорийĕсем пур, наречисен ун пекки çук;

8/ мĕнлелĕх паллă ячĕсен вăйлату форми икĕ тĕрлĕ пулать: а/ сăмаха икĕ хут каланипе /редупликаци/: хĕрлĕ=хĕрлĕ, симĕс=симĕс, пысăк=пысăк; ă/ префикс мелĕпе: хĕп=хĕрлĕ, сип=симĕс,

[12] Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. I20 с.

# П А Л Л Ӑ  Я Ч Ӗ

## I. Улшӑнакан паллӑ ячӗсем

- Танлаштару категорийӗнче пулаканнисем
- Япала ячӗленнӗ паллӑ ячӗсен вӗҫленӗвӗ, нумайлӑ хисепре пулни
- Паларту категорийӗнче пулаканнисем
- Сӑмах формин улшӑнӑвӗнче =и,=скер аффикслӑ паллӑ ячӗсен падеж, хисеп тӑрӑх улшӑнни
- Иртнӗ вӑхӑт тата вӑйлату категорийӗсенче пулакан паллӑ ячӗсем
- Мӗнлелӗх категорийӗн аффиксне йышӑнаканнисем

## II. Тулли улшӑнман паллӑ ячӗсем

- а/ Танлаштару тата паларту категорийӗнче пулакан паллӑ ячӗсем, анчах та мӗнлелӗх категорийӗнче пулманнисем,
  ӑ/ Икӗ хут калана паллӑ ячӗсем мӗнлелӗх категорийӗнче кӑна пулни: ӑшшӑн=ӑшшӑн, пӗчӗккӗн=пӗчӗккӗн т.ыт.те
- Паллӑ ячӗсен вӑйлату форми: хӗп=хӗрлӗ, яп=яка, тӑп=тӑрӑ, ҫӳп=ҫӳллӗ, анчах та ип=илемлӗ, вӑп=вӑрӑм, луп=лутра теме май ҫук
- Хӑш=пӗр падеж аффиксӗсене йышӑнакан паллӑ ячӗсем /тулли мар вӗҫленӳ/

## III. Улшӑнман паллӑ ячӗсем

- Ҫирӗпленсе ларнӑ сӑмах майлашӑвӗсенчи /фразеологизмсенчи/ паллӑ ячӗ улшӑнманни: тӳрӗ пилӗк /кахал/, кукӑр алӑ /вӑрӑ/, шӑтӑк пуҫ /ухмах/

кăн=кăвак, яп=яка, тап=такăр, ем=ешĕл; мĕнлелĕх наречийĕсен вăйлă форми хăш=пĕр наречисене икĕ хут каланипе кăна пулать: аран=аран, хуллен=хуллен; ерипе=ерипе т.ыт.те.

9/ чылай пуплев пайĕсене тивĕçлĕ =ах/=ех,=х/ аффикслă вăйлату тата =чĕ/=ччĕ/ аффикслă иртнĕ тăрăм /вăхăт/ категорийĕсем паллă ячĕсен кăна мар, наречисен те пур. Чĕлхеçĕсем тепĕр чухне вăйлату категорийĕн =ах/=ех,=х/ аффиксне асăрхамасла наречисен сăмах тĕпне кĕртсе йăнăш тăваççĕ: пач - наречи, пачах - наречин вăйлату категорийĕ, йăлт - наречи, йăлтах - наречин вăйлату категорийĕ.

## ВИҪҪĔМĔШ ПАЙ .. ХИСЕП ЯЧĔ

### Пĕтĕмĕшле ăнлантарни

Хисепе кăтартакан миҫе? миҫемĕш? миҫешер? миҫен? ыйтусенче тăрса, йĕрке, валеҫÿ тата мĕнлелĕх категорийĕсенче пулакан сăмахсене хисеп ячĕсем темелле.

Ку таранччен чăваш чĕлхин вĕрентÿ ăсланăхĕнче йĕрке категорийĕ, валеҫÿ категорийĕ, мĕнлелĕх категорийĕ терминсем пулман, вĕсем вырăнне йĕрке хисеп ячĕсем, валеҫÿ хисеп ячĕсем, пĕтĕмлетÿ хисеп ячĕсем текен терминсем хуҫаланнă. Ҫапла калани вăл =мĕш,=шар/=шер/,=ăн/=ĕн/ аффикссене сăмах тăвакан аффикс тесе йышăннинчен килнĕ. Енчен те эпир вĕсене категори йĕркелекен аффикссем тесе каларăмăр пулсан, ҫавсем сăмаха улăштаракан аффикссем шутланма тивĕҫ - шутланаҫҫĕ те, мĕншĕн тесен пĕтĕмлĕх принципне пăхăнаҫҫĕ. Чăнах та, шут хисепĕсене тĕп форма тесе шутласан, =мĕш,=шар/=шер/, =ăн/=ĕн/ аффикслă кÿлепесене категори формисем теме лекет. Анчах та шут хисепĕсен чăваш чĕлхинче хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхĕсем пур: вĕсем тулли, ҫурма тулли тата кĕске формăллă пулма пултараҫҫĕ:

| тулли | ҫурма тулли | кĕске |
|---|---|---|
| пĕрре | пĕре /пĕре=пĕре/ | пĕр |
| иккĕ | икĕ | ик |
| виҫҫĕ | виҫĕ | виҫ |
| тăваттă | тăватă | тăват |
| пиллĕк | пилĕк | |
| улттă | ултă | улт |
| ҫиччĕ | ҫичĕ | ҫич |
| саккăр | сакăр | |
| тăххăр | тăхăр | |
| вуннă | вунă | вун |
| аллă | алă | ал |

Шут хисепĕсем тулли, ҫурма тулли, кĕске кÿлепеллĕ пулнинчен вĕсен улшăнас пахалăхĕ килет.

## I §. Туллин улшăнакан шут хисепĕсем

Йĕрке категорийĕ чылай чухне шут хисепĕсен тулли форми çумне =мĕш аффикс хушăннипе пулать: пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш, тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш, улттăмĕш т.ыт.те. Анчах та чĕлхере пĕрмĕш, пилĕкмĕш тени те пур.

Н.И.Ашмарин словарĕнче /А. X,223/ пĕрмĕш, пĕрĕмĕш, пĕрремĕш кӳлепесем пуррине кăтартнă, çавăн пекех пиллĕкмĕш, пилĕкмĕш, пилĕкĕмĕш текен йĕрке категорийĕнче формăсене панă /А. IX,214/.

Валеçӳ категорийĕ чылай чухне шут хисепĕсен кĕске форми çумне =шар/=шер/ аффикс хушăннипе йĕркеленет: пĕршер, икшер, виçшер, тăваттшар,ултшар ... вуншар т.ыт. те. Анчах та пĕр шут хисепĕнчен валеçӳ категори форми икĕ тĕрлĕ пулать: пĕрер, пĕршер, çав вăхăтрах чĕлхемĕрте вунпĕршер, çĕр пĕршер тени анчах пур.

Мĕнлелĕх категори форми шут хисепĕн тулли кӳлепи çумне =ăн/=ĕн/ аффикс хушăннипе пулать: иккĕн, виççĕн, тăваттăн, пиллĕкĕн, улттăн, вуннăн. Çав вăхăтрах пĕр шут хисепĕнчен пĕрĕн /пĕрĕн=пĕрĕн суйла/ кӳлепе калаçу чĕлхинче йĕркеленет, литература чĕлхинче ун вырăнĕнче пĕччен сăмах çӳрет.

Сăмах формин улшăнăвĕнче мĕнлелĕх категорийĕн =ăн/=ĕн/ аффиксĕ валеçӳ çумне хушăнать: икшерĕн, виçшерĕн, вуншарăн. Анчах та чĕлхере пĕрерĕн тени анлă сарăлнă, пĕршерĕн тени калаçу чĕлхинче тĕл пулкалать.

Шут хисепĕсен субстантивлă форми /тулли кӳлепе/ вĕçленет, нумайлă хисепре те пулать.

| | 2 | 3 | 110 |
|---|---|---|---|
| Т. | иккĕ | виççĕсем | çĕр вуннă |
| К. | иккĕн | виççĕсен | çĕр вуннăн |
| П. | икке | виççĕсене | çĕр вунна |
| Б. | иккĕре | виççĕсенче | çĕр вуннăра |
| Т. | иккĕрен | виççĕсенчен | çĕр вуннăран |
| П. | иккĕпе | виççĕсемпе | çĕр вуннăпа |
| Ç. | иккĕсĕр | виççĕсемсĕр | çĕр вуннăсăр |
| Ч. | иккĕшĕн | виççĕсемшĕн | çĕр вуннăшăн |

Лёрке категорийĕнчи пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп кÿлеписем те туллин вĕçленеççĕ:

| | |
|---|---|
| Т. саккăрмĕш | вуннăмĕшĕсем |
| К. саккăрмĕшĕн | вуннăмĕшĕсен |
| П. саккăрмĕшне | вуннăмĕшсене |
| В. саккăрмĕшĕнче | вуннăмĕшсенче |
| Т. саккăрмĕшĕнчен | вуннăмĕшсенчен |
| П. саккăрмĕшпе | вуннăмĕшсемпе |
| Ç. саккăрмĕшсĕр | вуннăмĕшсемсĕр |
| П. саккăрмĕшшĕн | вуннăмĕшсемшĕн |

Пур хисеп ячĕ те сăпат аффиксĕсене йышăнмасть. Ку тĕлĕшпе хисеп ячĕсем тулли улшăнманни палăрать. Анчах та иккĕрен пуç-ласа çичче çити пыракан сăпат кÿлеписем пурте туллин вĕçленеççĕ. Сăмах улшăнăвĕнче пĕр хисеп ячĕ кăна палăрту форминче пулма пултарать: пĕри. Сăмах формин улшăнăвĕнче вара чылай хисеп ячĕсем /анчах пурте мар!/ палăрту формин =и,=скер аффиксĕсене йышă-наççĕ, ун пек чухне вĕсем туллин вĕçленеççĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. пĕри | аллăри | аллăраскер | аллăрисем |
| К. пĕрин | аллăрин | аллăраскерĕн | аллăрисен |
| П. пĕрине | аллăрине | аллăраскере | аллăрисене |
| В. пĕринче | аллăринче | аллăраскерте | аллăрисенче |
| Т. пĕринчен | аллăринчен | аллăраскертен | аллăрисенчен |
| П. пĕринпе | аллăрипе | аллăраскерпе | аллăрисемпе |
| Ç. пĕринсĕр | аллăрисĕр | аллăраскерсĕр | аллăрисемсĕр |
| П. пĕриншĕн | аллăришĕн | аллăраскершĕн | аллăрисемшĕн |

Пĕр хисеп ятĕнчен I-мĕш сăпат форми пулмасть: пĕрсемĕр тени çук чĕлхере. Н.И.Ашмарин словарĕнче кăтартнă 2-мĕшпе 3-мĕш сă-пат формисем /пĕрсĕр, пĕрĕш / туллин вĕçленмеççĕ.

## 2 §. Туллин улшăнман хисеп ячĕсем

I-мĕшпе 2-мĕш сăпат аффиксĕсене йышăнакан хисеп ячĕсем чă-ваш чĕлхинче нумай мар, 3-мĕш сăпат аффиксĕ вара чылай хисеп ячĕпе çÿрет. Хисеп ячĕсен сăпат формисене çак ÿкерчĕкре курма пулать:

| Нумайлă хисеп | | Пĕрреллĕ хисеп |
| --- | --- | --- |
| I-мĕш сăпат | 2-мĕш сăпат | 3-мĕш сăпат |
| пĕр ...? | пĕрсĕр/А. X,225/ | пĕрĕш/А. X,219/, пĕрерĕшĕ |
| иксĕмĕр | иксĕр | иккĕшĕ |
| виççĕмĕр | виççĕр | виççĕшĕ |
| тăватсăмăр | тăватсăр | тăваттăшĕ |
| пилĕксĕмĕр | пилĕксĕр | пилĕкĕшĕ |
| ултсăмăр | ултсăр | улттăшĕ |
| çичсĕмĕр | çичсĕр | çиччĕшĕ ... |
| | | вуннăшĕ, çĕрĕшĕ |

Асăрхарăр пулĕ, I-мĕшпе 2-мĕш сăпат формисем хисеп ячĕсен кĕске /атрибутивлă/ форми çумне хушăнса пыраççĕ, 3-мĕш сăпат аффиксĕ вара тулли /субстантив/ форми çумне çыпçăнать. Анчах та кунта пĕр япалана асăрхама пĕлес пулать. Хупă сасăпа пĕтекен хисеп ячĕсенче хушма ă,ĕ сасăсем тупăнаççĕ: пиллĕк/ĕ/-ш-ĕ, Çирĕм-/ĕ/-ш-ĕ, вăтăр/ă/-ш-ĕ, утмăл-/ă/-ш-ĕ, çĕр/ĕ/-ш-ĕ, пин/ĕ/-ш-ĕ. Сăмах тĕпĕ çумне тӳрех хушăнскан ă, ĕ сасăсене 3-мĕш сăпат аффиксĕ теме май çук. Хисеп ячĕсенче вăл аналоги йĕркипе хушăнса пыракан япала кăна пулмалла:

иккĕш=ĕ - çирĕмм/ĕ/=ш=ĕ
тăваттă=ш=ĕ - вăтăр/ă/=ш=ĕ.

Тăванлăха пĕлтерекен япала ячĕсенче сăпат аффиксĕсем умĕнхи ă, ĕ сасăсем регрессиллĕ ассимиляцие пула тупăнаççĕ: пичче - пичч/ĕ/=ш=ĕ; анне - ам/ă/=ш=ĕ. I-мĕшпе 2-мĕш сăпатсенче хисеп ячĕсен тĕпĕпе сăпат аффиксĕсем хушшинче с сасă пур:

ик/с/=ĕм=ĕр, ик/с/=ĕр.
виç/с/=ĕм=ĕр, виç/с/=ĕр,
тăват/с/=ăм=ăр, тăват/с/=ăр.

Хальхи чăваш чĕлхинче ку кĕрсе ларнă сасă анчах шутланать, истори тĕлĕшĕнчен ăна нумайлă хисеп аффиксĕн архетипĕ тесен тĕрĕсрех пулать.

Н.И.Ашмарин словарьне ĕненее пулсан, хисеп ячĕсенчи сăпат формисене ĕлĕкрех анлă усă курнине курма пулать:

8-сакăрсăмăр, сакăрсăр, саккăрĕш /А. XI,22/;

9 - тăхăрсамăр, тăхăрсăр /А. ХУ, 7/, тăххăрсăмăр, тăхăрсăр, тăххăрăшĕ /А. ХУ, II-I2/;

I0 - вунсăмăр, вунсăр /А. У,265/;

II - вунпĕрсĕмĕр, вунпĕрĕмĕр, вунпĕрсĕр, вунпĕрĕр /А. У.268/;

20 - çирĕмсĕмĕр /А. XII, I7I/;

30 - вăтăрсăмăр, вăтăрсăр /вăтăрăр/, вăтăрăшĕ /А. У. 336/;

70 - çитмĕлсĕмĕр /А. XII, I89/.

Сăпат формисем туллин вĕçленеççĕ.

Валеçÿ категорийĕн =шар/=шер/ аффиксне йышăнса шут хисеп ячĕсем тулли улшăнăва лекеççĕ. Анчах та валеçÿ категори форми туллин вĕçленмест, çавна май эпир ăна туллин улшăнман /вĕçленмен/ кÿлепе /форма/ тесе шутлатпăр.

Шут хисепĕсен тулли кÿлепи сулăну форминче пулма пултарать, ун пек чухне =лла/=лле/ аффикс пару падеж форми çумне хушăнса пырать, çын хăш çула çывхарса пынине палăртать: вăтăралла, хĕрĕхелле, аллăналла, утмăлалла, çитмĕлелле т.ыт.те. Анчах та =лла/=лле/ сулăну формин аффиксне çын хăш çулалла çывхарса пынине палăртнă чух пур хисеп ячĕ çумне те хушма май килмест, мĕншĕн тесен чи нумай пурăннă çын та I70 çула кăна çитме пултарнă.

Çурă, чĕрĕк, уçмушка /оçмушкă/ вак хисеп ячĕсем валеçÿ категорийĕнче кăна пулни паллă: Çуршар, чĕрĕкшер, оçмушкăшар брикетсемшĕн тенкĕрен ирттерсе тÿленĕ /Осипов/. Валеçÿ категорийĕн кÿлепи ытти хисеп ячĕсем пекех мĕнлелĕх категорийĕнче пулать: çур=шар=ăн, чĕрĕк=шер=ĕн, уçмушкă=шар=ăн.

Сăмах улшăнăвĕнче пĕр шут хисеп ячĕ кăна палăрту форминче пулать терĕмĕр: пĕри. Вак хисеп ячĕсем те палăрту форминче пулаççĕ: çурри, чĕрĕкĕ; вĕсенчен çуррин çурри, чĕрĕкĕн чĕрĕкĕ сăмах майлашăвĕсем йĕркеленеççĕ. Çур, çурă вак хисеп ячĕн тепĕр вариантĕ - çурма "половина". Вăл та валеçÿ категорийĕн =шар аффиксне йышăнать: çурмашар; ун çумне те =ăн мĕнлелĕх категорийĕн аффиксĕ хушăнма пултарать: çурма=шар=ăн. Анчах та çурма вак хисеп кÿлепи туху падежĕнче кăна пулать: çурмаран: Пĕкке хуçрĕ çурмаран /Фед./. Çурма сăмахăн евĕрлĕх форми те пур: çурмалла: çурмалла вырăс "полурусский". Çур çын, çурма çын тесе ĕçлеме пултарайман е çул çитмен /I3-I4 çулхи хĕрача е арçын ача/ çынна калаççĕ /А. XII,259/. Çурма ăслă /ухмах/

сӑмах майлашӑвӗнчен ялала ятне куҫас сӗмлӗ ҫурма /урод/ сӑмах тӗвӗленет, унӑн тепӗр варианчӗ – ҫурмаккай. Ялала ячӗленес сӗмлӗ ҫурӑ, ҫурмаккай сӑмахсем туллин вӗҫленме те пултараççӗ. Йӗрке хисеп ячӗсен авалхи формисене эпир туллин улшӑнман хисеп ячӗсен ретӗнче пӑхатпӑр, мӗншӗн тесен вӗсем хальхи чӗлхере ҫакӑн пек сӑмах майлашӑвӗсенче кӑна тӗл пулаççӗ: виҫӗм /кун е ҫул/, тӑватӑм /кун е ҫул/; сайра-хутра, пилӗкӗм /кун е ҫул/, ултӑм /кун е ҫул/ тенине те илтме пулать.

Виҫӗм, тӑватӑм, пилӗкӗм, ултӑм кӳлепесене чӗлхеҫӗсем хисеп ячӗсен картинчен кӑлармаççӗ пулин, виҫмине /ырантан тепӗр кунне/, тӑватмине, пилӗкмине, ултмине, ҫичмине, сакӑрмине кӳлепесене пӗрисем наречие тухса кайнӑ тесе ӗнентереççӗ /И.П.Павлов/, теприсем вӗсене йӗрке хисеп ячӗсен авалхи форми те, ҫав вӑхӑтрах наречи те пулать тесе шутлаççӗ /Л.П.Сергеев/. Пирӗн шутпа, ку кӳлепесем наречие тухса кайнине ӗнентерекенни кунта нимӗн те ҫук. Асӑрхӑр: виҫӗм /кун/ тенӗ чухне виҫӗм иртнӗ вӑхӑтри тӑрӑма палӑртать, виҫмине тенӗ чухне ун пӗлтерӗшӗ пулас вӑхӑтпа ҫыхӑннӑ.

Сум ячӗсене эпир туллин улшӑнман хисеп ячӗсем шутне кӗртрӗмӗр, анчах та таблицӑра ҫапла кӑтартни тӗрӗсех мар, мӗншӗн тесен мӑшӑр, теҫетке, хӑрах, йӗкӗр сӑмахсем, пӗр енчен илсен, ялала ячӗсене тата паллӑ ячӗсене аса илтереççӗ, тепӗр енчен– хисеп ячӗсене. Ҫавна курах ӗнтӗ эпир вӗсене халлӗхе хисеп ячӗсен картинех уйрӑм ырӑн патӑмӑр, сум ячӗсем терӗмӗр/ маларахри пирӗн ӗҫре сумятсем тени тӗл пулать/. Тӗслӗхрен, чи малтан хӑрах сӑмах улшӑнӑвне тишкерсе тухар. Определени ырӑнӗнче вӑл паллӑ ятне аса илтерет: хӑрах ура, алӑ, атӑ, ен, турта т.ыт.те. Танлаштару категорийӗн аффиксне йышӑнман пирки ӑна паллӑ ячӗ теейместпӗр, анчах та вӑл =и,=скер палӑрту формин аффиксне йышӑнма пултарать: хӑраххи: Хӑраххине илчӗ, хӑраххи юлчӗ /А.XVI, 359/. Хӑраххи кӳлепе, Н.И.Ашмарин словарьне ӗненес пулсан, ялала ячӗн пӗлтерӗшне те туянать: "подруга", "ее муж, "его жена".

Хӑрах сӑмах ялала ячӗн пӗлтерӗшӗпе ҫӳресе, сӑпат аффиксӗсене йышӑнма пултарать: ман хӑраххӑм, сан хӑрахху, ун хӑраххи, пирӗн хӑраххӑмӑр, сирӗн хӑраххӑр.

Ман хӑраххӑм тенине икӗ тӗрлӗ ӑнланма пулать: 1/ ман евӗр-

лĕ, ман пек; 2/ ман мăшăрăм /ман арăм, ман упăшка/. Ку уйрăмлăхсене Н.И.Ашмарин словарĕнче палăртнă /А. ХУI,358-359/. Анчах та нумайлă хисепре тулли вĕçленӳре пулманнине шута илсе тата хальхи чĕлхере хăраххăм, хăрахху, хăраххи сăпат формисене арăм е упăшка пĕлтерĕшĕсемпе усă курманнине тĕсесе хăрах сăмаха япала ячĕ тесе çирĕплетсех калаймастпăр.

Ку сăмахăн хисеп ячĕн морфологи паллисем те пур: вăл мĕнлелĕх категорийĕн аффиксне йышăнать: I/ хăрахăн: Япалана хăрахăн парсассăн, хăрах пуççăр пулать теççĕ /А. ХУI 358/; хăраххăн: Çураçма пынă чух непременно хăраххăн пыраççĕ /А. ХУI 359/. Хăраххăн пурăн. 2/ хăрахшар: Пирĕн иксĕмĕрĕн те çăматсем хăрахшар /ылмаш/. Анчах та хăрахмĕш тени чĕлхере çук.

Мăшăр сăмахăн /"арăм" е "упăшка" пĕлтерĕшĕсемпе çӳренĕ чух/ япала ячĕн пĕлтерĕшĕсем малти вырăна тухаççĕ: а/ вăл сăпатланать: мăшăрăм, мăшăру, мăшăрĕ, мăшăрăр; асăрхăр: ку тулли сăпатлану мар, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхинче мăшăрĕмĕр тени пурнăç чăнлăхĕпе тӳр килмест, чăвашсем темиçе упăшкапа е арăмпа пурăнмаççĕ. Çавăн пекех эпир пуçăмăр, чĕремĕр, ӳпкемĕр, кĕлетке - мĕр формăсемпе усă курмастпăр, мĕншĕн тесен икĕ çыннăн пĕр пуç, пĕр чĕре, ӳпке, кĕлетке пулма пултараймасть. Ун пек чухне нумайлăха =сем аффикс палăртать: пуçăмăрсем, чĕремĕрсем, ӳпкемĕрсем, кĕлеткемĕрсем; ă/ туллин вĕçленет; б/ нумайлă хисеп аффиксне йышăнман та туллин вĕçленет:

| | |
|---|---|
| Т. мăшăр | мăшăрсем |
| К. мăшăрăн | мăшăрсен |
| П. мăшăра | мăшăрсене |
| В. мăшăрта | мăшăрсенче |
| Т. мăшăртан | мăшăрсенчен |
| П. мăшăрпа | мăшăрсемпе |
| Ç. мăшăрсăр | мăшăрсемсĕр |
| П. мăшăршăн | мăшăрсемшĕн |

Мăшăр сăмахăн хисеп ячĕн морфологи паллисем çаксем: а/ валеçӳ категорийĕн =шар аффиксне йышăнма пултарни: Пĕрер мăшăршар илтĕмĕр /А УIII,326/; ă/ мĕнлелĕх категорийĕнче пулни: мăшăрăн, мăшăррăн=мăшăррăн ларăр; Çамрăксем мăшăррăн=мăшăррăнташлаççĕ; б/ хисеп ячĕсем пекех валеçӳ тата мĕнлелĕх категорийĕсен аффиксĕсене : умлă=хыçлă йышăнма пултарни: мăшăршарăн /ЧВС I982,236/.

# ХИСЕП ЯЧӖ

## I. ТУЛЛИН УЛШӐНАКАН ХИСЕП ЯЧӖСЕМ

Йӗрке, валеҫӳ тата мӗнлелӗх категорийӗсенче пулакан сӑмахсем: иккӗмӗш, икшер, иккӗн...

Иртнӗ вӑхӑт тата вӑйлату категорийӗнче пулакан хисеп ячӗсем

Хисеп ячӗсен /шут хисепӗсен/ субстантивлӑ кӳлепи падеж, хисеп тӑрӑх улшӑнни

Валеҫӳ категорийӗнчи хисеп ячӗсем мӗнлелӗх категорийӗнче пулни: ик=шер=ӗн, вун=шар=ӑн т.ыт.те

Нумайлӑ хисепри, сӑпат форминчи тата йӗрке категорийӗнчи хисеп ячӗсем вӗҫленни

Паларту форминчи пӗри, вӑтӑрти, хӗрӗхри йышши кӳлепесем нумайлӑ хисепре пулаҫҫӗ, туллин вӗҫленеҫҫӗ.

## II. ТУЛЛИН УЛШӐНМАН ХИСЕП ЯЧӖСЕМ

Хисеп ячӗсен сӑпат формисем пур хисеп ячӗсенчен те пулманни /3-мӗш сӑпатсӑр пуҫне/.

Валеҫӳ категорийӗнчи хисеп ячӗсем хӑш-пӗр падеж аффиксӗсене йышӑнни

Шут хисепӗн тулли форми сулӑну кӳлепинче пулни

Ҫурӑ, чӗрӗк, осмушкӑ вак хисеп ячӗсем валеҫӳ категорийӗнче кӑна пулни.

Авалхи йӗрке хисеп форми: виҫӗм, тӑватӑм, пилӗкӗм, ултӑм, виҫмине, тӑватмине, пилӗкмине /А IX 214/

Мӑшӑр, йӗкӗр, хӑрах теҫетке сум ячӗсем

## III. УЛШӐНМАН ХИСЕП ЯЧӖСЕМ

Шут хисепӗн атрибутивлӑ форми /кӗске кӳлепи/ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсенче улшӑнманни: ик ҫын, виҫ ача, вун кӗнеке; анчах пӗрмӗш /А X 223/ тени пур.

Эпир тишкерекен мăшăр сăмах евĕрлĕх форминче пулать: мă-шăрла выля; пурлă формăн =лă аффиксне йышăнать: мăшăрлă хисеп.

Йĕкĕр сум ячĕн морфологи тĕлĕшĕнчен япала ячĕн, паллă ячĕн, хисеп ячĕн паллисем палăрсах каймаççĕ. Пурлă формăра пулни вăл е ку пуплев пайĕнчи сăмахсемпе çывăх пулнине пĕлтермест: йĕкĕр-лĕ майăр; йĕкĕрлĕ çӳре.

Теçетке сăмахăн япала ячĕн çак паллисем пур: а/ туллин вĕç-ленет; ă/ нумайлă хисепре пулать: теçеткесем "десятки" /математика терминĕ/; анчах та сăпат аффиксĕсене йышăнасшăн мар. Хисеп ячĕн çак паллисене куратпăр: а/ валеçӳ категорине йышăнни: те-çеткешер валеçсе пар /ЧВС 1982. 467/; ă/ мĕнлелĕх категорийĕнче пулни: теçеткен=теçеткен уйăрса хур.

Çапла вара, темиçе пуплев пайĕн морфологи паллисем пур мă-шăр, теçетке, хăрах сăмахсене сум ятсем тесе хисеп ячĕн уйрăм ушкăнĕ пек пăхма май пур. Вĕсен ретнех эпир йĕкĕр сăмах та кĕртрĕмĕр. Сум сăмах хисеп сăмахпа синонимлă, ятсем тени çӳле-рех илсе кăтартнă сăмахсем ят сăмахсене /япала е паллă ячĕсене/ çывăххине кăтартма кирлĕ.

### 3 §. Хисеп ячĕсем улшăнманни

Шут хисеп ячĕсен атрибутивлă формисем /кĕске формисем/: ик, виç, улт, çич, вун йышши кӳлепесем сăмах çаврăнăшĕсенче çӳренĕ чух нимĕнле аффикс та йышăнмаççĕ: пĕр çын, ик çул, виç каччă, улт упа, çич çĕмĕрт, вун вăкăр.

Пĕр хисеп ячĕ вĕсен ретĕнче тăмасть: пĕр çын - пĕрмĕш çын теме пултаратпăр. Глаголсемпе çыхăнура тăнă чух пĕр сăмах мĕн-лелĕх категорийĕн аффиксне йышăнать: пĕрĕн суйла, пĕрĕн=пĕрĕн хурса тух /танл.: пĕршерĕн хурса тух/.

## ТӐВАТТӐМӖШ ПАЙ. ЯТЫЛМАШӖ /МЕСТОИМЕНИ/

Ят сӑмахсем выранӗнче ҫӳресе падеж, хисеп тата еверлӗх категорийӗсенче пулакан сӑмахсене ятылмашӗсем /местоименисем/ темелле.

Ытти пуплев пайӗсем хушшинче ятылмашӗ раснарах тӑнине тӗпчевҫӗсем асӑрханӑ: вӑл пӗр харӑсах япала ячӗпе те, паллӑ ячӗпе те, хисеп ячӗпе те ҫыхӑнса тӑма пултарать. Ятылмашӗсене пула пуплевре пӗр сӑмаха темиҫе хут каласси нчен хӑтӑлатпӑр.

Чылай чухне хӑш-пӗр ятылмашӗсен пӗлтерӗшӗ контекстра ҫеҫ палӑрать. Контекст ансӑр пулсан ятылмашӗн пӗлтерӗшӗ виҫесӗр сарӑлса каймаа е хӗсӗнме пултарать.

Вӗсем питех те пӗчӗк /Эйзин/ сӑвӑ йӗркисенчи вӗсем местоимени пире тем пирки те шухӑшлама ирӗк парать: ачасем, йывӑҫсем, чулсем, хӑйӑр пӗрчисем, ҫӑлтӑрсем т.ыт.те.

Анчах та вӗҫем местоименилле пуплев умӗнче ӑна ӑнлантарса ҫырнӑ икӗ йӗрке пур: Ӑна юр пӗрчисем пӗлмеҫҫӗ. Ҫапла майпа вӗсем ятылмашӗ юр пӗрчисем сӑмах майлашӑвӗ вырӑнӗнче тӑнине пӗлтӗмӗр.

Чӗлхеҫӗсем ятылмашӗн несӗллӗхне тӗплӗн тӗпчемесӗрех местоименисен ятарлӑ грамматика категорийӗсем ҫукки ҫинчен ҫыраҫҫӗ. Пирӗн шутпа, местоименисен еверлӗх категорийӗ пур, вӑл =шкал/ =шкел/ аффикспа йӗркеленет: ман=а=шкал, сан=а=шкал, хам=а=шкал, пирӗн=е=шкел, ун=а=шкал, кун=а=шкал т.ыт.те. Падеж, хисеп категорийӗсем пурри вӗсене япала ячӗпе ҫывӑхлатать.

Ятылмашӗсен хисепӗ пӗчӗк, апла пулин те вӗсем уйрӑм пуплев пайӗ шутланаҫҫӗ, чӗлхере вӗсемпе час-часах усӑ кураҫҫӗ.

Чӑваш чӗлхинчи местоименисене ҫичӗ ушкӑна уйӑраҫҫӗ: сӑпат местоименийӗсем: эпӗ, эсӗ, вӑл; таврӑну-сӑпат местоименийӗсем: хам, ху /хӑв/, хӑй; кӑтарту местоименийӗсем: ку, ҫав/ӑ/, леш/ӗ/, ҫак/ӑ/; ыйту местоименийӗсем: кам? мӗн? хӑш/ӗ/?; ҫуклӑх местоименийӗсем: никам, нимӗн, нихӑш/ӗ/; паллӑ мар местоименисем: пур, пурте, пӗтӗм, ытти.

Пуплев пайӗсем уйрӑм сӑмахсене кӑна пӗрлештерсе тӑнине пӗле тӑркачах /сӑмах майлашӑвӗсемпе сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем кунта кӗмеҫҫӗ/, чӗлхеҫӗсем паллӑ местоименисен шутне кирек тата хуть татӑклӑ конструкцисене кӗртсе яма тӑрӑшаҫҫӗ: кирек кам, хуть кам, хуть

мĕн, кирек мĕн, кирек хăшĕ. Кун пек чухне татăк хăй уйрăм пуплев пайĕ пулнине манмалла мар.

Асăрхаттару. Чăваш чĕлхинче çуклăх тата пайлă мар ятылмашĕсем çук теме те пулать. Ун пек каласан никам, нимĕн, нихăш/ĕ/ сăмахсене ыйту местоименийĕсен çуклă форми; такам, темĕн, тахăшĕ сăмахсене ыйту местоименийĕсен паллă мар форми теме лекет.

## I §. Ятылмашĕсен тулли улшăнăвĕ

Падеж, хисеп тата еверлĕх категорийĕсенче пулакан ятылмашĕсем туллин улшăнаканнисен шутне кĕреççĕ. Тулли улшăнаканнисен ретне сăпат, таврăну=сăпат, кăтарту, ыйту местоименийĕсене кĕртмелле.

Сăпат тата таврăну=сăпат местоименийĕсен, япала ячĕпе танлаштарсан, хисеп категорийĕ хăйне евĕр йĕркеленет:

| | пĕр. хисеп | | нум. хисеп |
|---|---|---|---|
| Iс. | эпĕ, хам | | эпĕ=р, хам=ăр, |
| 2 с. | эсĕ, ху /хăв/ | | эсĕ=р, хăв=ăр |
| | | диал. | ху=сам=ăр |
| | | диал. | хăв/а/=сам |
| 3 с. | вăл, хăй | | вĕ=сем, хăй=сем |

I, 2=мĕш сăпатсенче нумайлă хисеп аффиксĕ =р тата =ăр; 3=мĕш сăпатра =сем формант япала ячĕсенчи пекех: =ăр сăпат аффиксĕ вара глаголсен сăпат формине аса илтерет: кур=ат=п=ăр, кур=ат=ăр.

Сăпат, таврăну ятылмашĕсен вĕçленĕвĕ те япала ячĕсенни пек мар. Сăнаса пăхăр:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | эпĕ | эсĕ | хăв /ху/ | хăй |
| К. | ман | сан | хăвăн | хăйĕн |
| П. | мана | сана | хăвна | хăйне |
| В. | манра | санра | хăвăнта | хăйĕнче |
| Т. | манран | санран | хăвăнтан | хăйĕнчен |
| П. | манпа | санпа | хăвăнпа | хăйĕнпе |
| Ç. | мансăр | сансăр | хăвăнсăр | хăйĕнсĕр |
| П. | маншăн | саншăн | хăвăншăн | хăйĕншĕн |

Сăпат местоменисен тĕп падежра сăмах тĕпĕ - эпĕ, эсĕ, вăл, вĕçленекен тĕп пачах та урăх: ман, сан, ун е манăн, санăн, унăн.

Хам таврăну ятылмашĕ икĕ тĕрлĕ вĕçленĕве лекме пултарать:

| | Тĕп вĕçленӳ | | Камăнлăх вĕçленĕвĕ | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | хам | хам | танл. | хăй |
| К. | хамăн | хамăн | – | хăйĕн |
| П. | хама | хамăнне | хăйне | хăйĕнне |
| В. | хамра | хамăнче | – | хăйĕнче |
| Т. | хамран | хамăнчен | – | хăйĕнчен |
| П. | хампа | хамăнпе | хăйпе | хăйĕнпе |
| Ç. | хамсăр | хамăнсăр | хăйсĕр | хăйĕнсĕр |
| П. | хамшăн | хамăншĕн | хăйшĕн | хăйĕншĕн |

Нумайлă хисепри сăпат ятылмашĕсем хутăш вĕçленӳре пулнине кăна кăтартаççĕ тĕпчевçĕсем:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | эпир | эсир | вĕсем |
| К. | пирĕн | сирĕн | вĕсен |
| П. | пире | сире | вĕсене |
| В. | пирте | сирте | вĕсенче |
| Т. | пиртен | сиртен | вĕсенчен |
| П. | пирĕнпе | сирĕнпе | вĕсемпе |
| Ç. | пирĕнсĕр | сирĕнсĕр | вĕсемс |
| П. | пирĕншĕн | сирĕншĕн | вĕсемшĕн |

Анчах та ку местоименисем камăнлăх вĕçленĕвне те лекеççĕ. Нумайлă хисепри камăнлăх=сăпат местоменийĕсем вара тĕп тата камăнлăх вĕçленĕвĕнче пулма пултараççĕ.

Паллах, сăпат тата таврăну=сăпат ятылмашĕсем хăйсене кăна тивĕçлĕ евĕрлĕх категорийĕнче пулаççĕ: <u>манашкал</u>, <u>санашкал</u>, <u>унашкал</u>, <u>пирĕнешкел</u>, <u>сирĕнешкел</u>; <u>хамашкал</u>, <u>хăвнашкал</u>, <u>хăйнешкел</u>, <u>хамăрашкал</u>, <u>хăвăрашкал</u>, <u>хăйсенешкел</u>.

Кунта çакна палăртса хăвармалла: евĕрлĕх категорийĕ сăмах улшăнăвĕнче мар, сăмах формин улшăнăвĕнче палăрать: [x]<u>вышкал</u> <u>=шкал/=шкел/</u> аффикс пару падеж кӳлепи çумне хушăнать: <u>ман=е=шкал</u> – <u>ман=а</u> вышкал "евĕрлĕ" тенинчен пулса кайнă.

Кăтарту ятылмашĕсем туллин ущăнакăнни шутне кĕреççĕ: <u>ку</u>, <u>çак/ă/</u>, <u>çав/ă/</u>, <u>леш/ĕ/</u> сăмахсем пĕрреллĕ хисепре чухне ялачах камăнлăх вĕçленĕвĕнче, нумайлă хисепре чухне хутăш вĕçленӳре пулаççĕ. Евĕрлĕх категори форми вĕсен çапларах йĕркеленет: <u>кунашкал</u>, <u>çакнашкал</u>, <u>çавнашкал</u>, <u>лешнешкел</u>,

Хăй сăмаха /хушăран тĕпчевçĕсем хайхи палăрту формине те кăтартту ятылмашĕ теççĕ/ вĕçленменнине, нумайлă хисепре пулманнине, евĕрлĕх категорийĕн =шкал аффиксне йышăнманнине шута илсен ăна кăтарту тытăкĕ темелле.

Н.И.Ашмарин тата Н.А.Андреев[I] кăтарту местоименийĕсем тесе пăхнă апла, çапла, капла сăмахсем вĕçленмеççĕ, нумайлă хисепре пулмаççĕ, евĕрлĕх категорийĕн =шкал/=шкел/ аффиксне йышăнмаççĕ. Ку сăмахсем танлаштару форминче пулма пултарнине шута илсен, вĕсене наречи темелле.

Ыйту ятылмашĕсем те туллин улшăнаççĕ: кам, мĕн, хăш/ĕ/ сăмахсем вĕçленеççĕ, нумайлă хисепре пулаççĕ, евĕрлĕх категорийĕн =шкал/=шкел/ аффиксне йышăнаççĕ: камашкал, мĕнешкел, хăшнешкел. Миçе кăтарту ятылмашĕ туллин улшăнманнисен шутне кĕрет, вăл вĕçленет, нумайлă хисепре те пулма пултарать /Миçесем тĕлнелле килмелле?/, анчах евĕрлĕх категорийĕн =шкел аффиксне йышăнмасть.

Ĕлĕкрех чăваш чĕлхинче мĕн ыйту ятылмашĕ сăпат аффиксĕсене йышăннă пулнă: I. Мĕнĕм /I-мĕш сăпат/ çук-ши суртăмра /К.Ив./. 2. Санăн унта мĕнӳ пур, мĕнӳ /2-мĕш сăпат/ пур? – Манăн унта чĕппĕм пур, чĕппĕм пур /Фольк./. 3. Лаши мĕнĕ, Сурчĕ мĕнĕ ... Юлашки тĕслĕхре мĕнĕ сăмах форми пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшĕпе çӳрет, 3=мĕш сăпатра тăрать.

## 2 §. Тулли улшăнман ятылмашĕсем

Çуклăх, паллă мар, паллă местоименисенчен чылайăшне тулли улшăнманнисен шутне кĕртмеллее.

Çуклăх местоименийĕсем тесе пăхнă никам, нимĕн /ним/, нихăшĕ ятылмашĕсем вĕçленеççĕ, анчах та нумайлă хисепре тата евĕрлĕх категорийĕнче пулмаççĕ. Вĕçленӳре анлă усă куракан формăсемпе пĕрлех сайра тĕл пулакан /е пачах усă курман/ формăсем те пур. Сăмахран, нимĕн/ним/ çуклăх ятылмашĕ вырăн падежĕнче тĕл пулмасть тесен те йăнăш пулмасть: нимĕнре /нимре/ тесе эпир час=часах каламастпăр, анчах та хăш=пĕр падеж формисемпе анлă усă кураççĕ.

---

[I] Ашмарин Н.И. Материалы для исследования чувашского языка. Казань, 1898. С.194; Андреев Н.А. Местоимение // Материалы для исследования чувашского языка: Морфология. Ч.I.Чебоксары, 1957.С.129.

Н.И.Ашмарин словарӗнче /А.IX,24/ ҫакӑн пек тӗслӗхсем панӑ: 1.Сахӑрнӑй песок пӗтсен, ҫырласемпе ӗҫкелерӗмӗр те, ниме пымас. 2. Нимрен шурӑ хырӑнваррисем. 3. Нимӗншӗн те ҫилленместӗп. 4. Вара вӗсем кунӗсене нимӗнсӗрех ҫухатнӑ /27 с./.

Ним /нимӗн/ ятылмашӗ палӑрту форминче пулать: нимӗнскер, нимӗскер: Патша кӗтнӗ=кӗтнӗ Иван салтака, анчах нимӗскер хыпар та пулман /27 с./.

Такам, темӗн, тем, тахӑш, темиҫе паллӑ мар ятылмашӗсене те тулли улшӑнманнисен шутне кӗртмелле. Вӗсем падеж тата хисеп тӑрӑх улшӑнаҫҫӗ, анчах евӗрлев категори формине йышӑнсах каймаҫҫӗ. Н.И.Ашмарин словарӗнчи тӗслӗхсене сӑнар /А.XIII,153-154/. 1. Такамӑн пур вӑл, пирӗн ҫук. 2. Парасса патӑм та, такама патӑм. 3. Такамсем ҫӗрле килнӗ те ... 4. Такамран ыйтсан та, ҫакниш ҫинчен калама пулать. 5. Эсӗ ачам, такамшӑн такам пултӑн, маншӑн турах пултӑн.

Хӑш чухне каласа пӗтермен шухӑша пӗтӗмлетме темӗн ятылмашӗн нумайлӑ хисеп формипе усӑ кураҫҫӗ: Унтан лерелле вара Кӳренсем=темӗнсем каяҫҫӗ /А.XIII,283/. Кӳрен кунта ял ячӗ, апла пулсан темӗнсем тени "Кӳрен ялӗ тата ытти ялсем" тенине пӗлтерет.

Темӗн местоименин улшӑнакан кӳлепӗсем тӗрлӗрен пулма пултараҫҫӗ: темскер /темӗнскер/ – палӑрту форми; темӗнле – евӗрлӗх форми; темӗнчен /темичен/ – тӑсӑмлӑх форми; темӗскерле – палӑрту форми + евӗрлӗх форми; темӗскерлескер тенӗ чух евӗрлӗх форми каллех палӑрту формин =скер аффиксне йышӑнать.

Н.И.Ашмарин словарьне ӗненес пулсан, темӗн местоимени ытти ятылмашӗсене тивӗҫлӗ =шкел аффикса та йышӑчать: Пайн пурсӑмӑр та сыв=халлӑ, ыранчен темнешкел пурнатпӑр /А.XIII,228/.

Темиҫе ятылмашӗн ҫакӑн пек формӑсем пулма пултараҫҫӗ: темиҫен=мӗнлелӗх форми; ун пек чухне вӑл паллӑ мар хисепе вӑйлӑрах палӑртать: Ҫӗрле пулсан шуйттан ҫурисем темиҫен анчӗҫ тет /А.XIII,282/: темиҫешер – валеҫӳ форми: Ҫӗрйӗркелӳ ӗҫне тӗпӗ=йӗрӗпех туса пӗтересси халех пулас ҫук=ха, темиҫешер ҫул та иртсе кайӗ /А.XIII,282/; темиҫешӗ – 3-мӗш сӑпат форми: Темиҫӗшне укҫа пачӗ /А.XIII,282/.

Тулли улшӑнман ятылмашсем шутне пур, пурте, кашни, ытти, тепӗр сӑмахсем кӗреҫҫӗ. Вӗсем пурте вӗҫлонеҫҫӗ, анчах та нумайлӑ хисепре ытти ятылмашӗ кӑна пулма пултарать: ыттисем, нумайлӑ хисепре пулса вӑл туллин вӗҫленет. Ку местоименисем евӗрлӗх категорийӗнче пулмаҫҫӗ.

Пур тулли мар сăпатланура пулать:

| | пĕр. х. | нум. х. |
|---|---|---|
| I с. | - | пурсăмăр, пурăмăр |
| 2 с. | - | пурсăр, пурăр |
| 3 с. | пурĕ, пурĕш/ĕ/ | пурĕ |

Сан лашу лайăх, шухă та, пурăмăр кăмăлне килет. Пирĕн ялти çынсем пурĕш те хăйсен тĕлне йывăçсем лартса хăварнă. Пурăр та... /А IX 294/.

Пурте ятылмашĕн вĕçленĕвĕнче çакна асăрхама пĕлмелле: те татăк тĕп падежра анчах пĕрле çырăнать, ытти падежсенче вăл уйрăм тăрать: пурин те, пурне те, пуринче те, пуринчен те, пуринпе те, пуринсĕр те, пуриншĕн те. Анчах та пуртепе пĕрех текен сăмах майлашăвĕнчи пуртепе тенине пĕрлех çырмалла.

## 3 §. Улшăнман ятылмашĕсем

Чăваш чĕлхинче паллă местоименисем тесе пăхнă харкам тата харпăр сăмахсем улшăнманнисен шутне кĕреççĕ, вĕсем вĕçленмеççĕ, нумайлă хисепре пулмаççĕ, еверлĕх категорийĕн аффиксне те йышăнмаççĕ. Çитменнине тата харпăр местоимени хальхи чĕлхере хăй таврăу=сăпат ятылмашĕпе кăна çӳрет: харпăр хăй тени сăмах майлашăвĕн /е çаврăнăшĕн/ ретне кĕрет, çавна май çырĕпленсе ларнă сăмах майлашăвĕнчи пĕрремĕш компонент улшăнмасть теме пултаратпăр. Ун пек тĕслĕхсене эпир япала ячĕсенче тата паллă ячĕсенче куртăмăр: чул çурт, тӳрĕ пилĕк, тăм писмен.

Ĕлĕкрех харпăр ятылмашĕ те пирĕн чĕлхемĕрте хăйне уйрăммăн çӳремен пулмалла, харпăр хăй текен сăмах майлашăвĕн тытăмĕнче тăнă тесе шутлама май пур. Хальхи чĕлхере харпăр уйрăммăн çӳреме пултарнă май 3-мĕш сăпат аффиксне йышăнать: харпăрăшĕ /А.ХУ, 62/.

Паллах, харкам хăй, харпăр хăй сăмах майлашăвĕсенчи иккĕмĕш компонент вĕçленет

| | | |
|---|---|---|
| Т. | харкам хăй | харпăр хăй |
| К. | харкам хăйĕн | харпăр хăйĕн |
| П | харкам хăйне | харпăр хăйне |
| В | харкам хăйĕнче | харпăр хăйĕнче |
| Т | харкам хăйĕнчен | харпăр хăйĕнчен |

4-мĕш ӳкерчĕк

# ЯТЫЛМАШĔ

## I. Тул ин улшăнакан ятылмашĕсем

Сăпат ятылмашĕсем | Таврăну=сăпат ятылмашĕсем | Ыйту ятылмашĕсем | Кăтарту ятылмашĕсем

Вĕсем пурте иртнĕ вăхăт тата вăйлату категорисенче пулса улшăнни

## II. Туллин улшăнман ятылмашĕсем

Çуклăх ятылмашĕсем | Паллă мар ятылмашĕсем | Паллă ятылмашĕсем | Миçе кăтарту ятылмашĕ

## III Улшăнман ятылмашĕсем

Харкам /хăй/ | Паллă ятылмашĕсем улшăнманни | Харпăр хăй

| | | |
|---|---|---|
| П. | харкам хăйĕнпе | харпăр хăйĕнпе |
| Ç. | харкам хăйĕнсĕр | харпăр хăйĕнсĕр |
| П. | харкам хăйĕншĕн | харпăр хăйĕншĕн |

Н.И.Ашмарин словарĕнче иккĕмĕш компонент вырăнне таврăну местоименийĕн иккĕмĕш сăпатĕнчи ху /хăв/ сăмах та тăма пултарнине палăртнă: Харпăр хăвăршăн анчах ан тăрăшăр /А.ХУI.62/. Харпăр хăй сăмах майлашăвĕсенчи хăй местоимени нумайлă хисепĕн -сем аффиксне йышăннин тĕслĕхĕсем çук.

## ПИЛЛĔКМĔШ ПАЙ. ĔÇХĔЛ /ГЛАГОЛ/

Ĕçĕн тăрăмне, куçăмне, пулăвне, пĕр енчен, наклонени /тайăм/, вăхăт, сăпат, хисеп аспект категорийĕсемпе, тепĕр енчен, пайташ /причасти/, ĕçхĕлтеш /деепричасти/, паллăмарлав /инфинитив/ категорийĕсемпе кăна кăтартакан сăмахсене ĕçхĕл /глагол/ темелле.

Ĕçхĕлсен йышĕ чĕлхере чылай, вĕсем словарьте хăйсен йышĕпе пĕрремĕш вырăнта тăраççĕ. Сăмахсен йышне курах пулĕ грамматика категорийĕсем те чылай. Япала ячĕсен сăмах улшăнăвĕнче 5 е 6 категори форми пулсан, ĕçхĕлсенче категори формисен хисепĕ I5-рен те иртет. Глаголсен сăмах формин улшăнăвĕнче, япал ячĕсенчи пекех падеж, хисеп категорийĕсем хуçаланнине курма пулать. Ĕçе кам пурнăçланине кăтартнă чухне эпир сăпат формисемпе, ĕç пулнипе пулманнине сăнарланă чух çирĕплетÿ тата хирĕçлев аспекчĕн формисемпе ĕç хăçан пулнине палăртнă чухне вăхăт кÿлеписемпе усă куратпăр. Глаголсенче вăхăт пĕлтерĕшĕ тĕрлĕрен палăрать: ăна ятарлă вăхăт аффиксĕсемпе, хальхи, иртнĕ, пулас пайташ аффиксĕсемпе те кăтартма пулать. Çитменнине тата ĕмĕт тайăмĕнче пулас вăхăт пĕлтерĕшĕ тĕвĕленнине /вулăттăм, ĕçлĕттĕм/, =чĕ /=ччĕ/ аффикс иртнĕ вăхăт пĕлтерĕшне тепĕр хут палăртма пултарнине манмалла мар: çырнăччĕ, курсаччĕ, ĕçлеттĕмччĕ. Глагол формисен икĕ ушкăна /сăпатлă тата сăпатсăр/ уйăрни тĕрĕсе килсех пымасть: =са/=се/ аффикслă ĕçхĕлтешсем /деепричастисем/ сăпатланаççĕ:

| | | |
|---|---|---|
| I. Эпĕ | кур=са=тт=ăм | пĕл=се=тт=ĕм |
| 2. Эсĕ | кур=са=тт=ăн | пĕл=се=тт=ĕн |
| 3. Вăл | кур=са=чч=ĕ | пĕл=се=чч=ĕ |

Пулас пайташ формисем сăпат аффиксĕсене ирĕкĕнех йышăнаççĕ

| | |
|---|---|
| I. вуласс=ăм | килесс=ĕм |
| 2. вуласс=у | килесс=ÿ |
| 3. вуласс=и | килесс=и |

Çавăнпа та ку формăсене сăпатсăр теме май çук

### I §. Тулли улшăнман ĕçхĕлсем

Тайăм /наклонени/, вăхăт, сăпат, хисеп, пайташ, ĕçхĕлтеш,

паллăмарлав категорийĕсенче пулакан глаголсене списокпа пама май çук. чĕлхери пур глагол та çак категори формисене йышăнма пултарать, туллин улшăнать. Калаçнă, çырнă чухне эпир сисместпĕр те - глаголăн тĕрлĕ=тĕрлĕ кӳлепиcем хăйсемех пирĕн калаçăва, çырăва шăрçалаççĕ. Сăвă сĕвĕмĕнчен çак йĕркесене илсе пăхар=ха:

Хĕре çут çăлтăр парнеленĕ
Тесе юрлатчĕç ĕлĕкрех
Кăна пĕлместĕп, кам ĕненĕ ...
Сана эп парас çук пĕрех...
Эс мĕн пит ăмсанса тăратăн?
Сана та çăлтăр кирлĕ тем?
Эп çĕнĕ спутниксем ятратăп
Вĕсем пулаç сан çăлтăрсем. /Д Яшин/

Кашни йĕркере тенĕ пекех ĕçхĕл /глагол/ пур, анчах та вĕсенчен кашниех тĕрлĕрен категори формисене йышăннă.

парнеленĕ - иртнĕ пайташ, тепĕр чух ăна курмасăр иртнĕ вăхăт та теççĕ, кам парнеленĕ - сăпачĕ /хуçи, çынни/ паллă мар,

тесе - ĕçхĕлтеш кӳлепи,

юрлатчĕç - темиçе иртнĕ вăхăтри глагол, виççĕмĕш сăпатра нумайлă хисепре, ку сăпатлă формăра пулсан та ĕçне тăваканне /юрлаканне/ курăймастпăр, пĕлейместпĕр, шухăшлав /логика/ тĕлĕшĕнчен сăпатсăр пулса юлать вăл çапла майпа, пĕлместĕп - хальхи вăхăтри, хирĕçлев аспектĕнчи , пĕрреллĕ хисепри, пĕрремĕш сăпатри глагол,

ĕненĕ - пулас вăхăтри, 3-мĕш сăпатри форма,

парас çук - пулас пайташăн хирĕçлев тăрăмĕ, хальхи чĕлхере /памас/ морфологи мелĕпе сайра=хутра кăна пулнине сăнасан, синтаксис мелĕпе пулнă форма хăй вырăнĕнчех шутланать;

тăратăн, ятратăп - хальхи вăхăтри глаголсем, сăпачĕсем кăна расна, пулаç /пулаççĕ/ - хальхи вăхăтри нумайлă хисепри, 3-мĕш сăпатри глагол, анчах унта хальхи вăхăт пĕлтерĕшĕпе пĕрлех пулас вăхăт пĕлтерĕшĕ те тĕвĕленнĕ. Вулакан юлашки йĕркене çапла вуласа ăнланать:

Вĕсем пулĕç сан çăлтăрусем.

Илсе тишкернĕ сăвă йĕркисенчен çакă курăнать: глаголăн формисем питех те тарăн та анлă пĕлтерĕшлĕ.

## 2 §. Ĕçхĕлсен тулли мар улшăнăвĕ

Кирек мĕнле ĕçхĕл те вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх улшăнма пултарать, çавна май кирек мĕнле глагол та тăрăм /аспект/ категорийĕсенче пулмалла пек. Анчах та хушу тайăмĕн /наклоненийĕн/ хирĕçлев аспекчĕ морфологи /аффикс/ мелĕпе палăраймасть, ку чухне синтаксис мелĕ хуçаланать:

пĕрреллĕ хисеп

| | | |
|---|---|---|
| I с | вулам мар | пĕлем мар |
| 2 с. | ан вула | ан пĕл |
| 3 с. | ан вулатăр | ан пĕлтĕр |

нумайлă хисеп

| | | |
|---|---|---|
| I с | вулар мар | пĕлер мар |
| 2 с. | ан вулăр | ан пĕлĕр |
| 3 с | ан вулаччăр | ан пĕлччĕр |

Синтаксис мелĕпе пулнă хирĕçлев аспектне эпир сăмах улшăнăвĕ тесе пăхаймастпăр; çавăн пекех хушу тайăмĕнчи ĕçхĕлсем пулаюлăх тата пулаюсăрлăх тăрăмĕсенче те пулаймаççĕ. Çапла вара, хушу тайăмĕнчи ĕçхĕлсен тулли мар улшăнăвĕ пирки калаçма май килет.

Ĕçхĕлсен тулли мар улшăнăвĕ вăйлату кĕлепинче палăрать: =ала /=еле/ аффикса йышăнма пултаракан глаголсене списокпа пама пулать:

| | |
|---|---|
| вĕт - вĕтеле | чав - чавала |
| илт - и/л/т/е/ле | сул - сулла |
| ху - хăвала | сĕ - сĕвеле/н/ |
| чĕр - чĕрмеле | сап - сапала |
| хып - хыпала | |

Чăваш чĕлхинчи залог категорийĕ пирки татăклăн калани çук. Шкул учебникĕсенче залог аффиксĕсене пурне те сăмах тăвакан аффикссен ретĕнче пăхнă. Аслă шкулăн чĕлхе пĕлĕвĕн программисенче залог категорийĕ пуррине çирĕплетнĕ: тĕп, таврăну, хире-хирĕçлех, хистев залогĕсем пуррине палăртнă: В.Г.Егоров вара залог аффиксĕсене сăмах тăвакан аффикссем тесе шутланипе пĕрлех чĕлхемĕрте залог категорийĕ пурри çинчен те сăмах хускатать те кашни залоган уйрăмлăхĕсене çырса кăтартать.

гӑн уйрӑмлӑхӗсене ҫырса кӑтартать[I]. Ҫапла вара залог аффиксӗсем сӑмах тӑвакан аффикссем те, ҫав вӑхӑтрах сӑмаха улӑштараканнисем те пулса тухаҫҫӗ.

Кунта ҫакна шута илмелле: таврӑну,хире=хирӗҫлӗх залогӗн аффиксӗсем пур глагол тӗпӗ ҫумне те хушӑнаймаҫҫӗ, суйлавлӑх принципне пӑхӑнакан кӳлепесене ниепле те категори форми тесе пӑхма май ҫук, вӗсене /сӑмах улшӑнӑвӗнче пӑхас пулсан/ категорисӗр формӑсем тесе кӑна шутламалла. Таврӑну, хире=хирӗҫлӗх залогӗсен аффиксӗсене йышӑнакан глаголсене списокпа пама пулать.

Таврӑну залогӗн пӗлтерӗшне йышӑнаканнисем: ҫапӑн, ҫӑвӑн, ҫӑлӑн, мухтан, парӑн, пытарӑн, салтӑн, илтӗн, хывӑн, чӳхен, хырӑн, чӗркен, шӑлӑн, авӑн, ваклан, хупӑн, хушӑн, хӗсӗн, ҫаврӑн, юсан, тытӑн, витӗн, суйлан, ҫырӑн, таптан, штрафлан, шутлан т.ыт.те.

Ҫав вӑхӑтрах ҫак глаголсене икӗ тӗрлӗ ӑнлантарма май пур:

сыхлан: =лан - сӑмах тӑвакан аффикс,
сыхлан: сыхла=н - залог кӳлепи;
хатӗрлен - хатӗр + =лен;
хатӗрлен - хатӗрле + =н;
йӑвалан - йӑва + =лан;
йӑвалан - йӑвала + =н;
ҫӗклен - ҫӗк /-ҫӑк/ + =лен;
ҫӗклен - ҫӗкле + =н;
хурлан - хур + =лан;
хурлан - хурла + =н;
пуҫлан - пуҫ + =лан;
пуҫлан - пуҫла + =н;
пӗвелен - пӗве + =лен;
штрафлан - штраф + =лан;
штрафлан - штрафла + =н т.ыт.те.

Таврӑну залогӗн тепӗр тӗрлӗ кӳлепи =ӑл/=ӗл/ аффикспа пулать. В.Г.Егоров ӑнлантарнӑ тӑрӑх, авалхи чӗлхере =ӑн/=ӗн/ сыннӑн ӗҫне=хӗлне, =ал/=ӗл/ чӗрӗ мар япаласен тӑрӑмне палӑртнӑ[2]. Хальхи чӗлхере вӗсен пӗлтерӗшӗсене ун пек уйӑрса палӑртма ҫук: =ӑл/=ӗл/ аффикс р,с,ҫ,т сасӑсемпе пӗтекен глагол тӗпӗсем ҫумне ҫеҫ ху-

---

[I] Егоров В.Г. Глагол // Материалы по грамматике современного чувашского языка: Морфология. Ч I. Чебоксары, 1957. С. 166-176.
[2] Егоров В.Г. Асӑннӑ ӗҫ. 170 с.

5-мĕш ӳкерчĕк

# ĔÇХĔЛ /ГЛАГОЛ/

## I. Ĕçхĕлсен тулли улшăнăвĕ

- Тайăм /наклонени/
- Вăхăт
- Сăпат
- Хисеп
- Пайташ
- Ĕçхĕлтеш
- Паллăмарлав /Инфинитив/

## II. Ĕçхĕлсен тулли мар улшăнăвĕ

- Вăйлату кӳлепи
- Таврăну залогĕ
- Хире-хирĕçлĕх залогĕ
- Хушу тайăмĕ хирĕçлев, пулаюлăх, пулаюсăрлăх аспекчĕсенче пулманни

шӑнать: катӑл, пӑсӑл, сарӑл, сирӗл, ҫурӑл, ҫутӑл, уҫӑл, татӑл, хуҫӑл, ҫӑсӑл, вӗрӗл, хирӗл т.ыт.те.

Хире=хирӗҫлӗх залогӗн аффиксӗсем ҫаксем: =ӑҫ/=ӗҫ,=ҫ/, =ӑш/=ӗш,=ш/, =аш/=еш/; вӗсем те суйлавлӑх принципне пӑхӑнаҫҫӗ, ку аффикслӑ кӳлепесен те шучӗ йышлӑ мар: вӑрҫ, калаҫ, курнӑҫ, ҫураҫ, тапӑҫ, тытӑҫ, ятлаҫ, хирӗҫ, ахӑраш, кӑшкӑраш, килӗш, паллаш, пулӑш, ҫухӑраш, тӗкӗш, сӗкӗш, анраш, савӑш, туллаш, туртӑш, тӳпелеш, хаклаш.

Ытти глаголсем ку аффикссене йышӑнаймаҫҫӗ.

Хистев залогне категори форми тесе пӑхма та май пур, ун пек чухне =тар/=тер/, =ттар/=ттер/, =ар/=ер, =т,=ат/=ет/ аффикссене пӗр аффиксӑн варианчӗсем тесе шутлама лекет. Ку аффикссене вариантсем тесе пӑхмасан, вӗсен суйлавлӑх принципне сӑнама лекет: =т,=ат/=ет/ аффикссем сайра=хутра кӑна хӑш=пӗр глагол тӗпӗсем ҫумне хушӑнаҫҫӗ: тарт, ташлат, хӑрат, хӑпарт, вӗрет, кӗрт, ҫӗлет, чӗтрет, ҫӳрет, ларт, йӗрт, макӑрт, ҫывӑрт - ҫывӑрат, тӑрант, вӗрент. Хушӑнасса та =ат/=ет,=т/ аффикс а,е,н,р сасӑсемпе пӗтекен глагол тӗпӗсем ҫумне ҫеҫ хушӑнаҫҫӗ

Вӗлер, пӗҫер кӳлепесем грамматика тӗлӗшӗнчен икӗ пӗлтерӗшлӗ пулма пултараҫҫӗ, ӑна эпир ку кӳлепесем умне сӑпат ятылмашӗсем лартса пӗлме пултаратпӑр;

I/ эсӗ: пӗҫер, пиҫ=ер; вӗлер - вил=ер;

2/ эпир: пиҫер, вилер.

Пӗрремӗш пайӗнчи пӗҫер, вӗлер глаголсем эсӗ местоименипе ҫыхӑнса хистев залогӗн пӗлтерӗшӗпе ҫӳреҫҫӗ , иккӗмӗшӗнче /эпир/ пиҫер, вилер тенисем хушу тайӑмӗнчи /наклоненийӗнчи/ кӳлепесем шутланаҫҫӗ.

## УЛТТĂМĔШ ПАЙ . ĔÇХĔЛÇУМĔ /НАРЕЧИ/

Ĕçĕн, япалан е паллăн паллине пĕлтерекен, туллин вĕçленмен, сăпатланман, хушăран нумайлă хисепре, палăрту тата танлаштару формисенче пулакан сăмахсене ĕçхĕлçумĕсем темелле.

Ĕçхĕлçумĕсен хисепĕ чĕлхемĕрте аллăран та иртмест, анчах та ку тăранччен вĕсен ретне сăмаха улăштаракан аффикссемпе пулнă тĕрлĕ формăсенчи сăмахсене кĕртсе тултарнă. Акă =ла/=ле/, =лла/ =лле/ аффиксăн сăмах тăвас статусĕ çук пулин те ăна наречи тăвакан аффикс тенĕ. Ку аффикс деривацн аффиксĕ пулманнине ĕнентерме йывăр мар: вăл чылай пуплев пайĕнчи сăмахсем çумне хушăнать: I/ япала ячĕсем çумне: ачалла, кашкăрла, мечĕкле, шашкăлла, футболла, укçалла, тырăлла; пайăр ятсем çумне: Петĕрле, Валери Чкаловла т.ыт.те; 2/ паллă ячĕсем çумне: çĕнĕлле, кивĕлле, вĕрилле, сивĕлле, ухмахла, пушăлла, типĕлле, тĕттĕмле, чăмăрла т.ыт.те.; 3/ хисеп ячĕсем çумне: виççĕлле /явнă чĕн пушă/, пĕрле /пурăн/, çиччĕлле /хуçнă çăпата/; 4/ местоименисем çумне: санла, хамăрла, пирĕнле, хăйсемле т.ыт те ; 5/ глаголăн тĕрлĕрен формисем çумне: курманла /çи/, шăтарасла /пăх/.

Тĕпчевçĕсем ытларах чухне =ла/=ле/ аффикс япала ячĕсем çумне хушăннине анчах çырса кăтартаççĕ, анчах та местоименисем, причасти формисем наречие тухма пултарайманнине шута илмеççĕ

Çыравçăсемпе сăвăçăсем =ла/=ле/ аффикслă пайăр ят наречие куçманнине питĕ лайăх ăнланаççĕ те Яковлевла, Пришибеевла, Ленинла, Валери Чкаловла пайăр ятсене пысăкранах çыраççĕ, чĕлхеçĕсем вара хăйсене хирĕçлесех çав сăмахсене наречи тесе ĕнентереççĕ, анчах пĕчĕкрен пуçласа çырса оригинала пăсмаççĕ

Çавăн пекех =ăн/=ĕн аффикс шăпи те уçăмлă пулман: алăкăн= тĕпелĕн /ут/ тенĕ чухне; ачашшăн, ăшшăн, сиввĕн паллă ячĕсенче ăна наречи тăвакан аффикс тенĕ; иккĕн, виççĕн хисеп ячĕсене наречи теме хăяймасăр пĕтĕмлетӳ хисепĕсем тесе пăхнă, иртнĕ причасти çумне хушăнакан =ăн/=ĕн/ авалхи инструмент падежĕ пулса тăчă[1], пулас причасти форми çумне хушăннă чухне /курассăн, пулассăн, юлассăн/ вăл мĕн аффиксĕ пулни пирки пĕр сăмах та шарламан. Пирĕн шутпа, валентноçне кура =ăн/=ĕн/ аффикс сăмах тăвакан аффикс мар, вăл сăмаха улăштараканнисен шутне кĕрет.

---

[1]Павлов И.П Хальхи чăваш литература чĕлхи Морфологи. Шупашкар, 1965 276 с

Наречи тăваканнисен шутне =чен,=серен аффикссене кĕртнине тĕрĕс тĕсе шутлама çук.

Икĕ падеж пĕрлешнипе пулнă çыхăнусене пĕр аффикс тесе пăхни те /ача=ран=па, иртенпе, уйăхранпа, ĕмĕртенпе/, сăмахсем пĕр-пĕр формăра çирĕпленсе ларнипе пулса кайнă наречисем /эрнипе, малтанласа, кĕтÿлетсе/ тени те тĕрĕс килсе тухмасть.

Кĕркунне, çуркунне сăмахсем, кĕр, çур сăмахсем пекех, япала ячĕ шутланма тивĕç, мĕншĕн тесен вĕсем вĕçленеççĕ, нумайлă хисепре пулаççĕ.

Мал, кай сăмахсене ум, хыç сăмахсемпе пăтраштарма кирлĕ мар. Ум, хыç сăмахсем вĕçленеççĕ, камăнлăх=сăпат категорийĕн аффиксĕсене йышăнаççĕ: умăмра, хыçăмра; умăнта, хыçăнта; умĕнче, хыçĕнче. Мал, кай сăмахсем туллин вĕçленмеççĕ /мала, кая; малта, кайра; малтан, кайран/, нумайлă хисепре пулмаççĕ, сăпатланмаççĕ, апла пулсан, вĕсем наречисем.

## I § Ĕçхĕлçумĕсен улшăнăвĕ

Ĕçхĕлçумĕсен хăйсене кăна тивĕçлĕ категори формисем çук. Анчах та хăй пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсене тивĕçтерекен иртнĕ вăхăт /тăрăм/ тата вăйлату категорийĕсем ĕçхĕлçумĕсене те пур енлĕн витереççĕ. Иртнĕ тăрăма палăртса =чĕ/=ччĕ/ аффикс пур уш - кăнри наречисем çумне те хушăнать. Вăйлату сĕмне кĕртекен =ах/ =ех,=х/ аффикс та пур ĕçхĕлçумĕ çумне те хушăнать. Тĕпчевçĕсем час-часах çак уйрăмлăха асăрхамасăр вăйлату формине сăмах тĕпĕ вырăнне сĕнеççĕ: пачах, йăлтах, вуçех; анчах та ку лексемăсенче сăмах тĕпĕсем пач, йăлт, вуç пулмалла, вĕсем наречисем шутланмалла.

Наречисене улшăнман пуплев пайĕсен шутне кĕртесси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. "Унăн / наречин. - В.С./ пуплев пайĕн уйрăмлăхне кăтартакан морфологи паллисем çук"[2] иккен. Пирĕн шутпа, ĕçхĕлçумĕ туллин улшăнманни те морфологи паллиех шутланать, çавна май предложенири функцине /синтаксис паллине/ асра тытма кирлех те мар пек.

[2]Павлов И.П. У-УI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985. 99 с.

## 2 § Ĕçхĕлçумĕсен тулли мар улшăнăвĕ

. Ĕçхĕлçумĕсем хушăран тулли мар вĕçленӳре пулнине курма пулать. Паян, ыран, ĕнер, кăçал сăмахсем икĕ-виçĕ падеж аффиксне кăна йышăнаймаççĕ: паянăн, ыранăн, паянта, ыранта тени çук чĕлхере.

Улĕм, ĕлĕк сăмахсем икĕ падежра пулма пултараççĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Тĕп падеж | ӳлĕм | ĕлĕк | авал |
| Тух. падеж | ӳлĕмрен | ĕлĕкрен | авалтан |

Хăш-пĕр наречисем пачах та вĕçленмеççĕ: пач, юри, ӳпне, сасартăк.

Ĕçхĕлçумĕсем сайра-хутра танлаштару форминче пулма пултараççĕ: а/ вăхăт наречийĕсем: ĕлĕк-ĕлĕкрех, час- часрах, авал - авалтарах, тин - тинтерех, анчах - анчахрах, вара - варарах, халь - хальтерех, паçăр - паçăртарах,

ă/ вырăн наречийĕсем: лере - лererех, таçта - таçтарах, кунта - кунтарах,

б/мĕнлелĕх наречийĕсем: апла - апларах, çапла - çапларах, капла - капларах,

в/ виçепе степень наречийĕсем: самайрах, ытларах.

Хушăран наречисем палăрту кӳлепин -и,-скер,-хи аффиксĕсене йышăнма пултараççĕ: апли, капли, апласкер, çапласкер, капласкер; паçăрхи, яланхи, паянхи, ыранхи, тахçанхи, ĕлĕкхи, авалхи, хальхи.

## 3 § Пач улшăнман ĕçхĕлçумĕсем

Пĕртте, ӳпне, йышши ĕçхĕлçумĕсем хăйсем çумне нимĕнле аффикс та йышăнасшăн мар, çавна май вĕсене улшăнманнисен йышне кĕртмелле.

6-мĕш ӳкерчĕк

I. Ĕçхĕлçумĕсен хăйсене тивĕçлĕ категорийĕсем çук

II. Тулли улшăнман ĕçхĕлçумĕсем

| Вăхăт наречийĕсен тулли мар вĕçленĕвĕ | Танлаштару форминче пулакан наречисем | Палăрту форминче пулакан наречисем | Иртнĕ вăхăтăн -чĕ /-ччĕ/ тата вăйлату формин -ах/-ех/ аффиксĕсене йышă - накан наречисем |
|---|---|---|---|

III Пачах улшăнман ĕçхĕлçумĕсем

Пĕртте, ӳпне

## ÇИЧЧĔМĔШ ПАЙ. ĔÇ ЯЧĔ

"Ĕç ячĕ" текен термин икĕ сăмах пĕрлешнипе пулнă: ĕç - ĕçхĕл пĕлтерĕшлĕ , ячĕ - ят сăмахсемпе çывăххине пĕлтерет: япала ячĕ, паллă ячĕ, хисеп ячĕ. Апла пулсан, ку ушкăна кĕрекен сăмахсем, пĕр енчен, глаголсемпе çывăх, тепĕр енчен, япала ячĕ евĕр туйă - наççĕ, анчах та грамматика /морфологи/ тĕлĕшĕнчен илсен вĕсем глаголсем те, япала ячĕсем те мар. Çак уйрăмлăха шута илсен ĕç ячĕсене çĕнĕ ушкăна уйăрма май пур. Глагол тĕпĕ çумне =у/=ӳ аффикс хушăннипе чăваш чĕлхинче япала ячĕ пулни тахçанах паллă сыру, пĕлтерӳ, куплу, юрату, кĕрешӳ т.ыт.те. Ку сăмахсем падеж, сăпат, хисеп тăрăх улшăнаççĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т | çыру | ĕненӳ | пĕлӳ |
| К. | çырăвăн | ĕненĕвĕн | пĕлĕвĕн |
| П. | çырăва | ĕненĕве | пĕлĕве |
| В. | çырура | ĕненӳре | пĕлӳре |
| Т. | çыруран | ĕненӳрен | пĕлӳрен |
| П. | çырупа | ĕненӳпе | пĕлӳпе |
| Ç. | çырусăр | ĕненӳсĕр | пĕлӳсĕр |
| П. | çырушăн | ĕненӳшĕн | пĕлӳшĕн |

### Камăнлăх сăпат категорийĕ

#### Пĕрреллĕ хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| I с | çырăвăм | ĕненĕвĕм | пĕлĕвĕм |
| 2 с | çырăву | ĕненĕвӳ | пĕлĕвӳ |
| 3 с | çырăвĕ | ĕненĕвĕ | пĕлĕвĕ |

#### Нумайлă хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| I с | çырăвăмăр | ĕненĕвĕмĕр | пĕлĕвĕмĕр |
| 2 с | çырăвăр | ĕненĕвĕр | пĕлĕвĕр |
| 3 с | çырăвĕ | ĕненĕвĕ | пĕлĕвĕ |

Нумайлă хисепре: çырусем, ларусем, пĕлӳсем, каналлусем, куплусем т.ыт те.

Анчах та глагол тĕпĕ çумне =у/=ӳ/ аффикс хушăннипе пулакан тепĕр ушкăнĕ вĕçленмест, сăпатланмасть, нумайлă хисепре пулмасть:

çапу, пыру, çӳрӳ йышши сăмахсем чĕлхемĕрте пĕрлелĕх падежĕнче пулнин тĕслĕхĕсем кăна пур:

Хапха тăрри шартлатать
Саламатпа çапупа./К Ив /

Лаши вĕçсе пырупа
Пичĕ=куçĕ пит усал./К.Ив /

Хоп та хоп! тесе хастаррăн
Харăс çапупа
Лăчăр=лачăр тарăн=тарăн
Тăрăнать юпа./Ухс./

Çӳлерех асăннă сăмахсен йышĕ чĕлхемĕрте пĕчĕкех мар А П Сергеев хатĕрленĕ "Чăваш чĕлхин тӳнтерлĕ словарĕнче" вĕсен хисепĕ 30 таран. Г Т Тимофеевăн "Тăхăрьял" кĕнекинче ĕç ячĕсен хисепĕ 20 çитет. Илемлĕ литературăри тĕслĕхсене пухас пулсан ĕç ячĕсен пĕтĕмĕшле хисепĕ 100 сăмахран иртсе каять. Вĕсенчен пĕри те сăпат аффиксĕсене йышăннин тĕслĕхĕсем çук. Нумайлă хисеп аффиксĕсене йышăнманнине шута илсе , вĕçленменнипе сăпатланнине тĕпе хурсан ĕç ячĕсене уйрăм пуплев пайĕ туса уйăрни тĕрĕсрех пулать.

7-мĕш ӳкерчĕк.

**ĔÇ ЯЧĔ**

---

I. Ĕç ячĕсен хăйсене тивĕçлĕ категорийĕсем çук

II. Тулли мар улшăну

---

Ĕç ячĕсем тĕп тата пĕрлелĕх падежĕсенче анчах пулни

III. Ĕç ячĕсем улшăнманни

---

Нумайлă хисепре пулманни, сăпатланманни

## САККĂРМĔШ ПАЙ. ЕВĔРЛЕВ СĂМАХĔ

Çутçанталăкри сас-чĕвве, шăв-шава, тĕрлĕ сăнлăхсемпе хусканусене евĕрлесе палăртакан, вăйлату, танлаштару, нумайлă хисеп, палăрту кĕлеписенче пулма пултаракан сăмахсене евĕрлев сăмахĕсем темелле.

Евĕрлев сăмахĕсен хăйсене тивĕçлĕ категорийĕсем çук. Вăйлату тата иртнĕ вăхăт категорийĕсен аффиксĕсене чылай пуплев пайĕсенчи сăмахсем йышăнаççĕ, категори формисене йĕркелеççĕ. Евĕрлев сăмахĕсем пирки эпир апла калаймастпăр. Пур евĕрлев сăмахĕ те =чĕ/=ччĕ/, =ах/=ех,=х/ аффикссене йышăнсах каймасть. Акă тупмалли юмахра тĕл пулакан ши тата пи /Ши кайрăм, пи кайрăм, çĕле кайрăм, çăмарта турăм/ сăнлăха евĕрлекен сăмахсем нихăш енчен те улшăнасшăн мар. Фольклорта, илемлĕ литература произведенийĕсенче евĕрлев сăмахĕсем вăйлату кĕлепин =ах/=ех,=х/ аффиксне йышăннин тĕслĕхĕсем тĕл пулаççĕ: шарт=шартах, тăп=тăпах, панк-панках, лăшт=лăштах, капăр=капăрах т.ыт.те: Тĕлĕннипе çамрăк агроном тăпах чарăнчĕ... /Ĕçхĕл/. Иртнĕ тăрăма /вăхăта/ палăртакан =чĕ/=ччĕ/ аффиксла тĕслĕхсене калаçу чĕлхинче анчах тĕл пулма пулать: Çилĕ те вăшăл=вăшăлччĕ, тырри те кăштăр=кăштăрччĕ, хамăр та шăкăл=шăкăлччĕ.

Чăнах та, евĕрлев сăмахĕсем вĕçленмен, сăпатланман сăмахсем шутланаççĕ, анчах та вĕсене пач улшăнман сăмахсен шутне кĕртни тĕрĕс шухăш мар. Евĕрлев сăмахĕсем тулли мар улшăнура пулаççĕ:

а/ танлаштару кĕлепин =рах/=рех, =тарах,=терех/ аффиксне йышăнма пултараççĕ: вăр=вартарах ут; вăшт=ваштрах уткала, ĕç кал=калтарах пытăр т.ыт.те,

ă/ =и,=скер аффикссене йышăнса палăрту кĕлепине йĕркелеççĕ Вĕçкĕнрехскер, Ялттăм=ялттăмрахскер, вăл Макара пĕртте килĕшмен /Сатай/. Пирĕн кил=çуртра ача=пăча лĕри=лери сасси кăна /Ашм.VIII, 142/;

б/ япала ячĕленес сĕмлĕ чухне евĕрлев сăмахĕсем виççĕмĕш сăпат аффиксне йышăнаççĕ тата нумайлă хисепре пулаççĕ: Петĕрсен хам=хамĕ. Таюксен мăр=мăрĕ. Кăптăр=каптăрсене пуçтаркалас /Ашм VII 166/.

3-мĕш сăпат тата нумайлă хисеп аффиксĕсене йышăннă евĕрлев сăмахĕсем вĕçленме те пултараççĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | Петĕрсен | хам=хамĕ | лăпăр=лапăрсем |
| К | – | хам=хамĕн | Лăпăр=лапăрсен |
| П | – | хам=хамне | лăпăр=лапăрсене |
| В | – | хам=хамĕнче | лăпăр=лапăрсенче |
| Т | – | хам=хамĕнчен | лăпăр=лапăрсенчен |
| П | – | хам=хамĕпе | лăпăр=лапăрсемпе |
| Ç. | – | хам=хамĕсĕр | лăпăр=лапăрсемсĕр |
| П | – | хам=хамĕшĕн | лăпăр=лапăрсемшĕн |

Япалалăхĕ куç кĕретлĕ пулнине шута илсен куя пек сăмахсене субстантивациленнĕ теме те пулать.

8–мĕш ӳкерчĕк

## ЕВĔРЛЕВ СĂМАХĔ

I. Евĕрлев сăмахĕсен хăйсене тивĕçлĕ категорийĕсем çук

II. Тулли мар улшăну

| Танлаштару кӳлепи | Палăрту кӳлепи | Нумайлă хисеп кӳлепи | 3–м' сăпат кӳлепи | Япала ячĕленнĕ евĕрлев сăмахĕсен вĕçленĕвĕ |
|---|---|---|---|---|

III. Сăнлăха евĕрлекен сăмахсем пачах улшăнманни

## ТĂХХĂРМĔШ ПАЙ. ХЫÇСĂМАХ

Пĕлтерĕшлĕ сăмахсем хушшинче тăрса вĕсен çыхăнăвне палăртакан пулăшу сăмахĕсене хыçсăмахсем темелле.

Ку таранччен тухнă шкул тата аслă шкул учебникĕсенче пуринче те: "Вĕçленекен сăмаха предложенире тепĕр сăмахпа çыхăнтарма пулăшакан пуплев пайне хыçсăмах теççĕ,"- тесе вĕрентнĕ[I]. Кун пек калани тĕрĕсе килмест. Сăмахран, Мĕн пултарнă таран ĕçлес пулать ĕнтĕ /Арт Салампи/ предложенире таран хыçсăмах пултарнă иртнĕ

[I]Сергеев Л П., Котлеев В.И. Чăваш чĕлхи. Шупашкар, 1993. 353 с.

пайташ хыççăн тăрать. Иртнĕ пайташсем чăваш чĕлхинче туллин вĕçленмеççĕ.

Паллах, хыççăмахсем чылай чухне япала ячĕ, паллă ячĕ, хисеп ячĕ, местоименисем хыççăн тăраççĕ: Петĕр валли, сан валли илтĕм; кашкăр пек ӳле; мамăк пек çемçе; çĕр хута тухса ут тенĕ чухне валли, пек, хута хыççăмахсем падеж аффиксĕсене аса илтереççĕ

Хир=хир урлă каçрăмăр,
Ял=ял витĕр тухрăмăр

предложенири урлă, витĕр хыççăмахсене кăларса пăрахсан япала ячĕпе глагол хушшинчи çыхăну пăсăлать те предложени капĕ çухалать.

Чăваш чĕлхинчи хыççăмахсене морфологи тĕлĕшĕнчен икĕ ушкăна уйăрма май пур:

I/ тулли мар улшăнакан хыççăмахсем;

2/ улшăнман хыççăмахсем.

Улшăнакан хыççăмахсен шутне эпир пек, таран, юнашар, витĕр, хирĕç, урлă, яхăн сăмахсене кĕртетпĕр.

Пек, таран, пирки, яхăн , тери сăмахсем тулли мар вĕçленӳре пулаççĕ. Вĕсенчен хăшĕ=хăшĕ =и,=скер палăрту аффиксĕсене йышăнма пултараççĕ: ман пекки, Мирун пекскер. Ун пек чух вĕсем тулли вĕçленӳре пулаççĕ. Чăнах та, =чĕ/=ччĕ/ аффикс хушăнсан вĕсен иртнĕ вăхăта палăртас сĕмĕ палăрать: кашкăр пекчĕ, вăрманпа юнашарччĕ, уй урлăччĕ, мăй таранччĕ, Сахрун пиркиччĕ, çур çула яхăнччĕ т.ыт.те.

Пек хыççăмах ыттисем хушшинче уйрăмрах тăрать, вăл тĕрлĕ енлĕ улшăнма пултарать: =и,=скер аффикссем йышăнса туллин вĕçленет, =чĕ/=ччĕ/ аффикса йышăнса иртнĕ вăхăта палăртать, =ах/=ех/ аффикспа вăйлату кӳлепине йĕркелет, танлаштару форминче те пулать: ман пекрех,

Улшăнман хыççăмахсем шутне йӳней, манир сăмахсене кĕртме пулать:

9=мĕш ӳкерчĕк

ХЫÇÇĂМАХ

I.Хыççăмахсен хăйсене тивĕçлĕ категорийĕсем çук

II. Тулли мар улшăнура пулакан хыççăмахсем:пек, таран, пирки, яхăн, тери

III Улшăнман хыççăмахсем: йӳнер, манир

## ВУННĂМĔШ ПАЙ. ТАТĂК

Чăваш чĕлхинчи татăксене морфологи енчен икĕ ушкăна уйăрма май пур: I/ тулли мар улшăнакан татăксем; 2/ улшăнман татăксем. Ку таранччен тухнă кĕнекесенче /учебниксенче/ кун пек ушкăнлани пулманччĕ. Тĕпчевçĕсем татăксене тĕрлĕ паллăсене тĕпе хурса уйрăм ушкăнсене уйăрнă пулнă. Тĕрлĕрен пулнине шута илсе Л.П.Сергеев татăксене малтанах виçĕ пысăк ушкăна уйăрма сĕнет. I/ сăмах пĕлтерĕшне улăштараканнисем – сăмаха çĕнĕ сĕм паракан татăксем: - тăр/=тĕр/, =çке,=ши,=и,=им,=мĕн,=ха т.ыт.те; 2/сăмах тăваканнисем. =та,=те , 3/ форма тăваканнисем: ан, мар, çук, чи, чăн[I].

Пĕлтерĕшне / çĕнĕ пĕлтерĕш сĕмне тунине/ шута илсе чĕлхе тĕпчевçисем татăксене çапла ушкăнлаççĕ: а/ уйăру татăкĕсем: çеç, анчах, кăна, хуть, çех; ă/ кăтарту татăкĕсем: ав/ă/, ак/ă/, вăн, веç, вăт, б/ тĕрĕслетӳ татăкĕсем: шăп, шăп та шай, лăп, шăп та лăп,

Модаллĕхе кăтартакан татăксен ушкăнĕсем: а/ хирĕçлев татăкĕсем: ан, мар, çук; ă/ ыйту татăкĕсем: =и,=им,=шим, =а/=е/, нивушлĕ; б/ иккĕленӳ татăкĕсем: =тăр/=тĕр/,тен, пулех; в/ çирĕплетӳ татăкĕсем:=ия, иç, иккен, =мĕн, ара; г/ услови татăкĕ: =тăк/=тĕк/.

Хăшĕсем вара татăксене вĕсен предложенири позицине кура та ушкăнлама сĕнеççĕ: а/ сăмах умĕнче тăраканнисем; ă/ сăмах хыçĕнче тăраканнисем; б/ тĕрлĕ вырăнта тăма пултараканнисем.

Кун пек ушкăнлани , паллах, татăксене пĕлтерĕш енчен уйăрнă чухне усăмлăх кӳрет, анчах морфологи паллисене пачах та палăртмасть. Морфологире пирĕн сăмах улшăннипе улшăнманнине тĕрĕслемелле: улшăнать пулсан-мĕн енчен улшăннине сăнамалла.

### Улшăнакан татăксем

Улшăнакан /тĕрĕслех: тулли мар улшăнакан/ татăксем чĕлхемĕрте нумай мар.

---

[I] Сергеев Л.П., Котлеев В.И. Чăваш чĕлхи. Шупашкар, 1988.316-318.

а/ çук татăк:

- тулли мар вĕçленӳре пулать:

| | | |
|---|---|---|
| Т | çук | Иван килте çук |
| К | – | |
| П. | çука | Çука курсах |
| В | – | |
| Т | çукран | Çиме çукран |
| П | çукпа | Çукпа пур пĕр мар |
| Ç. | çуксăр? | – |
| П. | çукшăн | Çук çын çукшăн кулянать |

- танлаштару форминче пулать: Килте çукрах-ха вăл /шӳтлĕ калаçуран/,
- =чĕ аффикс йышăнса иртнĕ тăрăма палăртать: килте çукчĕ;
- вăйлату категорийĕнче пулать: Кун пек мăшкăла чăтма çуках;
- =и,=скер аффикссене йышăнать: Эсĕ çукки хупларĕ – ĕç тухмарĕ.

ă/ мар татăк:

- тулли мар вĕçленӳре пулать

| | | |
|---|---|---|
| Т | мар | Ача мар, кашкăр мар |
| К | – | |
| П | мара | Пулас мара ан ĕмĕтлен |
| В | – | |
| Т. | мартан | Вăл ĕçре мартан эпир кунта килтĕмĕр те ĕнтĕ |
| П. | марпа | Кирлĕ кирлĕ марпа аппаланса лариччен, тухса вутă çур |
| Ç. | марсăр | – |
| П. | маршăн | Кирлĕ маршăн каламастпăр |

- танлаштару формин аффиксне йышăнать: Ăнланмалла мартарах калаçать. Кирлĕ мартараххисене вăл уйăрса хучĕ тенĕ чухне танлаштару форми çумне палăрту форми хутшăнать, вăл хăй нумайлă хисепре пару падежĕнче пулать.
- =ччĕ аффикс йышăнсан иртнĕ вăхăт сĕмĕ уçăмланах палăрать: Петюк килте марччĕ.
- вăйлату форминче те пулать: Вăл çын ăслă марах.

Тата вăйлату татăкĕ =ччĕ аффикса йышăнса иртнĕ тăрăма мар, ытти пĕлтерĕш сĕмĕсене палăртать: Вуласа тухнă пулсан татахчĕ хăть;

- ах вăйлату аффиксне йышăннă тата сăмахра вăйлату пĕлтерĕшĕ татах та вăйланать: Каламалли татах пурччĕ.
- ах + -чĕ: Сăмахпа калани татахчĕ, алăкне те çĕмĕрсе хăварнă

Хăш-пĕр татăксем вăйлату тата иртнĕ вăхăт аффиксĕсене йышăнма пултараççĕ: шăп та лăпах, шăп та шайччĕ, шăп-шăпах, ăп-лăпах, шăп та шаях, çеçчĕ, кăначчĕ, чăнах /чăн маттур - чăнах маттур/, луччăччĕ.

Çапла вара, татăксем тулли мар пĕлтерĕшлĕ пулнипе хăйсене тивĕçлĕ категори формисене туянаймаççĕ.

Ытти татăксене пурне те улшăнман татăксем шутне кĕртмелле.

---

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА


Алпатов В.М. Из истории изучения частей речи // Части речи: Теория и типология. М.: Наука, 1990.

Алпатов В.М. Принципы типологического описания частей речи // Части речи: Теория и типология. М.: Наука, 1990.

Андреев И.А. К вопросу о выделении частей речи в тюркских языках в свете теории о первичной и вторичной синтаксических функциях // Учен. зап./ ЧНИИ. Чебоксары, 1970.

Баскаков Н.А. Морфологическая структура слова и части речи в тюркских языках // Совет. востоковедение. 1957. № 1.

Батманов И.А. О частях речи в киргизском языке. Фрунзе, 1936.

Боровков А.К. О частях речи в тюркских языках// Революция и письменность. 1926. № 2.

Кубрякова Е.С. Части речи в ономологическом освещении. М.: Наука, 1978.

Павлов И.П. Хальхи чăваш литература челхи. Морфологи. Шупашкар, 1965.

Панов М.В. О частях речи в русском языке // Филол. науки. № 4. 1960.

Сергеев В.И. Хальхи чăваш чĕлхи. Морфологи / Чăваш ун-чĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1992.

Сергеев Л.П., Котлеев В.И. Чăваш чĕлхи. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1993.

Щерба Л.В. О частях речи в русском языке // Щерба Л.В. Языковая система и речевая деятельность. Ленинград: Наука, 1974.

ТУПМАЛЛИ

Кӳртӗм ........................................ 3

Пуплев пайӗсене ушкӑнламалли принципсем ........................ 5

Тулли тата пулӑшу пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем пирки......................I2

Пӗрремӗш пай Япала ячӗ........................................ I4

I§. Улшӑнакан тата тулли улшӑнман япала ячӗсем ....... I4

2§. Вӑхӑта палӑртакан хӗл - хӗлле, ҫу - ҫулла, кӗр - кӗркунне ,ҫур - ҫуркунне сӑмахсен улшӑнӑвӗ ....... I7

3§. Вӑхӑта палӑртакан ир, каҫ сӑмахсен улшӑнӑвӗ ...... 23

4§. Икӗ хут каланӑ сӑмахсен /япала ячӗсен/ улшӑнӑвӗ... 26

5§. Мӑшӑр/ланнӑ/ япала ячӗсен улшӑнӑвӗ.......................27

6§. Япала ячӗсен улшӑнманнин сӑлтавӗсем ............... 27

Иккӗмӗш пай Паллӑ ячӗ Пӗтӗмӗшле ӑнлантарни.................. 3I

I§. Тулли улшӑнакан паллӑ ячӗсем ....................... 33

2§. Тулли улшӑнман паллӑ ячӗсем ....................... 35

3§. Паллӑ ячӗсен улшӑнманнин сӑлтавӗсем. Паллӑ ячӗсене ытти пуплев пайӗнчи сӑмахсемпе пӑтраштарни .. 37

Виҫҫӗмӗш пай Хисеп ячӗ. Пӗтӗмӗшле ӑнлантарни............. 42

I§. Тулли улшӑнакан хисеп ячӗсем ...................... 43

2§. Тулли улшӑнман хисеп ячӗсем ....................... 44

3§. Хисеп ячӗсем улшӑнманни ........................... 49

Тӑваттӑмӗш пай. Ятылмашӗ /местоимени/...................... 5I

I§. Ятылмашӗсен тулли улшӑнӑвӗ ........................ 52

2§. Тулли улшӑнман ятылмашӗсем..........................54

3§. Улшӑнман ятылмашӗсем ..............................56

Пиллӗкмӗш пай. Ӗҫхӗл /глагол/............................ 59

I§. Тулли улшӑнакан ӗҫхӗлсем........................... 59

2§. Ӗҫхӗлсен тулли мар улшӑнӑвӗ........................ 6I

Улттӑмӗш пай. Ӗҫхӗлҫумӗ /наречи/.......................... 65

I§. Ӗҫхӗлҫумӗсен улшӑнӑвӗ.............................. 66

2§. Ӗҫхӗлҫумӗсен тулли мар улшӑнӑвӗ ................... 67

3§. Пач улшӑнман ӗҫхӗлҫумӗсем ......................... 67

Ҫиччӗмӗш пай. Ӗҫ ячӗ...................................... 69

Саккӑрмӗш пай. Евӗрлев сӑмахӗ............................. 7I

Тӑххӑрмӗш пай. Хыҫсӑмах................................... 72

Вуннӑмӗш пай. Татӑк...................................... 74

**Учебное издание**

**Сергеев Виталий Иванович**

**Губанов Алексей Рафаилович**

ЧАСТИ РЕЧИ И ПРЕПОДАВАНИЕ ИХ В ВЫСШЕЙ ШКОЛЕ

Учебное пособие

Редактор **М. М. Федорова**

Корректор **Т. Л. Максимова**

ИБ № 230

Подписано в печать 11.09.95. Формат 60×84/16.
Бумага газетная. Печать оперативная. Усл. печ. л. 4,42. Усл. кр.-отт. 4,67.
Уч.-изд. л. 5,0. Тираж 1000 экз. Заказ № 708. С. 29.

Чувашский государственный университет
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15

3.000 =